**Николай ИВАНОВ**

# ПИРĔН ЕНТЕШСЕМ

*Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕ*

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2013

УДК 908
ББК 26.89(2Рос.Чув)
И 20

И 20 **Иванов Н.И.**
**Пирĕн ентешсем.** *Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕ.* – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2013. – 140 с.

Автор ĕçпе вăрçă ветеранĕсен, хальхи вăхăтри пултаруллă та талантлă çынсен кун-çулĕ çинчен, А.Г. Николаев космонавт 83 çул тултарнă ячĕпе районтаирттернĕ мероприятисем çинчен çак кĕнекере çырса кăтартни вулакансене интереслентерĕ.

© Иванов Н.И., 2013

# УМСĂМАХ

Çакă çутă тĕнчере çын ĕçлемесĕр пурăнма пултараймасть. Ĕç çынна илем кӳрет. «Ĕçлесен сум пулать, ĕçлемесен пурнăç пĕтет», – теççĕ халăхра.

Этемлĕх пур çын та пĕр ĕç тунипе тытăнса тăраймасть. Тĕнчере çĕр ĕçченĕ те, çăкăр пĕçерекен те, çĕр кăмрăкне кăларакан та, самолетпа вĕçекен те, кирпĕч çапакан та, наука енĕпе тăрăшакан та кирлĕ. Çавăн çинче тытăнса тăрать те пулĕ этемлĕх.

Эпир тăрăшса ĕçлесен, чăнлăха тата çынлăха мала хурсан, пурнăç та ăнса пырать. Кăкăр çапса: «Ман пек чапли çук», – тесе мухтаннипе, паллах, эпир ытти çынсем умĕнче «пĕчĕкленетĕр». Çакна асра тытасчĕ, хамăра тивĕçлĕ ĕçре вăй хунине нимĕн те çитес çук. Çавăнпа та вăй питти çынсен ĕçлеме тăрăшмалла, шанса панă ĕçрен йĕрĕнмелле мар.

Ку кĕнеке сире çĕр çинче ĕçлесе тĕш-тырă, хăмла ӳстернĕ ял çыннисемпе, учительсемпе, врачсемпе тата ытти профессипе ĕçлекен çынсемпе паллаштарĕ. Вĕсем пурте тава тивĕçлĕ ĕçченсем. Вĕсем çинчен пирĕн пĕлмелле, вĕсем пек пулма тăрăшмалла. Кĕнекери сăнарсем паянхи тата пулас ăрусемшĕн ырă тĕслĕх выранне пулĕç. Вĕсем пурте тăван çĕршыв пуянтарах, пурнăç тулăхрах пултăр тесе ĕçленĕ, вĕренме пултарнисем – вĕреннĕ.

Сирĕн алăри кĕнекене кăларма Сĕнтĕрвăрри районĕн «Пирĕн сăмах» хаçатĕнче 2006–2012 çулсенче пичетленсе тухнă хайлавсемпе усă курнă.

Ку кĕнекене кăларма пулăшнăшăн Сĕнтĕрвăрри районĕн администрацийĕн пуçлăхне Ю.Ф. Моисеева тав тăватăп.

# ТĂВАН ЕН ИЛЕМĔПЕ КИЛЕНЕТĔП

Тăван кил, çуралнă ял е хула, ачалăха ирттернĕ вырăнсем. Вĕсем нихăçан та пирĕн пурнăçран тухмаççĕ, çитĕнсе çитсе урăх çĕре пурăнма куçса каяс пулсан та ĕмĕрлĕхех асра юлаççĕ. Хăш-пĕрисем, тĕслĕхрен, тăван тавралăха пăрахса тĕрлĕрен ют çĕршывсене: Израиле, Америкăна, Африкăна çити ĕмĕрлĕхех тухса каяççĕ пулсан та, тăван çĕршыва нихăçан та манса каймаççĕ. Темле пулсан та тăван ен хăй патнех туртать çав. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсем отпускра тăван яла килсе курсан питех те савăнаççĕ. Раççейĕн хăш-пĕр гражданĕсене тĕрлĕ сăлтава пула ют çĕршывра пытарнă пулсан та, вĕсен вилтăприйĕсене ачисем, мăнукĕсем тăван ял, хула масарĕ çине куçарса килме тăрăшаççĕ.

Пирĕншĕн те, Сĕнтĕрвăрри хулинче тата районти ялсенче пурăнакан çынсемшĕн, тăван тăрăх чи хакли, чи юратни пулмалла. Ĕлĕк-авалхи çынсем ял никĕсне хывнă чухне кил-çуртсене пĕчĕк юханшыв çывăхне те пулин вырнаçтарма тăрăшнă. Сĕнтĕр шывĕ Атăла юхса тухнă çĕрте Сĕнтĕрвăрри никĕсне хуракансем питех те тĕрĕс тунă.

Паянхи Сĕнтĕрвăрри хули вара хăйĕн илемĕпе пурне те савăнтарать. Ирхине ирех район центрĕнчи автостанцинчен кашни кун автобуссем 12 маршрутпа тухса каяççĕ. Ялта тата хулара пурăнакан çынсене (вĕренекенсене, ĕçе каякансене, пенсионерсене) автобуссем яп-яка çулпа кирлĕ вырăна илсе çитереççĕ.

Акă, эпир Чăваш Енĕн тĕп хулинче хăнара пулнă хыççăн Сĕнтĕрвăррине таврăнатпăр. Пирĕн автобус малалла шăхăрса çеç пырать. Ăна 30 çул ытла автомобиль водителĕ пулса ĕçлекен ырă кăмăллă, сăпайлă водитель Петр Вазиков тытса пырать. Вăл калаçать, шӳтлет, пассажир ыйтнă вырăнта антарса хăварать. Автобус чарăнăвĕ патнелле утакан ватă çынсене кĕтсе илсе лартса каять. Автобуса ларнă çынсене: «Малалла иртĕр, вырăн пулмалла», – тесе калать. Ватă çынсем

анса юлнӑ чухне яланах ӑна тав тӑваççӗ. Тутаркасси пӑрӑнăç патӗнче Шуршӑл енелле пӑрӑнтӑмӑр та тем самантра Çавал шывӗ урлӑ хывнӑ кӗперпе каçса Шуршӑл чарӑнăвне çитсе те тӑтӑмӑр. Çул хӗрринче паллӑ ентешӗмӗр А. Николаев космоса вӗçсе кайнине аса илтерекен стела ларать. Паллӑ космонавтӑн тӑван ялӗ – Шуршӑл – илемлӗн курӑнса ларать.

Унти нумай хутлӑ илемлӗ çуртсем куçа илӗртеççӗ. Шуршӑлта курса тӗлӗнмелли нумай. Культура керменӗ, вӑтам шкул, тата ытти те, А.Г. Николаев çуралнӑ яла экскурсине килекенсем кунти часавая кӗрсе тухаççӗ, космонавт вилтӑпри çине чечек çыххисем хураççӗ, пуç таяççӗ, космос паттӑрне асӑнаççӗ.

Шуршӑлтан Сӗнтӗрвӑрри енелле çул тытатпӑр. Акӑ, Кукашни патне çитме пуçласан кунти чарӑнура 1-мӗш номерлӗ автобус тӑнине асӑрхарӑмӑр. Новински сали тата Коновалово микрорайонӗнче пурӑнакансем чылайӑн унта куçса ларчӗç. Ку автобус шӑпах Коновалово – Кукашни маршрутпа çӳрет-çке.

Хамӑрӑн ватӑ хулана кӗрес умӗн эпир вӑрман хуçалӑхӗн администрацийӗн çурчӗ умӗпе иртетпӗр. Вӑл йывӑççем хушшинче капӑррӑн курӑнса ларать. Çулӑн сулахай енче гараж вырнаçнӑ. Кунта ешӗл чӑрӑшсем тата уртӑш лартса илемлетнӗ. Çакӑнтах предприятин столовӑйӗ вырнаçнӑ пулнӑ. Унӑн тӑрринче пысӑк саспаллисемпе «Трудом своим велик и славен человек», – тесе çырса хунӑ. Асӑннӑ предприятие Раççей Федерацийӗн тата Чӑваш Республикин тава тивӗçлӗ вӑрман лартаканӗ ячӗсене тивӗçнӗ И. Сергеев ӑста вӑрманçӑ чылай çул ӑнăçлӑ ертсе пынӑ. Çак илемлӗ вырӑнпа иртсе пынӑ чух яланах кӑмӑл çӗкленет, ӑшӑмра ырӑ туйӑмсем çуралаççӗ.

Çапла, сарлака асфальтлӑ çулпала пирӗн автобус малалла вӗçтерет. Çулӑн сылтӑм енче «Марпосадкабель» завочӗ, ДРСУ, пушар пайӗ, районти шалти ӗçсен пайӗ вырнаçнӑ. Часах «Авторемзавод» чарӑнăвне çитсе тӑтӑмӑр. Автобусран ансан тӳрех апат-çимӗç

магазинĕсене кĕме пулать. Вĕсенче вара темĕн тĕрлĕ тавар та сутаççĕ.

Çулăн сулахай енче автомобильсем юсакан завод тата «Маяк» тулли мар яваплă общество вырнаçнă. Çак предприятисене иккĕшне те хăй вăхăтĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕнче тăрăшнă Алексей Александрович Шумов пуçарнипе ĕçлеттерсе янă. Чăннипех те маттур эсир, Алексей Александрович, халăха кирлĕ «Маяк» предприятине йĕркелесе ярса тата панкрута тухма пуçланă автомобильсем юсакан завода тепĕр хут ĕçлеттерсе яма пултартăр. Çапла вара эсир хулара тата район центрĕ çывăхĕнчи ялсенче пурăнакансем валли ĕç вырăнĕсем туса патăр.

Автобус чарăнăвĕнчен аякрах та мар 28-мĕш номерлĕ професси училищин вĕренӳ корпусĕсем, общежитипе пурăнмалли нумай хутлă çуртсем вырнаçнă. Юнашарах – Перекет банкĕн çурчĕ.

Автомобильсем юсакан заводран аякрах мар вара «Чувашхмельмонтаж» предприятийĕ вырнаçнă. Унăн никĕслевçи – К. Николаев. Халĕ вăл тивĕçлĕ канура ĕнтĕ. Асăннă предприятине пултаруллă О. Волостригов ертсе пырать. Малалла хула урамĕсем тăрăх анаталла утсан, тĕп çултан кăшт пăрăнсан – казначейство, Пенси фончĕн тата налог службисен кантурĕсем. Нумай çул хушши «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕ ларнă вырăнта халĕ ООО «Посад» тата ытти предприятисем вырнаçнă.

Акă, тепĕр чарăнăва та çитрĕмĕр. Ку «Поликлиника» ятлă. Автобусран ансассăн «Хлебушко», «Мечта» магазинсене кĕрсе апат-çимĕç туянма пулать.

Юнашарах район больници. Унăн территорийĕнче çĕнĕ сиплев корпусĕ çĕкленсе ларнă. Больница çурчĕ аякран илемлĕ курăнса ларать.

Больницăран кăшт аяларах утсан Май лапамне çитетпĕр. Çулăн сылтăм енче район тата хула администрацийĕсен çурчĕ вырнаçнă.

Район администрацине ĕçпе пиçнĕ, çĕнĕлле шухăшлакан пултаруллă пуçлăх Ю.Ф. Моисеев ертсе пырать.

Çулăн сулахай енче юсаса çĕнетнĕ районти почтамт çурчĕ, юнашарах Сĕнтĕрвăрринчи патшалăх Атăлçи технологи университечĕн филиалĕ вырнаçнă.

Хула варринче вырнаçнă вокзала çитсен куç умне Атăл хĕррине илсе каякан илемлĕ çул тухса тăрать. Ку урама «Малый Арбат» тесе калаççĕ. Кунтан «Магнит», «Мираж» магазинсене, «Макарий» пасара çитсе килме те çывăх. Хула варринчен аякрах мар универмаг, кафе, гастроном, аптека тата ачасен искусство шкулĕ вырнаçнă. Атăл хĕрринчи «Культура» площадĕнче часчасах тĕрлĕ уяв мероприятийĕсем, концертсем пулаççĕ. Çав вырăнтах краеведени музейĕ те ĕçлет. Çуллахи вăхăтра лапама фонтан та илем кӳрет.

2006-мĕш çулта пирĕн юратнă хула 150 çул тултарчĕ. Çак сумлă юбилей кунĕсене ирттерес умĕн хула варринчи паркра илемсĕр йывăççене касса чăрăшсем, çăкасем тата уртăшсем лартрĕç. Автовокзал патĕнчен хула пасарне тухма парк витĕр тротуар турĕç. Тротуарăн икĕ енĕпе канмалли саксем лартса тухрĕç. Кунта хӳшĕсем лартса парас пулсан аван пулмалла.

Атăл хĕрри – Сĕнтĕрвăрринчи çынсемшĕн те, пирĕн хулана хăнана килекенсемшĕн те чи илемлĕ вырăн. Атăл тăрăх пăрахутсем çӳреççĕ. Çак пысăк юханшыв хĕрринче çынсем çуллахи ăшă кунсенче шыва кĕрсе савăнаççĕ. Иртен пуçласа каçчен хулан сарлака урамĕсем тăрăх халăх утса çӳрет.

Килсе курсамăр пирĕн хитре те мăнаçлă ĕлĕкхи хулана, кунта сире яланах ăшшăн кĕтсе илĕç, хаклă хăна вырăнне хурĕç.




***Сĕнтĕрвăррине пырса кĕнĕ вырăн.***




***Вăрман хуçалахĕн администрацийĕн çурчĕ.***



***Вăрман хуçалăхĕн производство çурчĕсем.***




***Сĕнтĕрвăрринчи çул юсакан***
***тата тăвакан «Чувашавтодор» участокĕ.***



***«Марпосадкабель» заводчĕ.***




***«Мариинский» физкультурăпа спорт комплексĕ.***



***Ку вырӑнта автомобильсем юсакан завод тата тулли мар яваплӑ «Маяк» пӗрлешӳ вырнаҫнӑ.***




***«Чувашхмельмонтаж» хупӑ акционерлӑ пӗрлешӳ.***




***Сулахай енче – Пенси фончĕн тата налук службин çурчĕ.***



***Поликлиника çурчĕ.***




***Бизнес-центр тата организацисен çуртĕ.***



***«Почта России» çуртĕ.***



***Атăлçи патшалăх технологи университечĕн Сĕнтĕрвăрринчи филиалĕн çурчĕ.***



***Хулапа район администрацийĕсен çурчĕ.***




***Хулари 1-мӗш номерлӗ гимназин ҫӗнӗ корпусӗ.***




***Прокуратура ҫурчӗ.***




*«Макарий» ярмарка.*



*Атăл хĕрринчи культура лапамĕ.*

# ВĔСЕМ ЯЛ ХУÇАЛĂХĔНЧЕ ВĂЙ ХУНĂ

## Ĕçпе чапа тухнă вăрçă ветеранĕ



*Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ял хуçалăх ĕçченĕ В.А. Данилов*

«Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр», – тесе ваттисем ĕлĕк-авалах каланă. Ку сăмахсем питех те тĕрĕссине эпир халĕ те туятпăр. Кам ĕçе юратать, унăн пурнăçĕ тулăх, кам ĕçлеме юратмасть, вăл кунран-кун чухăнланса пырать. Хальхи вăхăтра пире ĕç кăна тăрантарать, сум парать.

Турханкасси ялĕнче хăйĕн мăшăрĕпе, Тамара Гавриловнăпа, 87 çулхи вăрçăпа ĕç ветеранĕ, Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Ĕç Мухтавĕ орденĕн кавалерĕ Всеволод Александрович Данилов пурăнать. Эпĕ ыйтнипе вăл хăйĕн ачалăхĕ çинчен çапларах сăмах пуçласа ячĕ:

– Эпĕ 1926 çулхи нарăс уйăхĕн 1-мĕш кунĕнче нумай ачаллă (7 ача) çемьере çуралнă. Эпир питех те чухăн пулнă. Кун пек пурнăçпа эпир кăна мар, ялти ытти çемьесем те пурăннă. Хамăр ялти шкулта 5 класс пĕтернĕ хыççăн вĕренме пăрахса «Верный путь» колхозра ĕçлеме тытăнтăм. Бригадир мĕнле ĕçе хăваланă, çавăнта ĕçленĕ, кĕтӳ те кĕтнĕ. Пирĕн колхоз председателĕ хăрах куçлă Петр Даниловчĕ. Ун умĕнче 1 килограмм çăнăх тархасласа ыйтса чĕркуççи çинче ларни те пулнă. Ача

чухне выçă пулнăран куççуль те пайтах кăларнă. Колхозра эпĕ вăрçа илсе кайиччен ĕçленĕ. 1943-мĕш çулхи чӳк уйăхĕн 10-мĕш кунĕнче мана çара илчĕç.

*– Всеволод Александрович, сирĕн çар службби ăçта иртни çинчен каласа пама пултараймастăр-ши?*

– Çар службинче эпĕ Инçет Хĕвелтухăçĕнче тăнă. Нимĕç фашисчĕсемпе çапăçман, манăн Япони салтакĕсемпе çапăçма тивнĕ. Иккĕмĕш тĕнче вăрçи умĕн Япони Инçет Хĕвелтухăçĕнчи чылай патшалăхсен çĕрĕсене туртса илнĕ. Вĕсем Маньчжурире, Корейăра хуçаланнă. Сахалин тата Курил утравĕсемпе те хуçа пуласшăн пулнă. Пире çак çĕрсене ирĕке кăларма хатĕрлерĕç. Манăн алра «Максим» пулеметчĕ. 1945-мĕш çулта çулла пире казармăсенчен лагере илсе тухса кайрĕç. 1945-мĕш çулхи çурла уйăхĕн 9-мĕш кунĕнче эпир тревогăпа çапăçăва çĕклентĕмĕр. Япони çарĕсене Маньчжурирен, Çурçĕр Корейăран хăваласа кăлартăмăр. Ку вăрçă авăн уйăхĕн 2-мĕш кунĕнче эпир çĕнтернипе, Япони капитуляци тунипе пĕтрĕ. Ун хыççăн тăвата çул хушши Çурçĕр Корейăра тăтăмăр. Тăван киле вăрçă хыççăн 1950-мĕш çулхи чӳк уйăхĕнче таврăнма май килчĕ.

*– Эсир ĕçе юратакан çын, ĕçлемесĕр ларма пултарайман, совхозра 30 çул ытла трактористра тăрăшнă. Вăрçăран таврăннă хыççăн малтан ăçта ĕçлеме тытăнтăр?*

– Малтанах Хусан леш енче вăрман каснă çĕрте, каярахпа Сĕнтĕрвăрринчи геологсен ушкăнĕнче. Унта нумайах ĕçлемен. Етĕрнере трактористсен курсне пĕтернĕ хыççăн пенсие тухиччен тăван ялта, совхозра, тракторист пулса ĕçлерĕм. Трактористра чапшăн, мухтавшăн мар, çемьене тăрантарас, тулăх пурнăçпа пурăнас тесе вăй хунă. Наградăсем вĕсем хăйсем мана шыраса тупнă. Эпĕ «Коммунизмла ĕç ударникĕ» ята тивĕçрĕм, 1977-мĕш çултан пуçласа 4 çул хушши «Социализмла ăмăрту çĕнтерӳçĕ» пултăм.




***Сĕнтĕрвăрри КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Б.В. Филлипов В.А. Данилова парне парать.***

Каярах хастар ĕçленĕшĕн Ĕç Мухтавĕн орденĕ тата «Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята парса чысларĕç. Унсăр пуçне манăн вăрçă наградисем те пур.

*– Всеволод Александрович, эсир хăвăра телейлĕ тесе шутлатăр-и?*

– Телейлĕ тесе шутлатăп. Тавтапуç аттепе-аннене çуратса ӳстернĕшĕн, выçăпа вилме паманшăн. Пирĕн килти хуçалăх халĕ çынсенчен япăхах мар, выльăх-чĕрлĕх те тытатпăр. Эпир арăмпа 4 хĕр тата 1 ывăл пăхса ӳстернĕ. Ачасем пурте çемьеллĕ. Халĕ хĕрсемпе кĕрӳсем, мăнуксем пирĕн пата час-часах хăнана килсе килти ĕçсене тума пулăшаççĕ. Пенси лайăх параççĕ. Укçа пулсан темĕн тĕрлĕ тавар та илме пулать, лавккасенче мĕн кирли пурте пур. Татах та малалла пурăнас килет.

*– Всеволод Александрович, сире аçу ахальтен мар Всеволод кнеç ятне панă. Эсир лайăх, ĕçчен тата кăмăллă çын пулнине сирĕнпе тĕл пулса калаçнă хыççăнах туйрăм. Малашне те тулăх пурнăçпа пурăнма сирĕн çирĕп сывлăх пултăр, Всеволод Александрович.*

## Ĕçлеме ӳркенмен ветеран

Чермĕш ялĕнче пирĕнпе юнашар çиччĕмĕш теçетке урлă каçнă Людмила Николаевна хăйĕн Анатолий ывăлĕн çемйипе пурăнатчĕ. Люсяпа эпир çуллахи вăхăтра кашни ирех выльăхсене кĕтӳне ăсатма тухаттăмăр. Çула май калаçса утнă чухне вăл вара час-часах: «Тул çутăлать те каç пулать, ĕмĕр кĕскелсе пырать», – тесе калатчĕ. Эпĕ унпа килĕшеттĕм, тĕрĕс каланă. 75-рен иртсен ватă çынсен кун-çулĕ кĕскелсе пырать. Мĕн тăвăн – пурнăç йĕрки çапларах-çке. Анчах вилĕм кĕтнипе килмест. Пĕри, ав, пач ăнсăртран çамрăклах вилет, теприсем тата аварие, чире пула леш тĕнчене ăсанаççĕ. Пĕрин пурнăçăн йывăрлăхсене курмасăрах пĕр тикĕс иртет, теприн вара темĕнле хурлăха та, йывăрлăха та чăтса ирттерме тивет. Уйрăмах Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи умĕн, вăрçă вăхăтĕнче тата ун хыççăн çуралнă çынсем хура-шурне нумай курнă, нушиасапне сахал мар тӳснĕ. Вăрçă пуçлансан алла винтовка тытма пултарнă арçынсене пурне те илсе кайнă унта. Вĕсене çеç мар, çамрăк хĕрсене те айккинче тăратса хăварман. Тĕрĕссипе каласан, кашни çемьерех вăрçа тухса кайнă çынсем пулнă. Акă, пирĕнпе çывăхри ялсенчен сахал мар çын вăрçăра пулнă. Хаяр çапăçусенче нумай ентешĕн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă...

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче фашистла Германие, кайран Японине çапса аркатнăранпа вăхăт самаях иртрĕ. Акă, 2010-мĕш çулăн çу уйăхĕнче Çĕнтерӳ кунĕ 65 çул тултарнине пирĕн çĕршывра чаплăн паллă турĕç. Паллах, çакă вăл историре юлать. Çулсем вара пĕр сисĕнмесĕрех малалла шăваççĕ. Вăрçă ветеранĕсем те çулсеренех сахалланса пыраççĕ. Акă, çывăхри ялсенче пурăнакан ветерансем халĕ пурте 80 çултан иртнĕскерсем. Ăстакассинче пурăнакан вăрçă ветеранĕсенчен питĕ нуша курнисенчен пĕри – Анна Ивановна Иванова. Вăл Ленинградра блокада вăхăтĕнче пурăннă, лайăх çынсене пула кăна вилĕмрен

çăлăнса юлнă. Эпир ăна Кĕçĕн Ăстакасси шкулне час-часах ачасемпе тĕл пулса калаçма чĕнеттĕмĕрччĕ. Вăл çак тĕлпулусене пыма тӳрех килĕшетчĕ. Вăрçă, блокада вăхăтĕнчи Ленинград пурнăçĕ çинчен каланă чухне учительсен те, шкул ачисен те куçĕсем шывланатчĕç. Хăй те яланах сăмса тутрипе куççулĕсене шăлса илетчĕ. Çапла, çав тери чăтма йывăр пулнă вăрçă вăхăтĕнчи нушаллă пурнăçа.



*Г.А. Алексеев*

Ку кĕске хайлавра эпĕ сире, хисеплĕ вулакансем, Георгий Алексеевич Алексеев пурнăçĕпе, унăн ĕçĕсемпе паллаштарасшăн. Георгий Алексеевичăн ашшĕ, Алексей Назарович, хресчен çемьинче çуралнă. Пĕрремĕш тĕнче тата Граждан вăрçисене хутшăннă, çапăçура аманнă, инвалид пулнă. Унăн мăшăрĕ, Феодосия Федоровна, хутла пĕлмен. Вĕсем пĕтĕмпе 10 ача çуратнă. Çав шутран пĕри – Георгий Алексеевич. Вăл 1926-мĕш çулхи ака уйăхĕн 15-мĕшĕнче Ăстакасси ялĕнче çуралнă. Кĕçĕн Ăстакасси ялĕнчи 7 çул вĕренмелли шкула пĕтернĕ хыççăн Турханкасси шкулĕнче вĕреннĕ, анчах çемьери йывăрлăхсене пула 8 класс пĕтерейմен. Шкулта вĕренме пăрахнă хыççăн икĕ çул кĕтӳ кĕтнĕ Георгий. 1943-мĕш çулхи чӳк уйăхĕнче ăна Хĕрлĕ Çара илсе кайнă.

Эпĕ унран: «Сирĕн çартан юлас шухăш пулман-и?» – тесе ыйтрăм та, вăл мана тӳрех çапла каларĕ: «Ун пек шухăш пулма пултарайман. Вăл вăхăтра самани урăхларах пулнă, пурте нимĕççене курайман, вĕсене

хăвăртрах çапса аркатас, Гитлера тĕп тăвас тесе шутланă. Вăрçа каяс тесе яшсем те, хĕрсем те хăйсен ирĕкĕпе çар комиссариатне пынă, анчах та унта пурин заявленине те тивĕçтереймен. Çамрăк чух салтак службинче пуласси, фашиста çапса аркатасси çинчен эпир пурте ĕмĕтленнĕ. Тăшманпа çапăçасси, ăна çĕнтересси пирĕн тĕп тивĕç тесе шутланă вăл вăхăтра».

Анчах та Георгий Алексеевич нимĕçсемпе çапăçайман. Ăна салтак службине Инçет Хĕвелтухăçне илсе кайнă. Япони салтакĕсемпе пĕрремĕш Хĕвелтухçă фронтĕнче çапăçнă. Фашистла Германие тата Япони самурайĕсене çапса аркатнă хыççăн 3 çул хушши Çурçĕр Корейăра службăра тăнă. Тăван килне 1950-мĕш çулхи юпа уйăхĕнче кăна таврăннă. Киле килсен ĕçе кĕресси çинчен шухăшланă.

Калаçу вăхăтĕнче ветерана чартăм та çапларах ыйтрăм:

– Мĕнле вара эсир питĕ ĕçлесшĕн пулнă?

Унăн хуравĕ акă мĕнлерех пулчĕ:

– Пире атте-анне мĕн пĕчĕкрен ĕçлеме хăнăхтарнă. Атте пире, ывăлĕсене, арçын ĕçне, анне вара хĕрĕсене хĕрарăм ĕçне вĕрентнĕ. Эпĕ нимĕнле ĕçрен те хăраман, кĕтӳре çӳренĕшĕн пĕрре те намăсланман. Хырăма тăрантарма пирĕн хамăрăн ĕçлемелле пулнă.

Г. Алексеев 1950-мĕш çулхи чӳк уйăхĕнче «Лесоруб» промартеле ĕçлеме кĕрет. 1961 çулта Сĕнтĕрвăрринчи урапа-çуна завочĕпе «Лесоруб» промартеле пĕрлештернĕ хыççăн урапа-çуна заводĕнче ĕçлеме юлнă, унта 1976 çулхи чӳк уйăхĕччен тăрăшнă. Çав çул вăл Турханкасси лесничествине ĕçлеме куçнă. Унта мĕн тивĕçлĕ канăва тухичченех тĕрлĕ должноçсенче вăй хунă. Георгий Алексеевич кĕтӳçрен пуçласа мастера çитиччен ĕçре ӳссе пынă. Шаннă ĕçе яланах питĕ юратса пурнăçланă. Вăл хăйĕн пурнăçĕнче тĕрлĕ наградăсем илме тивĕçлĕ пулнă. «За победу над Японией» медаль тата ытти юбилей награди вăрçă ветеранне уйрăмах чыс кӳреççĕ.

1953-мĕш çулхи чӳк уйăхĕнче Георгий çемье çавăрма шутлать. Унăн мăшăрĕ Зинаида Павловна Львова, Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумĕнчен вĕренсе тухнăскер, «Дружба» совхозăн Ăстакасси уйрăмĕнче агрономом, кайран бригадир пулса пенсие тухиччен ĕçленĕ. Анчах та вăл пурнăçран уйрăлса кайнă. Георгий Алексеевич пĕччен пурăннă, апла пулин те килти хуçалăха йĕркеллĕ тытса пынă. Пӳртре те, кил картинче те пур япала та хăйĕн вырăнĕнче. Кил-çуртра яланах çутă та таса пулнă. Пӳрте ăшăтма тата апат пĕçерме 2003 çулхи раштав уйăхĕнчен газпа усă курнă ветеран.

Георгий Алексеевичпа Зинаида Павловна тăватă ача çуратса пăхса ӳстернĕ. Владиславпа Таня Çĕнĕ Шупашкарти химтехникум пĕтернĕ хыççăн «Химпром» комбинатĕнче ĕçленĕ, халĕ пенсие тухнă. Евгений слесарь пулса Шупашкарта вăй хунă. Лариса Пятигорскра фармацевт институтне пĕтернĕ. Хальхи вăхăтра Краснодарск тăрăхĕнчи Лабинск хулинче аптека тытса тăрать. Г. Алексеевăн 9 мăнук тата мăнукĕсен ачисем виççĕн.

Çапла, Алексеевсен ачисем ашшĕ-амăшĕ пекех ĕçчен те тăрăшуллă çитĕннĕ, мăнукĕсем те çавăн пекех.

Г. Алексеев 2011-мĕш çулта пиртен уйрăлса кайрĕ.

## Чун ăшши – ачасенче



*А.И. Евдокимова*

Ку хĕрарăм манăн анне пулнă пулсан, ăна тав туса эпĕ çапла юрланă пулăттăм:

*Тавах, анне, çуратнăшĕн,*
*Çине тăрса вĕрентнĕшĕн,*
*Вĕрентнĕшĕн, ăс панăшăн,*
*Ура çине тăратнăшăн.*

Пирĕн анне 3 ача çитĕнтернĕ. Атте 1942-мĕш çулта вăрçăра пуçне хунă.

Эпĕ вулакансене паллаштарас текен хĕрарăм вара 5 ача çуратса ӳстернĕ, пурте āслă пĕлӳ илнĕ. Ачисем совет влаçĕ чухнех вĕренсе тухнă, хальхи вăхăтра çавăн чухлĕ ачана аслă шкулта вĕрентес тесен питех те нумай укçа кирлĕ.

Кам-ха ку хĕрарăм? Эппин, паллашар. Ăна Алевтина Ивановна Евдокимова тесе чĕнеççĕ. Вăл Ăстакасси ялĕнче çутă та ăшă кăмăллă çуртра пĕчченех пурăнать. Анчах ăна пĕччен пурăнакан хĕрарăм тесе калама та йывăр, мĕншĕн тесен вăл ачисем яланах юнашар пулнине чĕрипе туять. Вĕсем ун патне килсех тăраççĕ, пулăшаççĕ, йывăр чухне ăшă сăмахсемпе йăпатаççĕ. Чăвашсен паллă просветителĕ И.Я. Яковлев хăй виличчен чăваш халăхне çапла халал парса хăварнă: «...Çӳле çĕкленекенсене мĕн хал çитнĕ таран çĕкленме пулăшăр. Хăпарса çитсе тĕрек илсен, вăл вара хăй сире аялтан çӳле турта-турта кăларĕ».

Алевтина Ивановна И. Яковлев çапла халалласа хăварнине лайăх пĕлнĕ пулĕ тесе шутлатăп эпĕ. Апла-и, капла-и, вăл çак ăслă çын халалне яланах асра тытма тăрăшнă. Эпĕ кунта çемьери 5 ачана аслă пĕлӳ пани пĕр

Алевтина Ивановна çеç тесе каласшăн мар. Ун пеккисем районта та, республикăра та нумай. Çак тĕслĕхпе хамăр районти пултаруллă çынсем çинчен пĕлтересшĕн çеç вулакансене.

Алевтина Ивановна Евдокимова (хĕр чухне Карпова) 1931-мĕш çулхи кăрлач уйăхĕн 2-мĕш кунĕнче Звенигово районĕнчи Ялпай ялĕнче вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекен Иван Петрович Карпов çемьинче çуралнă. 1937-мĕш çулта Карповсем Мари Республикинчен Чăваш Республикине куçса килнĕ, Ăстакасси ялĕнче йăва çавăрнă. Куçса килсенех çемье пуçлăхĕ Турханкасси лесничествинче лесничийĕн пулăшаканĕнче ĕçлеме пуçлать. Тăвată çул çеç вĕреннĕ пулсан та унăн ку должноçра ĕçлемелĕх опыт пулнă. 1941 çулхи çĕртме уйăхĕнче вăрçă пуçланать. 1942-мĕш çулхи ака уйăхĕнче Иван Петрович Карпова Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине илсе каяççĕ. Çак çулах Ржев хули патĕнчи хăрушă çапăçура вăл пуçне хурать. Ун çинчен Сĕнтĕрвăрринчи çар комиссариатĕнчен хут килнĕ.

Алевтина Ивановнăн амăшĕ, Александра Евстафьевна, ĕçпе ура çине тăнă çемьерен пулнă. Ачасене ашшĕ-амăшĕ мĕн пĕчĕкренех ĕçе вĕрентнĕ. Çемье тăрăшса ĕçленĕ, ялти ытти çынсемпе танлаштарсан, пуянтарах пулнă. Евстафий Тимофеевича репресси туса килтен илсе тухса кайнă. Ăна ăçта илсе кайнă, ăçта вилнĕ, ăçта пытарнă – нимĕн те паллă мар. Çемьешĕн çак хурлăхлă çухату 1930-мĕш çулта пулнă.

Алевтина Ивановна Карпова Турханкассинчи вăтам шкула пĕтернĕ хыççăн Шупашкарти учительсен институтне вĕренме кĕнĕ. Шăпах 2 çул вĕренсе пĕтермелли вăхăтра, патшалăх экзаменĕсем тытас умĕн, çутĕç Министерствине Инçет Хĕвелтухăçĕнчи Амур облаçĕнчен учительсем ярса парăр тесе хыпар килнĕ. Çапла вара, патшалăх экзаменĕсене тытмасăрах çамрăк хĕр Алевтина Амур облаçĕнчи Совет районĕнчи Ромны ялне биологи учителĕ пулса ĕçлеме тухса каять. Унта вăл тăтăшах тăван яла таврăнасси çинчен шутланă. 1953-мĕш çулта,



***Алевтина Ивановна тата Василий Ефимович ачисемпе тата мăнукĕсемпе пĕрле.***



***Н.В. Евдокимов амăшĕпе – А.И. Евдокимовăпа.***

отпуск вăхăтĕнче, яла килет те урăх каялла каймасть. Турханкасси шкулне лаборанткăна ĕçлеме вырнаçать. Тепĕр çултанах, кăрлач уйăхĕнче, хăй юратнă Вася Евдокимовпа мăшăрланаççĕ. Кун хыççăн пĕр вăхăт хушши Кĕçĕн Ăстакасси шкулĕнчех лаборанткăра ĕçлет. Кайран вара тивĕçлĕ канăва тухиччченех «Дружба» совхозра вăй хурать – хăмла пахчинче тăрăшать.

Алевтина Ивановнăн упăшки вĕреннĕ çын пулнă. Вăл Çĕрпӳри культурăпа çутĕç училищинчен вĕренсе тухнă, библиотекарь специальноçне алла илнĕ, Турханкасси ял библиотекинче ĕçленĕ. Анчах библиотекăра ĕç укçи пĕчĕккипе тата ытти сăлтавсене пула вăл ку ĕçре нумай тытăнса тăмасть, шофера вĕренсе тухать те районти тĕрлĕ предприятисенче водительте ĕçлет. Çапла вара, мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччченех алăран автомашина рульне ямасть. Шел пулин те, 2000-мĕш çулхи авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче вăл ĕмĕрлĕхех куçне хупать. Паллах, çак хуйхă çемьешĕн пысăк çухату пулнă.

Евдокимовсен тăвата хĕрпе пĕр ывăлĕ ку пурнăçра хăйсен вырăнне тупнă, кашниех тĕрлĕ ĕçре вăй хураççĕ, çемьеллĕ, ачисене ӳстереççĕ. Алевтина Ивановна вара ватлăхра ывăлĕ-хĕрĕсемпе, мăнукĕсемпе йăпанса, савăнса пурăнать.



***Сулахайран сылтăмалла: В.В. Долгова, М.Н. Долгов, А.Н. Долгова, А.В. Владимирова, Н.В. Смирнова, И.В. Потрясилова, М.В. Потрясилова.***



***Сулахайран сылтăмалла: Н.И. Долгов, А.Н. Долгова, В.В. Долгова, М.Н. Долгов.***

# Йывăрлăхсене парăнмасăр



*Ю.И. Скворцова*

Шăпа тени кашни çыннăнах тĕрлĕрен килсе тухать пурнăçра. Пĕрисем, мĕн пĕчĕкренех, телейлĕ те ытлă-çитлĕ пурнăçпа савăнса пурăнма хăнăхнăскерсем, ĕмĕр мĕнле иртнине те сиссе юлмаççĕ. Теприсем вара, ашшĕ-амăшĕсĕр, тăлăххăн ӳснĕскерсем, çити-çитми пурнăç тутимасине çамрăклах активсе пăхнăскерсем, самаях нушаланса пурăнаççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, хĕвелĕ пуриншĕн те пĕрешкелех пăхать пулин те, кашнин пурнăç шăпи урăхла, кама мĕн курмалла тунă – çавна тӳссе ирттерет.

Чермĕш ялĕнче хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ Юлия Ильинична Скворцовăн та пурнăç урапи тĕрлĕ çулсенче тĕрлĕрен куснă. Пурнăçра йывăрри те, савăнмалли самантсем те пулнă. 2012 çулхи чӳк уйăхĕнче вăл 81 çул тултарчĕ. Паллах, 81 çул вăл историшĕн пысăк пĕлтерĕшлех мар пуль, анчах çын пурнăçĕшĕн çав тери сумлă тапхăр. Çакă вăл утса тухнă «пурнăç каçалăкĕ» çине тепĕр хут çаврăнса пăхмалли чи меллĕ вăхăт пек туйăнать мана.

Мĕн пĕчĕкрен терт-асапне, хура-шурне сахал мар тӳсме тивнĕ Юлия Ильиничнăна. Вăл виçĕ çул тултаричченех ашшĕ вилнĕ. 1937-мĕш çулта вĕсен урамĕнче питĕ хăрушă инкек пулнă, харăсах 10 çемье пĕр самантра нимсĕр тăрса юлнă, мĕнпур пурлăх, кил-çурт пушарта çунса кайнă.

Ашшĕсĕр, кил-çуртсăр тăрса юлнă Юляпа Зоя аппăшне тата амăшне, Варвара Герасимовăна, аякри тăванĕ, Петя (вăл ун чухне бригадирта ĕçленĕ) хăйсем патне пурăнма чĕнет. Петя патĕнче хĕл каçнă хыççăн пушарта шар курнă çемье, тăванĕсем пулăшнипе, çулла хăйсен урамĕнчех мунча пек пĕчĕк пӳрт туса лартнă. Анчах çакăнпа вĕçленмест вĕсен хуйхи. Юля 12 çул тултаричченех сасартăк вĕсен амăшĕ вилсе каять, тепĕр темиçе кунран вĕсене хăйсен хӳттине илнĕ пиччĕшĕ те фронтра йывăр аманнă хыççăн ку пурнăçран уйрăлса каять. Çапла вара, икĕ пĕчĕк хĕрпĕрчи хăр тăлăххăн юлаççĕ.

Ун чухне пурнăç хальхи пек тулăх пулман, çавна май тăлăхсене патшалăх та пысăк пулăшу пама пултарайман, мĕншĕн тесен Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пынă.

Мĕн тумалла, ăçта кайса кĕмелле? Амăшĕ вилнĕ хыççăн аппăшĕ, Зоя, куляннипе утайми пулса ларнă, хуçалăхри пĕтĕм ĕçсене Юлян пĕччен тумалла пулнă. Мĕн чухлĕ макăрнă пулĕ, мĕн чухлĕ куççуль кăларнă пулĕ аппăшĕпе йăмăкĕ юнашар ларса. Вĕсене ун чухне выçă вилесрен ĕçлени тата çӳлти Турă çăлса хăварнă. Ара, мĕн тери телейсĕр шăпа пулнă çке-ха. Пĕчĕк те мĕскĕн чунсем çине мĕн тери пысăк хуйхă йăтăнса аннă...

Пĕррехинче Сĕнтĕрвăрри район центрĕнчен вĕсем патне вăрçа пула инкеке лекнĕ ачасене пулăшу парас енĕпе ĕçлекен çын пынă. Вăл Юляна ачасен çуртне илсе кайса вырнаçтарас пирки сăмах тапратнă, анчах Зоя аппăшĕ яхăнне те яман, Юляна хамах пăхатăп тенĕ. Юля макăра-макăра, ачасен çуртне каяс мар тесе çăлăнса юлнă.

Аппăшĕпе йăмăкĕ малалла пурăнма тăрăшнă. Пӳрте ăшăтмалла, апат пĕçермелле пулнă. Юрать-ха, вĕсен телейне тенĕ пек, Чермĕш ялĕпе юнашарах вăрман пулнă. Вăрмана кайса вĕсем вут-шанкă хатĕрленĕ,



*З.И. Ильина*

пӳрте ӑшӑтнӑ, шӑнса ларман. Пиччӗшӗ вилнӗ тесе вӗсене районти ҫар комиссариачӗ ҫине тӑнипе хӗл каҫма 2 кубла метр вутӑ-шанкӑ уйӑрса панӑ. Ку вутӑ пӗтсен, аппӑшӗ ура ҫине тӑрсан, вӗсем вӑрмана кайса вутӑ хатӗрлесе килнӗ.

Шкулта вӗренес тесен те Юлян унта ҫӳреме май килмен. Выҫӑллӑ-тутӑллӑ, ҫинӗ-ҫимен пурӑннӑ май вӑл ялти шкулта 4 класс кӑна пӗтернӗ. Малалла вӗренме каяйман, ӗҫлемелле, хырӑма тӑрантармалла пулнӑ. Каларӑм ӗнтӗ, ун чухне патшалӑх тӑлӑх ачасене хальхи пек пулӑшу паман, вӑрҫӑ вӑхӑчӗ пулнӑ. Ялти бригадир Федот Шкадеров пӗррехинче ҫамрӑк хӗрачана сысна фермине ӗҫлеме чӗнет. Ун чухне Юля 14 ҫулта кӑна пулнӑ-ха, апла пулин те тӳрех килӗшет. Ялти сысна ферминче вӗсем виççӗн ӗҫленӗ. Витесенче ун чухне 80 пуҫ сысна тата 500–600 яхӑн сысна ҫури пулнӑ. Вӗсене пурне те пӑхмалла пулнӑ. Мӗн тери йывӑр лекнӗ ҫамрӑк хӗрачана. Пӗтӗм ӗҫе алӑпа тумалла пулнӑ-ҫке. Хальхи вӑхӑтра хӑш-пӗрисем хуҫалӑхра пӗр пуҫ сысна та тытса усрама ӳркенеҫҫӗ.

Пурӑнсан-пурӑнсан фермӑна Кӗҫӗн Ӑстакассине куҫараҫҫӗ, Чермӗш ялӗнче сурӑх ферми ҫеҫ хӑвараҫҫӗ. Фермӑра ӗҫленӗ ҫынсем кӑна пӗлеҫҫӗ: ҫӑмӑл-и, йывӑр-и выльӑх-чӗрлӗхе пӑхма? Вӗсене кунне 3-4 хутчен апат парас, шӑварас тата витесене тасатас пулать. Ӗҫе ирхине 4-5 сехетре тухса кайнӑ та каҫ пулсан кӑна ывӑнса таврӑннӑ. Ҫапла хӗрӳ ӗҫре кун хыҫҫӑн кун иртнӗ. Хӗрачасем те ӳссе пынӑ, вӗсене каччӑ шухӑшӗ те кӗнӗ. Мӗн тӑвӑн, ҫамрӑклӑх вӑл хӑйӗннех ыйтать. Ҫак вӑхӑтра юратса та курас килет...

Ҫуллахи вӑхӑтра маттур та ӗҫчен хӗрсем пахчаҫимӗҫ туса илекен бригадӑра ӗҫленӗ. Вӗсен бригадирӗ вӑрҫӑран таврӑннӑ Владимир Александров пулнӑ. Бригадӑра нумай хӗрсем-каччӑсем ӗҫленӗ вӑл вӑхӑтра. Тӗслӗхрен, Нина Васильева, Елена Федорова, Тамара Сусанина, Галина Волкова тата ыттисем те.



***Николай Федоровичпа Юлия Ильинична Скворцовсем***

Каччăсенчен: Миша Волков, Борис Кушаков, Ювенал Александров тата ыттисем те. Каччăсем анасене сухапуçĕпе сухаланă, сӳреленĕ, çитĕнсе çитнĕ хăяр, купăста, помидорсене пасара сутма илсе кайнă.

Каярахпа хĕрсем хăмла пахчине ĕçлеме куçнă. Ана пĕтĕмпех кĕреçепе хусăкламалла пулнă, хăмла пахчинчи ĕçсене пĕтĕмпех алă вăйĕпе туса пынă ун чухне. Çамрăксене хăмла туса илме Галина Волкова, Татьяна Волкова тата Зиновия Волкова вĕрентсе пынă.

Ĕçленĕшĕн ĕçкунĕ (трудодень) çырса панă. Кĕркунне пĕр ĕçкунĕ пуçне 1 килограмм тырă панă, тырă пулман чухне вара нимĕн те илеймен.

– Ĕçлеме йывăр пулнă пулин те пушă вăхăта эпир савăнăçлă ирттернĕ ун чухне, – тет çамрăклăха аса илсе Юлия Скворцова. – Пĕвере шыва кĕнĕ, пĕр-пĕрне шывпа сапмалла вылянă, кăнтăрла каннă вăхăтра чăлханусќи çыхнă. Пĕр сăмахпа каласан, кам мăн ал ĕçне пĕлнĕ, çавна тунă. Хĕлле улах ларнă, каччăсем унта купăспа пынă. Вĕсем пире юрлаттарнă, ташлаттарнă.

Яшсем черетпе кашни хĕрпе ташласа тухнă. Улах салансан каччăсем хĕрсене ăсатса янă. Мана çавăн чухне киле Коля Скворцов ăсатса яратчĕ, – тет вăл кăшт кударах та именерех.

Юлия Ильинична качча кайнă хыççăн çеç телейлĕ те тулли пурнăçпа пурăнма пуçланă. Пулас упăшки унăн кӳршĕрех, урам урлă çеç пурăннă. 1957 çулхи нарăс уйăхĕнче вĕсем Николай Скворцовпа çемье çавăрнă. Çамрăк мăшăр малтанах пĕчĕк пӳрт туянса уйрăлса тухнă, тепĕр виçĕ çултан вара пысăк çурт лартнă. Хальхи вăхăтра пурăнакан çуртра вĕсем юратнă мăшăрĕпе 1982 çулта пурăнма пуçланă.

Скворцовсем иккĕшĕ те мĕн тивĕçлĕ канăва тухичченех «Дружба» совхозăн Кĕçĕн Ăстакасси уйрăмĕнче ĕçленĕ. Юля хăмла туса илес енĕпе ăста пулнă. Ăна ĕçре хастар тата тăрăшуллă пулнăшăн чылай парне парса хавхалантарнă. Вăл тĕрлĕ медаль илме тивĕçлĕ пулнă. Унăн «За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941–1945 гг.» тата ытти юбилей медалĕсем те пур. Шел пулин те, упăшки вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Скворцовсем пĕр хĕрпе пĕр ывăл çуратса ӳстернĕ. Володя ывăлĕ мăшăрĕпе питĕ кăмăллă пурăнать. Владимирăн 2 ывăл. Ывăлĕсем ашшĕ пекех питĕ ĕçчен, яланах ăна пулăшаççĕ.

80 çултан иртнĕ çынсем – тыл е ĕç ветеранĕсем. Вĕсем çулсеренех сахалланса пыраççĕ. Нумайăшĕ çинчен эпир нимĕн те пĕлместпĕр. Хăй вăхăтĕнче (çамрăкрах чухне ĕнтĕ) вĕсем те ĕçленĕ, ятлă çынсем пулнă. Хальхи вăхăтра пурте ватă. Çавăнпа вĕсене кăштах хисеплеме пĕлмелле.

Эпĕ çырса кăтартнă Юлия Ильинична шăпах çавăн пек хисепе тивĕçлĕ ветеран.



***Н.Ф. Скворцовпа Ю.И. Скворцовăн Володя ывăлĕ.***



***Сулахайран сылтăмалла** (малти ретре)**: Андрей, Алеша. Хыçалта: Владимир тата Галина Скворцовсем.***



***Нина Николаевна Михайлова хăйĕн çемйипе.***
***Сулахайран сылтăмалла: Нина, Наташа, Саша.***

## Сăмахăм – ал ĕç ăсти çинчен

Çĕрпÿ хулинче, Çавал юханшывĕ хĕрринчи илемлĕ вырăнта кашни çулах утă уйăхĕн пуçламăшĕнче 4-5 кун хушши ярмарка пулать. Эпир çамрăк пулнă чухне, пĕр 40–50 çул каярах, вăл питĕ вăйлă иртетчĕ. Ку ярмаркăна суту-илÿ тума Çĕрпÿ районĕнчен кăна мар, ытти юнашар районсенчен, республикăсенчен те тавар сутакан-илекен çынсем лаша кÿлсе килетчĕç. Çав кунсенче мĕн иртен пуçласа тĕттĕм касченех урапасем хăлтăртатни илтĕнетчĕ. Хăшĕсем тата тăрантас çине ларса çемйи-çемйипех пасара каятчĕç. Эпир, çамрăкрах ачасем, карусель çине ларса ярăнсан, шÿтлĕ камитсене курсан, кино пăхсан тата какай шÿрпи çисен питĕ савăннă çак пасарта. Хĕрлĕ тĕслĕ пылак шыв ĕçсен тата пушшех те хĕпĕртенĕ. Ăна туянма вара малтанах укçа хатĕрлеттĕмĕрччĕ – çĕр (хурăн) çырли пуçтарса сутнă. Хамăр ĕçлесе тупнă укçапа çак пылак шыва туянма питĕ кăмăллăччĕ.

Пасара халăх кăткă пек нумай пухăнатчĕ. Йĕритавра шав тăратчĕ, вăйлă суту-илÿ пыратчĕ ун чухне. Ал ăстисем тунă мĕнле кăна япала пулман-ши унта? Йывăçран, тимĕртен, тăмран тунă тавара уйрăмах нумай сутатчĕç. Акнă тырпула вырма, утă хатĕрлеме аннесем çурла, çава туянатчĕç.

Килте усă курмалли япаласем: çăпата, уйран çÿпçи, ал арманĕ, карçинкка, кĕвенте, пуртă, кĕреçе аври тата ытти тĕрлĕ хатĕрсем питĕ нумай сутатчĕç.

Çав таварсене пурне те ăста алăллă çынсем тунăçке ун чухне. Хальхи пасарта вара çав таварсенчен чылайăшне кураймастăн, мĕншĕн тесен хăшпĕрисем манăçа тухса пыраççĕ, ал ĕç ăстисем те çулсем иртнĕçемĕн сахалланаççĕ. Ваттисем ку пурнăçран уйрăлса каяççĕ, çамрăксем çак ĕçпе аппаланасшăнах мар. Анчах пур-ха вĕсем, пултаруллă çынсем. Паян эпĕ сире вĕсенчен пĕринпе паллаштарасшăн.



***Юрий Степановичпа Валентина Тимофеевна Серебряковсем.***

Кĕçĕн Ăстакасси ялĕнче пурăнакан Юрий Степанович Серебряков аллисем мĕн кăна тума пĕлмеççĕ пулĕ? Пĕр сăмахпа каласан, вăл йывăçран япаласем тума пултаракан чăн-чăн ăста. Çак ĕçсене вăл «Лесоруб» промартельте тата Сĕнтĕрвăрринчи урапа-çуна тăвакан заводра ĕçленĕ чухне вĕреннĕ. Вăл тунă çунашкасемпе, кĕвентесемпе, кĕреплесемпе тата ытти япаласемпе хамăр районти кашни ялта тенĕ пекех усă кураççĕ. Ю.Серебрякова ал ĕçне тума вĕрентекенĕ «Лесоруб» промартельти Алексей Андреевич Коньков ăстаçă пулнă.

Юрий Степановичăн арăмĕ те хăй вăхăтĕнче «Лесоруб» промартельте вăй хунă. Вăл ĕçлекен бригадăри рабочисем çуна тупанĕсем, кустăрма тупанĕсем тата ытти урапа-çуна пайĕсене хатĕрленĕ.

Юрий Степановичпа Ăстакасси хĕрĕ Валентина Тимофеевна пĕр-пĕринпе «Лесоруб» артельте ĕçленĕ чухне паллашса туслашнă. Каярахпа вара пĕр çемье чăмăртама шутланă, мăшăрланнă. Вĕсем 6 ача çуратса

пăхса ӳстернĕ. Хальхи вăхăтра 5 ачи пурăнать. Вĕсем пурте çемьеллĕ, ашшĕ-амăшĕ патне килсех тăраççĕ. çемье пуçлăхĕ Ю. Серебряков хăйĕн ачалăхĕпе çамрăклăхне çапла аса илет.

– Эпĕ 1937-мĕш çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче уяв кунĕнче Марий Эл Республикинче Шемшурга ялĕнче вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсен çемйинче çуралнă. Пирĕн аттене, Степан Михайлович Серебрякова, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансанах фронта илсе кайнă. Ун чухне килте эпир виççĕн тăрса юлтăмăр: анне, аппа тата эпĕ. Анне пирĕн Сĕнтĕрвăрри районĕнче Кĕçĕн Ăстакасси ялĕнче çуралса ӳснĕ пулнă. Çемьери йывăрлăхсене пула вăл пире хăйĕн тăван ялне илсе килнĕ. Кунта çапах та çăмăлрах пуласса шаннă.

Вăрçă чарăннă çул вырăнти шкула вĕренме кайнă, кунта 7 класс пĕтернĕ. Унтан Турханкассинчи вăтам шкулта 8-мĕш класра çур çул вĕреннĕ хыççăн Леонид Павлович Яруковпа каллех Шемшургана кайнă. Кунта вăрман хуçалăхĕнче кăштах ĕçленĕ. Анчах кайран пурпĕр тăван яла чун туртрĕ. Каялла яла таврăнтăм та Ăстакассинчи «Лесоруб» артеле ĕçлеме вырнаçрăм. Мана çуна тăвакан цеха ячĕç. Ун чухне Алексей Андреевич Коньков пирĕн маçтăрччĕ. Эпир лаша урªписем тата çунасем тунă. Çакăнтанах мана тепĕр темиçе çултан Сĕнтĕрвăрринчи урапа-çуна тăвакан завода ĕçлеме куçарчĕç. Ку заводра эпир «Лесоруб» артельте тунă ĕçсенех пурнăçланă. Каярахпа тата Сĕнтĕрвăрринчи вăрман хуçалăхĕнче юман юпасене çурса çуна тупанĕсем хатĕрлес енĕпе те ĕçлерĕм. Кунта мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен вăй хутăм.

Урапа-çуна заводĕнче ĕçленĕ чухне мана «Коммунизмла ĕç ударникĕ» ят пачĕç. Çакăнтах В.И. Ленин 100 çул тултарнă ятпа кăларнă медальпе наградăларĕç. Пĕр сăмахпа каласан, манăн ĕçе пысăка хурса хакларĕç.

Эпир мăшăрăмпа ĕçленĕ урапа-çуна заводĕнче туса кăларнă çунасене тĕрлĕ республикăсенчен килсе илсе каятчĕç. Камчаткăра та, Алтайра та усă курнă вĕсемпе.

***Сулахайран сылтăмалла: Л.Ф. Яруков, Ю.С. Серебряков, Л.А. Коньков.***



***Сулахайран сылтăмалла: Л.Ф. Яруков, Ю.С. Серебряков, Л.А. Коньков.***

Тăван çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесне саланнă пирĕн таварсем. Ахальтен мар ĕнтĕ 1970-мĕш çулта пирĕн бригада çинчен «Советская торговля» хаçатра та ырласа çырса кăларнăччĕ. «Алтайская правда» хаçатра та ырăпа асăннă пирĕн ĕç пирки.

Юрий Серебряковăн аллисем чăнах та ылтăн темелле. Вăл туса хатĕрленĕ кĕвентесемпе, пуртă аврисемпе, çунашкасемпе, çава аврисемпе, кĕреплесемпе ялта пурăнакансем савăнсах усă кураççĕ, алĕç ăстине тав сăмахĕ калаççĕ.

Мăшăрĕпе, Валентина Тимофеевнăпа, вĕсем нихăçан та йывăрлăхра пуçа усман, çын пулăшасса кĕтмен, хăйсем çине тăрса хăйсен вăйĕ çине шанса пурăнаççĕ. çурт-йĕрне те лайăх çавăрса лартнă çак мăшăр. Нумаях пулмасть тата, ачисене килсе çӳреме лайăхрах пултăр тесе, тата тепĕр «хăна çурчĕ» те купаласа лартрĕç. Кашни канмалли кунсенчех ачисемпе мăнукĕсем тĕп киле пуçтарăнаççĕ. Çак йышлă çемье хăйĕн ĕçченлĕхĕпе, сăпайлăхĕпе уйрăлса тăрать те ыттисенчен.



***Ю.С. Серебряков, Олег Серебряков, Вячеслав Серебряков тата унăн мăшăрĕ Антонина. Малта – Владислав Серебряков.***



***Çамрăк мăшăр – Володя тата Лидия.***



***Владислав пиччĕшĕн ачисемпе.***



***Ю.И. Серебряковăн кинĕ Татьяна тата ывăлĕсем: Вячеславпа Николай.***

## Телейлӗ мӑшӑрӑн – 22 мӑнук

2008-мӗш ҫулхи юпа уйӑхӗнче Шупка (Иштерек) ялӗнче пурӑнакан Николай Антонович Мартьянов хӑйӗн арӑмӗпе, Галина Семеновнӑпа, кӗрхи ӗҫсем пӗтнӗ хыҫҫӑн килӗнче хаклӑ хӑнасене кӗтсе илчӗ. Сӑлтавӗ ҫемье пуҫлӑхӗ 70 ҫул тултарнӑ ятпа ҫыхӑннӑскер пулчӗ. Ку юбилей каҫӗнче манӑн та пулма тӳр килчӗ.

Чӗннӗ хӑнасем пурте пухӑнайман-ха. Ҫакӑнпа усӑ курса эпӗ юбиляра калаҫӑва чӗнтӗм. Унӑн пурнӑҫ ҫулӗпе вулакансемпе пӗрле утма кӑсӑклӑ пулассӑн туйӑнчӗ:

– Николай Антонович, хӑвӑр ҫамрӑклӑхӑр ҫинчен кӗскен каласа парӑр-ха? – тесе ыйтсан, вӑл пурнӑҫ шӑпин «ҫӑмхине» ҫапларах сӳтме тытӑнчӗ:

– 70 ҫул каялла эпӗ хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. Атте-анне ҫӗр ҫинче ӗҫленӗ, выльӑх-чӗрлӗх тытнӑ. Ялти ытти ҫынсем пекех пӗчӗк ҫуртра пурӑннӑ. Эпӗ ачасемпе пӗрле урамра выляса ӳснӗ. Ялти пуҫламӑш шкулта 4 класс, унтан Октябрьскинчи вӑтам шкулта 7 класс пӗтернӗ. Шкулта вӗреннӗ ҫулсенче атте-анне-не хуҫалӑхра пур енчен те пулӑшнӑ: тырӑ вырма, утӑ хатӗрлеме, авӑн ҫапма, ҫӗрле лашасем пӑхма ҫӳренӗ. Кӗтӳ кӗтме те савӑнсах кайнӑ.

Сӗнтӗрвӑрринчи механизаци училищинчен вӗренсе тухса алла тракторист тата шофер прависене илнӗ хыҫҫӑн колхозра тракторпа ӗҫлеме тытӑннӑ. Малалла вӗренме шутламан, мӗншӗн тесен укҫа-тенкӗ пулман.

Пулас арӑмпа вара акӑ мӗнле паллашрӑм. Кӳршӗри Юрий Ташков хӑйӗн мӑшӑрне Карапаш ялӗнчен илчӗ. Вӗсем патне час-часах ҫак ялтан пӗр хитре хӗр хӑнана ҫӳреме пуҫларӗ. Эпӗ вара ҫав Гальӑна куҫ хыврӑм та, кӗтсе илме тата ӑсатса яма тытӑнтӑм. Вӑт ҫапларах пуҫланчӗ те пирӗн юрату...

Тӗрӗссипе, эпӗ хам та япӑхах пулман: яштака пӳллӗ, кӑтра ҫӳҫлӗ. Арӑм вара ман йӗкӗреш пулнӑ ик-кен, ҫавӑнпа вӗсем Вальӑпа иккӗшӗ питех те пӗр пекчӗ.

1958-мӗш ҫулхи ҫу уйӑхӗнче эпир мӑшӑрлантӑмӑр.

Çавăнтанпа çак ялта малтан колхозра, кайран совхозра ĕçлесе пурăнтăм. Пенсие тухас умĕн Октябрьскинчи больницăра рабочире тăрăшрăм. Ман алăра трактор та, лаша та пулнă.

Пенсие тухиччен вăй пур чухне мăшăрпа 2 пӳрт лартрăмăр, пĕри – йывăçран, тепри кирпĕчрен. Халĕ кирпĕч çуртра пурăнатпăр.

– Николай Антонович, сире арăму 6 ача çуратса парнеленĕ. Çав тери пысăк пуянлăх теме пултаратăр-и вĕсем пирки?

– Çапла, пултаратăп. Ку таранччен пире пĕр ачи те намăс кăтартман. Аслă ывăл, Олег, Шупашкарти ял хуçалăх институтне вĕренсе пĕтерчĕ, çар службинче пулчĕ, чылай вăхăт хушши «Октябрьский» совхозра инженер-механикре ĕçлерĕ. Арăмĕ, Таня, Хусанти ветеринари институчĕ хыççăн совхозра ветврач пулса ĕçлерĕ, халĕ те хăйĕн специальноçĕпех вăй хурать.

Аслă хĕр, Рева, вăтам пĕлӳ илнĕ хыççăн Шупашкарти агрегат заводне кайрĕ, çак хулара мăшăр тупрĕ. Упăшки, Толя, питех те ĕçчен тата кăмăллă кĕрӳ.

Римма Николаевна Çĕнĕ Шупашкарти хими комбинатне вырнаçрĕ, вăхăт çитсен Леонид Захаровпа мăшăрланчĕç. Халĕ кăмăллă, туслă, пĕр-пĕрне юратса пурăнаççĕ.

Кĕçĕн ывăлсем Юра, Володя, Слава (юлашки иккĕшĕ – йĕкĕреш) çар служби хыççăн шофера вĕренсе тухрĕç. Манăн çакна калас килет: Володяпа Славик шкулта вĕреннĕ чухне çăмăл атлетика енĕпе вăйлă спортсменсем пулнă, районти тата республикăри тĕрлĕ ăмăртусене хутшăннă, час-часах пĕрремĕш вырăна тухнă.

– Сирĕн мăнуксем нумай тенине илтнĕ, Николай Антонович?

– Пирĕн пысăк çемьере пĕтĕмпе 22 мăнук. Ялта пирĕн çинчен чи телейлĕ мăшăр тесе калаççĕ. Ку вăл тĕрĕс, çуркунне эпир мăшăрланнăранпа 54 çул çитрĕ. Хальхи

вăхăтра пĕччен тăрса юлнă арăмсем е упăшкасем сахал мар. Эпир мăшăрпах пурăнатпăр-ха.

Олегпа Таня кинĕн 2 ача. Саша ятлă ывăлĕ Хусанти А. Туполев ячĕллĕ университет пĕтерчĕ. Хĕрĕ, Елена, Шупашкарти педагогика университетĕнче логопед тата акăлчан чĕлхи учителĕ специальноçсене алла илчĕ.

Рева Николаевнăн та 2 ача. Пĕри сварщик, тепри электрик пулса ĕçлеççĕ, Çĕнĕ Шупашкарта пурăнаççĕ.

Римма Николаевнăпа Леонид Захаров ачасенчен питех те пуян. Вĕсем Шупашкарта уйрăм пӳрт илнĕ. Вĕсен туслă çемйинче 10 ача. Иккĕшĕ те ĕçлеççĕ, никамран та пулăшу ыйтмаççĕ. Ачасене хамăр çуратнă, хамăрах пăхатпăр теççĕ.

Юрий Николаевичпа Ольга Гавриловна 3 ывăл пăхса ӳстереççĕ. Виççĕшĕ те Октябрьскинчи вăтам пĕлӳ паракан шкула çӳренĕ, спортсменсем.

Володян арăмĕ (Олимп чемпионкин Елена Николаевăн йăмăкĕ) пире 4 ача çуратса парнелерĕ. Хăй, Ирина, стоматолог, Володя – шофер. Çĕнĕ Шупашкарта пурăнаççĕ. Ирина кин ачасене килте хăй вĕрентет.

Славапе Римма Павловнăн – 1 ывăл. Слава – водитель, кин Октябрьскинчи больницăра аслă медсестрара вăй хурать. Эпир хамăр та телейлĕ, ачасем те çаплах. Пурте сывлăхлă, ĕçлеççĕ.

Николай Антоновичпа калаçнă хушăра сĕтел çинче нумай хаçат выртнине асăрхарăм. Кун пирки юбиляр çапла ăнлантарчĕ:

— Эпĕ те, арăм та вулама юрататпăр. Нумай çул хушши «Хыпарпа» туслă пулнă. Халĕ хамăр районăн «Пирĕн сăмах» хаçатне çырăнса илетпĕр тата кашни уйăхрах «Капкăн» журнал килет. Арăмăн юратнă хаçачĕ – «Хресчен сасси».

*Автортан: Интервью илнĕренпе 4 çул ытла иртрĕ. Унтанпа ачисен тата мăнукĕсен пурнăçĕсенче те улшăнусем пулса иртнĕ.*



***Н.А. Мартьянов тата унӑн мӑшӑрӗ Г.С. Мартьянова.***



***Вячеслав, Римма тата Артур Мартьяновсем.***



***Владимирпа Ирина Мартьяновсен ачисем. Сулахайран сылтă-малла: Наташа, Антон, Лия, Даниил.***



***Владимир Мартьяновăн çемьи. Сулахайран сылтăмалла: В.Н. Мартьянов, Наталия, Лия, Антон, Даниил, И.Н. Мартьянова.***



***Малти ретре: Рева Корнилова тата Рая Ташкова.***
***Тăраканни - Елена Конькова.***



***Радислав Корнилов***



***Олег Мартьянов***



***Андрей Мартьянов***



***Елена Мартьянова***



***О.Г. Мартьянова тата Ю.Н. Мартьянов***



***Павел Мартьянов***

## Музыкăпа, спортпа туслă çемьесем

Ку кĕнекене кăларас умĕн мăнукĕсем çинчен нумайтарах пĕлес тесе Истерекасси ялĕнче пурăнакан Николай Антонович Мартьяновпа тĕл пултăм. Ачисем тата мăнукĕсем çинчен вăл çапла çĕнĕ хыпарсем пĕлтерчĕ.

– Олег ывăлăмпа Таня кинĕн 2 ача. Елена Шупашкарти И.Н. Ульянов ячĕллĕ университетра логопед-психолог тата акăлчан чĕлхи учителĕ специальноçĕсене илчĕ. Унăн аллинче аслă пĕлӳ илни çинчен калакан 2 диплом. Ку вĕренӳ заведенине пĕтернĕ хыççăн пĕр вăхăт хушши «Мегафон» çыхăну компанинче оператор пулса ĕçлерĕ, хальхи вăхăтра электромеханика техникумĕнче кадрсен пайĕн специалисчĕ пулса вăй хурать. Саша мăнук Октябрьскинчи вăтам пĕлӳ паракан шкулта пилĕк паллăсемпе вĕреннĕ, математикăпа тата физикăпа районти тата республикăри олим-пиадăсене хутшăнса малти вырăнсене йышăннă. Вăл Хусанти авиаци институтне вĕренсе пĕтернĕ. Спортпа питĕ туслă, гитарăпа аван калакан Саша лайăх специалист пуласса чăннипех шанатăп. Рева Николаевна нумай çул ĕçлесе пенсине тухрĕ, сăмах май каласан, вăл «Чувашкабель» заводра 20 çул ытла вăй хучĕ.

Леонидпа Римма Захаровсен 10 ача. Вĕсен аслă хĕрĕ Светлана Шупашкарти экономикăпа технологи колледжне вĕренсе пĕтерчĕ, санитарка пулса ĕçлет. Павел 9-мĕш класра пĕлӳсем илет, çав вăхăтрах музыка шкулĕнче аккордеонист пулма хатĕрлекен класра пĕлӳсем илет, аккордеонпа ăста калама тăрăшать. Степан та 9-мĕш класра вĕренет, çав вăхăтрах музыка шкулĕнче сĕрме купăспа вылякан ăста специалист пуласшăн. Вăтам пĕлӳ паракан шкулта 8-мĕш класра вĕренекен Даниил та музыка шкулĕнче виолончеле алла илет. 7-мĕш класра вĕренекен Самуил та пиччĕшĕсенчен юласшăн мар. Вăл та музыка шкулĕнче флейта çинче вылять. 5-мĕш класри Руфа музыка шкулĕнчи хор занятисене çӳрет. Вăл юрлани мана килĕшет, шăпчăк пекех юрланăн туйăнать. Давид 4-мĕш



***Римма тата Леонид Захаровсем***

класра, Иван – 2-мӗш класра вӗренеҫҫӗ. Верӑпа Эвелина шкула каймаҫҫӗ-ха. Савӑнатпӑр эпир арӑмпа кун пек мӑнуксемпе. Вӗсем патне кайсан концерт лартса параҫҫӗ: юрлаҫҫӗ те, ташлаҫҫӗ те. Кашни мӑнук хӑй юратнӑ музыка инструменчӗ ҫинче выляса кӑтартасшӑн.

Юрӑпа Ольгӑн аслӑ ывӑлӗ Володя ҫар службинчен таврӑннӑ. Хальхи вӑхӑтра Шупашкарти машиностроитель техникумӗнче вӗренет. Андрей кӑҫал 9-мӗш класран вӗренсе тухрӗ. Павел 5-мӗш класран пуҫласа Олимп резервӗн шкулӗнче спортсмен пулма хатӗрленет. Вӑл хӑвӑрт утассипе 1-мӗш разряд илме ӗлкернӗ, спорт мастерӗ пулма тӑрӑшать.

Славикпа Володя йӗкӗреш ачасем. Володя 1986-мӗш ҫулта «Минеральные Воды» хулинче Раҫҫей Федерацийӗн хӑвӑрт утас енӗпе пулса иртнӗ ӑмӑртусенче кӗмӗл медаль илме тивӗҫлӗ пулнӑ. Вӑл хӑй вӗренекен шкулӑн чысне тӗрлӗ ӑмӑртусенче хӳтӗленӗ, малти вырӑнсене тухнӑ. Ирина кин те хӑвӑрт утассипе спорт мастерӗн кандидачӗ. Володяпа Иринӑн хӗрӗ Наташа 9-мӗш класра пӗлӳ пухать. Кунсӑр пуҫне вӑл ӳнер шкулӗнче хуш-

ма пӗлӳ илет. Вӑл ӳкернӗ картинӑсем мана килӗшеҫҫӗ. 7-мӗш класа ҫӳрекен Лия искусство шкулӗнче хушма пӗлӳ илет. Фортепьянопа выляса юрӑсем кӗвӗлет, сӑмахӗсене те хӑех ҫырать. Республикӑра ирттерекен тӗрлӗ конкурссене хутшӑнать. Юрлама та вӑл ӑста. Репетитор пулӑшнипе килте акӑлчан чӗлхипе пӗлӗвне анлӑлатать. 5-мӗш класра вӗренекен Антон вара гитарист. Пӗтӗм тӗнчери «Созвездие талантов» конкурса хутшӑнса хӑйӗн ӑсталӑхне кӑтартнӑ. 2-мӗш класри Даниил искусство шкулӗнче аккордеон калас ӑсталӑха алла илет.

Ачасемпе мӑнуксен пултарулӑхӗпе тата ҫитӗнӗвӗсемпе эпир савӑнатпӑр, вӗсен ӑсталӑхӗсем татах те ӳсессе шанатпӑр.

Славикпа Римма пӗр ывӑл пӑхса ӳстереҫҫӗ. Вӑл Артур ятлӑ, уншӑн халӗ чи пысӑк ӗҫ – лайӑх вӗренесси. Артур нумай кӗнеке вулать. Кирлӗ чухне интернетра хӑйне интереслентерекен ыйтусем ҫине ответ тупать. Компьютерпа ӗҫлесе хӑйне валли тӗрлӗрен программӑсем хатӗрлет.



*Захаровсен туслӑ та йышлӑ ҫемйи.*

# ВĔСЕМ ШКУЛ АЧИСЕНЕ ВОСПИТАНИ ПАРАС ТАТА ВĔРЕНТЕС ĔҪРЕ ВĂЙ ХУНĂ

## Педагог тата пултаруллă юрăҫăн кун-ҫулĕ

XIX ĕмĕр вĕҫĕнче – XX ĕмĕр пуҫламăшĕнче Нарат Чакки ялĕнче ҫуралса ӳснĕ ҫынсенчен Хусанти учительсен семинаринчен Е. Андреев, Н. Андреев, С. Антонов, В. фанасьев тата Т. Степанов вĕренсе тухнă. Ҫакăнта асăннă малтанхи 4 учителĕн пурнăҫ ҫулĕ пирки нимĕнех те калама пултараймастăп. Трофим Степанович Степанов ҫинчен вара мана унăн хĕрĕсем (Агния, Эмилия, Ираида) ҫырса пĕлтерчĕҫ. Ираида Трофимовнăпа весен ашшĕ-амăшĕ ҫинчен куҫа-куҫăн тĕл пулса калаҫса илтĕмĕр.

Т. Степанов Хуракасси ялĕнче 1889-мĕш ҫулхи ака уйăхĕн 23-мĕшĕнче кун ҫути курнă. Унăн ашшĕ-амăшĕ ҫĕр ĕҫченĕсем пулнă. Ялти шкултан вăренсе тухсан 1901–1908-мĕш ҫулсенче Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарире пĕлӳ илнĕ. Ăна вĕренсе пĕтерсен яла таврăнать. Семинари пĕтернĕ хыҫҫăн хăй валли «Патрик» псевдоним йышăнать. Ҫак вăхăтран пуҫласа псевдоним хăйшĕн те, арăмĕпе ачисемшĕн те хушамат пулса тăрать.

Хальхи вăхăтра Трофим Степанович ҫинчен пĕлекен ҫынсем Хуракасси ялĕнче ҫукпа пĕрех, мĕншĕн тесен 1950-мĕш ҫулта вăл ҫĕре кĕнĕ. Вăл вăхăтра 10 ҫулта пулнă ҫынсем ҫеҫ астума пултараҫҫĕ. Ҫав ҫынсем хальхи вăхăтра хăйсем те 70 ҫултан иртнĕ.

Хăй вăхăтĕнче Патрик ҫинчен хаҫатсенче ҫырман. Кам пулнă-ха вăл, мĕн енĕпе паллă ҫын? Унăн ятне М.Кондратьев профессор, искусствовед хăйĕн «Чувашский государственный ансамбль песни и танцев» кĕнекинче аса илет. Вăл ҫырнă тăрăх, Т. Патрик – педа-



*Трофим Степановичпа Ксения Митрофановна Патриксем Агния тата Евгений ачисемпе. Хусан. 1929–30-мĕш çулсем.*

гог, юрăç (тенор) пулнă. Вăл тунă чи пысăк та чи паллă ĕç – Нарат Чакки ялĕнчи интеллигентсен хорне йĕркелесе ертсе пыни. Ку хора 1913-мĕш çулта Нарат Чакки ялĕнче шкулта ĕçлеме пуçласан кĕркунне йĕркеленĕ. Хора шкулти учительсем, ялти вĕреннĕ çынсем тата



***Нарат Чаккинчи ял интеллигенци хорĕ. 1913 çул.***

Хусанпа Чĕмпĕр хулисенчен каникула килнĕ студентсем çӳренĕ. Сĕрме купăс калама Трофим Степанович семинарире пĕлӳ пухнă чухне вĕреннĕ. Çав хор вăл ертсе пынипе 4 çул хушши ĕçлет. Хор репертуарĕнче чăваш халăх, вырăс халăх тата революци юррисем пулнă. 1917–1918-мĕш çулсенче Т. Патрик хăйĕн пĕлĕвне Самарти пединститутра ӳстерет. Унтан вĕренсе тухнă хыççăн пĕр çулталăк хушши Кĕчкейри шкулта ĕçлет. 1919 çулта Шупашкар уесĕнче ĕçлекен учительсем ăна вĕренӳ пайĕн инструкторĕ пулма уйăрса лартаççĕ. Ун хыççăн вăл Шупашкарта ĕçлеме тытăнать.

1920-мĕш çулта чăвашсен паллă композиторĕ Федор Павлов Шупашкарта чăваш хорне йĕркелесе ярать. Çав хорта юрлама Т. Патрике чĕнет. 1921-мĕш çулта Трофим Степанович яла таврăнать. Çĕньял Пукашра (Первые Синьялы) пуçламăш класри ачасене вĕрентме тытăнать. Çав çулах Нарат Чакки ялĕнчи шкулта ĕçлекен Ксения Митрофановнăпа мăшăрланаççĕ. 1922-мĕш çулта вĕсен çемйинче хĕрача çуралать.

1923-мӗш ҫулта Т. Патрике каллех Чӑваш радио хорне Шупашкара чӗнсе илеҫҫӗ. Ку хор ҫурла уйӑхӗнче Мускава тухса каять. Тӗп хуламӑрӑн культура паркӗнче Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх тата кустар промышленноҫӗн выставки уҫӑлнӑ кун чӑваш хорӗ концерт панӑ ҫӗре хутшӑнать. Ун хыҫҫӑн хор авӑн уйӑхӗн 9-мӗшӗнче Кремльти Свердлов ячӗллӗ залра концерт парать. Репертуарта – чӑваш юррисем кӑна. Ҫав концертра Трофим Степанович «Тухать-и, тухмасть-и?» юрра хӑйӗн илемлӗ сассипе шӑрантарать. М. Калинин хушнипе чӑваш хорӗ юрланӑ 10 юрӑна пластинка ҫине ҫырса илеҫҫӗ.

1927-мӗш ҫулта Патриксен ҫемйи Хуракасси шкулне ӗҫлеме куҫать. Ку шкулта Трофим Степанович 1946-мӗш ҫулччен, Ксения Митрофановна – 1957-мӗш ҫулччен ӗҫлеҫҫӗ.

1935-мӗш ҫулта кӗркунне Трофим Степановича каллех Шупашкара хорта юрлама чӗнсе илеҫҫӗ. Шӑп ҫав вӑхӑтра Чӑвашрадиокомпани хорӗ Мускава тата Ленинграда гастроле кайма хатӗрленнӗ. Мускавра концерт панӑ чухне Совет правительствин членӗсем тата И.В. Сталин та чӑвашсен хорӗ юрланине итленӗ тесе кайран хӑйӗн хӗрне каласа панӑ.

Пӗтӗмӗшле каласан, Трофим Степанович учитель ҫеҫ мар, пултаруллӑ юрӑҫ та пулнӑ. Сывлӑхӗ хавшак пулнипе пенсие 1946-мӗш ҫулта тухать. Арӑмӗпе ачисем ӑна питех те юратнӑ, мӗншӗн тесен вӑл ырӑ кӑмӑллӑ, сӑпайлӑ ҫын пулнӑ.

Патриксен аслӑ хӗрӗ Агния Йошкар-Олари пединститута вӗренсе пӗтерет, пенсие тухиччченех Звенигово хулинчи шкулсенче ачасене вырӑс чӗлхипе литературине вӗрентет. Унӑн хӗрӗ, Надежда, врача вӗренсе тухнӑ, мӑнукӗ Звенигово хулинчи вӑтам шкулта ачасене акӑлчан чӗлхи вӗрентет.

Евгений Патрик Ленинградра вӑрман академине вӗренсе пӗтернӗ, Сӗнтӗрвӑрри хулинчи вӑрман техникумӗнче чылай ҫул хушши преподаватель пулса ӗҫленӗ.



*Т.С. Патрикăн ачисем (сулахайран сылтăмалла): Эмилия, Евгений, Агния, Ираида. 2001 çул.*

Эмилия ятлă хĕрĕ Хусанти медицина институтĕнче стоматолога вĕренсе тухнă, пенсие тухичченех Кукеçри район больницинче вăй хунă, тĕп врачра та тăрăшнă. Евгений Трофимовичăн ывăлĕ Анатолий Мускаври М. Ломоносов ячĕпе хисепленекен университетри физикăпа математика факультетне пĕтернĕ, унтах преподавательте ĕçленĕ, халĕ Дубнара наукăпа тĕпчев институчĕн сотрудникĕнче вăй хурать, физикăпа математика наукисен кандидачĕ.

Ираида Трофимовна Николаева (Патрик) Чăваш патшалăх педагогика институтне пĕтернĕ хыççăн пенсие тухичченех Хуракасси ялĕнчи шкул ачисене нимĕç чĕлхи вĕрентнĕ. Унăн мăшăрĕ, Михаил Николаевич, пенсие тухичченех Хуракасси шкулĕнче физкультура учителĕ пулса ĕçленĕ. Пурĕ çакă пысăк çемьен учитель стажĕ 200 çула яхăн.

Трофим Степановичпа Ксения Митрофановна хăйсен ачисене пурне те аслă пĕлӳ илме пулăшнă, çĕршыва юрăхлă, йĕркеллĕ ачасем пăхса ӳстернĕ.

# Юратнӑ учитель



*Владимир Сергеевич Сергеев*

Энӗшкасси Катек ялӗнчи пуҫламӑш шкултан вӗренсе тухнисенчен чылайӑшӗ хӑйсене вӗрентнӗ Владимир Сергеевич Сергеева ырӑпа асӑнаҫҫӗ. Ку шкулта вӑл 1946–1959 ҫулсенче ӗҫленӗ. Ку ҫеҫ мар, вӑл вӗрентнӗ ачасем те тахҫанах тивӗҫлӗ канура ӗнтӗ. Кам-ха вӑл Владимир Сергеевич?

Владимир Сергеевич Сергеев – районта паллӑ ҫын. 1946 ҫулта Ҫӗрпӳри педагогика училищинчен вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн ӑна Энӗшкасси Катекри пуҫламӑш классен шкулне ӗҫлеме яраҫҫӗ. Ку шкулта 1959 ҫулччен вӑй хурать. Ун чухне вӑл ҫамрӑк учитель пулнӑ, ачасене юратнӑ, тӑрӑшса ӗҫленӗ. Ҫавӑнпа та ачасем ӑна хисепленӗ. Унӑн вӗренекенӗ пулнӑ, халӗ ӗҫ ветеранӗ Геннадий Семенов пуҫламӑш шкулта вӗреннӗ ҫулсене аса илсе ҫапла каласа пачӗ:

– Эпир Владимир Сергеевича ҫав тери юратнӑ, вӑл та пире юрататчӗ. Переменӑра эпир ӑна эртелпе карса илеттӗмӗр те ураран ӳкерме тӑрӑшаттӑмӑр, анчах та ӑна ҫӗнтерейместтӗмӗр, вӑл вӑйлӑччӗ. Урама тухсан тытмалла, хӗллехи вӑхӑтра физкультура урокӗнче юрпа пемелле тата футболла вылянӑ.

Владимир Сергеевич та хӑй вӗрентнӗ ачасене ырӑпа асӑнать. Тӑрӑшса вӗреннӗ ачасене халӗ те манса кайман. Вӗсен шутӗнче: Ваня Матвеев, Вася Ильин, Георгий Тимофеев, Мария Петрова, Ангелина Тарасова, Клавдия Иваншкова тата ыттисем те.

Владимир Сергеевич каланӑ тӑрӑх, шкул – уйра Малтикаспа Варӗнчикас хушшинче ларнӑ. Шкула торфпа хутса ӑшӑтнӑ, торфне Шӗнертен кӳрсе килнӗ. Вӑл вӑхӑтра Шӗнерте торф кӑларнӑ пулнӑ. Электричество пулман. Уроксем 9 сехетрен пуҫласа 14 сехетчен ҫеҫ пынӑ. Ку шкулта 2 класс пулнӑ. Тепӗр класӗпе Серафима Антоновна ӗҫленӗ. Классенче 25 ача таран вӗреннӗ. Шкулта таса та ӑшӑ пултӑр тесе Перасковья Николаева питех те тӑрӑшнӑ.

Малалла кӗскен В.С. Сергеев ҫинчен калас килет. Вӑл Шӗнер ялӗнче юпа уйӑхӗн 23-мӗш кунӗнче нумай ачаллӑ ҫемьере ҫуралнӑ. Ашшӗ пӗр вӑхӑт ял Совечӗн председателӗ пулса ӗҫленӗ.

Владимир Сергеевич Сергеев 1942–1946 ҫулсенче Ҫӗрпӳри педагогика училищинче вӗреннӗ. 1959 ҫулта ӑна коммунистсен партийӗн Ҫӗрпӳ райкомне ӗҫлеме куҫараҫҫӗ. Кунта вӑл тӗрлӗрен должноҫсенче 1970 ҫулччен вӑй хурать, кайран пенсие тухас умӗн Ҫӗрпӳ районӗнчи шкулсенче тӗрлӗ должноҫсенче ӗҫлет. Ӗҫленӗ вӑхӑтрах (1961–1965) Чулхулари партин Аслӑ шкулне вӗренсе пӗтерет.

Хӑй вӑхӑтӗнче Владимир Сергеевич Тупнерти, Ҫӗрпӳ хулинчи 2-мӗш номерлӗ, Туҫинчи тата Тавӑшкассинчи шкулсенче ӗҫленӗ.

Лайӑх ӗҫленӗшӗн В.С. Сергеев правительство наградисене те тивӗҫнӗ. Вӑл «За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941–1945 гг.», «За доблестный труд. В ознаменование 100-летия со дня рождения В.И. Ленина», «Ветеран труда», «50 лет Победы в Великой Отечественной войне 1941–1945 гг.» медальсене тивӗҫнӗ, вӗсене тӗплӗн упрать.

Арӑмӗпе, Маргарита Софроновнӑпа, (вӑл та учительница) 3 ача ҫуратса ӳстернӗ, ура ҫине тӑратнӑ, вӗренме пулӑшнӑ. Ачисем пурте ҫемьеллӗ, аслӑ пӗлӳ илнӗ, тӗрлӗ ҫӗрте ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ.

# Суха туса, тырӑ вырса



*Валентин Васильевич Греков*

«Ҫӗр ӗҫченӗн ҫулталӑкӗнче вӗрентекенӗмӗрсем ҫинчен калаҫни вырӑнлӑ-ши?» – тесе калама пултарӗ хӑшӗ. Тӗллӗн-тӗллӗн иккӗленмелли пулать, анчах сӑмах Валентин Васильевич Греков ҫинчен пынӑ чухне мар. Ял учительне ҫӗр тӑрантарса ӳстернӗ, ҫавӑнпа хресченлӗх тени унӑн чунӗнче, шухӑшлавӗнче, ӗҫӗсенче. Валентин Васильевич вӗрентекенсен кивӗ «гвардийӗнчен». Ҫак паллӑ ҫул унӑн пиҫӗхлӗхне пушшех те витӗмлӗ сӑнлать.

Шӗнерпуҫ ялӗнче Валентин Васильевичпа унӑн мӑшӑрне Антонина Васильевнана, паллах, пурте пӗлеҫҫӗ. Вӗсем иккӗшӗ те ӗҫ ветеранӗсем, тивӗҫлӗ канура. Шел, Антонина Васильевна 2010-мӗш ҫулхи пуш уйӑхӗн 29-мӗшӗнче ҫӗре кӗнӗ.

Валентин Греков 1931 ҫулхи нарӑс уйӑхӗн 8-мӗшӗнче Шӗнерпуҫ ялӗнчи хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. Василий Михайловичпа Мария Васильевна ҫемьинче вӑл чи аслӑ ача пулнӑ. Ашшӗ вӑрҫа кайиччен ҫемьере тата 3 ача хутшӑннӑ.

Валентин ашшӗне – Василий Михайловича 1937 ҫулта Шӗнерпуҫ ялӗнчи В. Маяковский ячӗллӗ колхозӑн председательне суйлаҫҫӗ. Амӑшӗ, Мария Васильевна, Шӗнерпуҫӗнчи ял Совечӗн председателӗ пулса тӑрӑшнӑ. 1938 ҫулта Василий Михайлович тӑрӑшнипе ял варринче пӗве алтаҫҫӗ, ҫак пӗвере пулӑсем ӗрчетнӗ. Кашни ҫулах пулӑ тытса колхозниксене ӗҫ кунӗшӗн салатса панӑ.

1941 çулта хаяр вăрçă пуçланнă. Василий Михайловича вăрçа каймалла мар «бронь» панă. Çак çăмăллăха пăхмасăр, пуш уйăхĕнче вăл (хăйĕн ирĕкĕпе) фронта тухса каять. Тăшманпа нумай та çапăçма ĕлкĕреймест, çак çулхи утă уйăхĕнчех пуçне хурать.

Унăн вилтăприйĕ Калуга облаçĕнчи масар çинче. Çакăнта Валентин Васильевич 1994 çулта ывăлĕпе тата мăнукĕпе пулса чечек кăшăлĕ хурса хăварнă. Котовичи ялĕнче пурăнакан çынсем, шкул ачисем пирĕн ентеше пытарнă масара чыслă тытаççĕ. Асăнмалла, унта 1550 çынна пытарнă.

Валентин ашшĕ-амăшĕн ачисенчен асли пулнă терĕмĕр. Ун хыççăн Володя, Роза тата Анатолий çуралнă. Ашшĕсĕр тăрса юлнă çемьери ачасем кам мĕн ĕç тума пултарнă, çавна пурнăçланă. Вăрçă пуçланас умĕн Валентин 10 çулта пулнăскер, вăл, паллах, амăшĕн пĕрремĕш пулăшуçи пулса тăнă.

Вăрçă вăхăтĕнче пурин те тăрăшса ĕçлеме тивнĕ, ĕçлемесен пĕр татăк çăкăр та алăран пырса паман. «Сирĕн те колхоз ĕçне хутшăнма тивнĕ пулĕ», – тесен, 81 çулхи ĕçпе пиçнĕ ветеран мана çапла хуравларĕ:

– Маяковский ячĕпе хисепленекен колхозра эпĕ 10 çулта вăй хума пуçларăм. Çĕрле лашасене кĕтме каяттăмăр, кăнтăрла колхоз ĕçне тухнă. 11 çулта сухапуç тытса колхоз уйĕсене сухаланă. Уйра ирччен пуçласа каçченех тар тăкнă. Питех те ывăнаттăмăр. Тăраниччен çимелĕх апат пулман, уя пире çăмах яшки пырса çитеретчĕç. Тырпула çурлапа вырнă, кĕлтесене анкартине урапапа турттарнă. Анкартинче тасатнă тĕштырăна Вăрмарти элеватора лашапа ăсатнă.

Тулли михĕсене элеватора хĕрарăмсем тата пирĕнрен аслăрах яшсем йăтса каятчĕç. Тепĕр чухне Черміш ялне çĕр выртма кĕни те пулнă. Çуллахи кунсенче уя тислĕк турттарнă, ăна салатнă, кайран каллех алла сухапуç тытса лашапа уйсене сухаланă.

Хăйĕн çамрăклăхĕ çинчен каласа пĕтернĕ хыççăн Валентин Васильевич ман çине тимлĕн пăхрĕ те калаçăва

тăсса, хамран çапларах ыйтрĕ: «Ку йывăрлăхсене эсир те курнă пулĕ?». Вара хамăн та çамрăклăх мĕнле иртни çинчен кĕскен аса илме лекрĕ:

– Вăрçă пуçланнă çул эпĕ тăваттăра пулнă. Аттене фронта пуш уйăхĕнче илсе кайнă, 1942-мĕш çулхи утă уйăхĕнче вăл атакăна кĕрсен пуçне хунă. Ун çинчен аннене «хыпарсăр çухалнă» тесе пĕлтернĕ. Вăрçăн юлашки çулĕсенче эпир, шкул ачисем, колхоз пахчинче, Энĕш шывĕ хĕрринчи лапамра купăста, кишĕр, помидор, хăяр лартса ӳстернĕ. Колхозăн хур тата сысна кĕтĕвĕсене кĕтнĕ. 7 класс пĕтернĕ хыççăн вĕренме кайма укçа, çăкăр пултăр тесе çăвĕпе пăру кĕтĕвне кĕтнĕ. 1952 çулхи авăн уйăхĕнче Çĕрпӳри педучилищĕре вĕренме пуçланă.



*Антонина Васильевна Грекова*

Ку вăхăтри йывăрлăха пирĕн тантăшсем пурте тенĕ пекех тутанса пăхнă. Пурăнас тесен ĕçлеме тивнĕ, ĕçе тухса колхозниксен списокĕнче хăвăн яту вĕçĕнче патак ларттармалла пулнă.

Валентин Васильевич Шĕнерпуç шкулĕнчи 8 класс хыççăн Çĕрпӳри библиотека техникумне пĕтерет. Унтан вĕренсе тухнă хыççăн ăна çар службине илсе каяççĕ. Служба Инçет Хĕвелтухăçĕнчи Порт-Артур хулинче иртет. Тăван киле каччă офицер званипе таврăнать.

Малтанах вăл Октябрьскинчи тата Шĕнерпуçĕнчи культура çурчĕсенче ĕçлесе хăйĕн пултарулăхне тĕрĕслет, малалла вĕренесси çинчен шухăшлать. Вара аслă пĕлӳ илме Шупашкарти педагогика институтне çул тытать. 3 курс пĕтернĕ хыççăн ĕçе пăрахмасăр вĕренме куçать. 1967-мĕш çулта диплом илет.

1967–1968-мĕш çулсенче Кĕчкейри 8 çул вĕренмелли шкулта лайăх ĕçлеме пултарнине кăтартнă хыççăн тивĕçлĕ канăва тухиччен Çичĕпӳртри, Октябрьскинчи, Шĕнерпуçĕнчи шкулсенче директор ĕçне пурнăçласа пырать. Ял хуçалăх ĕçĕпе пиçнĕ çынна парти райкомĕнче те лайăх пĕлнĕ. Çавăнпа та ăна чылай çулсем хушши «Октябрьский» совхозăн партком секретарĕ пулма шанаççĕ. «Октябрьский» совхоза малалла аталанарас тесе, В. Малининпа тата В. Ильинпа юнашар тăрса вăй хунă. Ку хуçалăх, районти ытти хуçалăхсемпе танлаштарсан, малти вырăнта тăнă.

«Валентин Васильевич, эсир 3 шкулта директор пулса ĕçленĕ. Хăш шкулĕнче ĕçленĕ чухне вĕрентекенсем, вĕренекенсем тата ашшĕ-амăшĕсем асăнмалăх пысăк ĕç туса хăварнă?» – кăсăклантăм эпĕ, мĕншĕн тесен шкул пуçлăхĕсене пĕлтерĕшлĕ ĕçшĕн хак пама хăнăхнă. Çак ыйту хыççăн вăл калаçăва çапла тăсрĕ:

«Кашни шкул директорĕ шкул ĕçне лайăхлатас тесе тăрăшать. Пĕрин вăл ĕç пулать, теприн пулмасть. Пĕтĕмпех строительство валли хатĕрленĕ документсенчен тата укçаран килет. Шкула çĕнĕ вĕренӳ çулĕ валли хатĕрлеме укçа-тенкĕ питех те сахал параççĕ. Укçа тупасси – директор ĕçĕ. Шкул çумĕнче хушма хуçалăх пулсан, унран тупăш илсен кăна укçаллă пулăн. Хальхи вăхăтра спонсорсем укça парасшăнах мар. Эпир ĕçленĕ вăхăтра та укзапа пулăшакансем пулман.

Çичĕпӳрт шкулĕнче директор пулса ĕçленĕ чухне кирпĕчрен 4 класлă çурт тата столовăй туса лартрăмăр. Çак объектсене тунă чухне М. Афанасьев прораб тата Н. Героев завхоз çине тăрса пулăшрĕç. Октябрьски шкулĕнче ĕçленĕ чухне столовăйне шыв пăрăхĕ илсе пытăмăр, «МТЗ-80» трактор туянтăмăр. Тата ытти ĕçсене те пурнăçланă, пурне те каласа пĕтерес çук.

– Валентин Васильевич, эсир мăшăрупа 3 ача пăхса ӳстернĕ. Сирĕн пирки телейлĕ мăшăр тесе калама сăлтав пур. Эсир манпа килĕшетĕр-и?



***В.В. Греков тата А.В. Грекова ачисемпе. Сулахайран сылтамалла: пĕрремеш ретре – А.В. Грекова, иккĕмĕш ретре сылтамран иккĕмĕшĕ – В.В. Греков.***

– Эпĕ сирĕнпе килĕшетĕп, анчах та мухтанса каламастăп, мĕншĕн тесен пирĕн пек мăшăрсем нумай, вĕсем те ачисемпе савăнаççĕ. Аслă хĕр, Надежда Валентиновна, Сĕнтĕрвăрри хулинче унччен вăрман техникумĕ пулнă, халĕ Атăл тăрăхĕнчи патшалăх технологи университечĕн филиалĕнче преподаватель пулса ĕçлет. Иккĕмĕш хĕр, Луиза Валентиновна, Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ, вăлах студентсемпе те ĕçлет. Ывăл, Юрий Валентинович, Зеленоград хулинчи пысăк предприятире аслă инженерта вăй хурать. Аякра пурăнаççĕ пулсан та çулталăкра пĕр хутчен те пулин пирĕн пата хăнана килсе курма тăрăшаççĕ, телефонпа çыхăну тытсах тăраççĕ, уявсемпе саламлаççĕ.

## Ĕç – вĕренме, вĕренӳ – ĕçлеме пулăшнă



*Роза Алексеевнапа Михаил Алексеевич Кармаковсен çемйи.*

«Иртнĕ вăхăтра пурнăç лайăх пулнă: укçа тӳлемесĕр вĕреннĕ, больницасенче те тӳлевсĕрех сипленнĕ», – тесе калаççĕ хăш-пĕр ватă çынсем. Кун пирки татса калама çăмăл мар, мĕншĕн тесен паянхи ватăсен укçа тӳлесе ăс пухмалли тапхăрсем пулман мар.

Акă, манăн умра Нарат Чакки ялĕнчи шкула 28 çул хушши ертсе пынă М. Кармаковăн асаилĕвĕсем выртаççĕ. Çапларах çырать вăл унта: «...Вăтам пĕлӳ илес тĕллевпе 1950-мĕш çулта Хуракассинчи вăтам пĕлӳ паракан шкула вĕренме кайрăм. Çăмăлах пулмарĕ пĕлӳ илме. Шкула эпĕ аппапа пĕрле çӳреттĕм. Вĕреннĕшĕн çулталăкра 150-шар тенкĕ тӳлеме лекнĕ. Çемьешĕн 300 тенкĕ укçа сахал мар, колхозра вара пĕр тенкĕ те ĕçлесе илеймен. Мĕнле те пулин май шырамаллаччĕ. Хĕллехи вăхăтра пĕчĕк çуна çине 20-25 килограмм çĕрулми миххисене хурса Атăл урлă каçса Звениговăна пасара сутма каяттăмăр...».

Алексей Кармаковăн çемьи 9 ачаран тăнă. Вĕсене пурне те тăхăнтармалла, апат çитермелле тата ытти енĕпе те ачасен ыйтăвĕсене тивĕçтермелле пулнă. Кинона каясси, тутлă та пылак апат-çимĕç çиесси çинчен ĕмĕтленнĕ çеç.

Мĕнле майпа укçа тунă-ха А. Кармаковăн çемьи? Кун пирки Михаил Алексеевич çапла хуравлать: «... Килте чĕрĕ кирпĕч çапма пуçларăмăр. Кăмака кирпĕчĕ çапасси – çав тери йывăр ĕç, анчах мĕн тăвăн, пурнăçĕ çапла хушнă. Çуллахи кунсенче пĕр-икĕ пине яхăн чĕрĕ кирпĕч хатĕрлеттĕмĕр. Унăн пахалăхĕ лайăх пулнăран кирпĕч илес текенсем сахал мар пулнă. Çак ĕçпеле ирĕксĕртен аппаланнă, çапла майпа укçи-тенки вĕренмешкĕн тӳлеме çиткелесе пыратчĕ».

Кăткăс килнĕ Михаил Алексеевичăн ачалăхĕ. Вăл кăна мар, çĕршер çемье йывăрлăх тӳснĕ. Чухăн пурăннă пирки чылай ача пуçламăш шкул пĕтернипех çырлахнă. Миша Кармаков вĕренес енпе питех те хастар пулнă.

«Ман умĕн çуралнă пичче-аппасем шкулта вĕреннĕ май, эпĕ пилĕк çулта чухнех кĕнекесем вулама пуçланă, задачăсем шутланă. Апла пулин те сакăр çул тултармасăр шкула йышăнман. 1943-мĕш çулта пĕрремĕш класа вĕренме кайнине халĕ те лайăх астăватăп. Пиртен çĕленĕ çĕнĕ кĕпе-йĕм тăхăннă, урана çĕнĕ тăлапа çăпата сырнă, хулпуççи урлă шур пиртен çĕленĕ сумка çакса çырма урлă ялти шкула чупнă», – аса илет ветеран.

Çамрăк чухнех пысăк пĕлӳ пухма ăнтăлнă Миша Кармаков 1958-мĕш çулта Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен физикăпа математика учительне вĕренсе пĕтерет. Юлашки экзамен тытса тухать çеç, коридорта институтăн кадрсен пайĕн инспекторĕ ăна Совет çарне каймалли повестка парать.

– 1956-мĕш çулхи утă уйăхĕ вĕçнелле Шупашкартан 200 çамрăк (ку шутра techинститутри 60 студент) Алтай крайне вăйлă çитĕннĕ тырра пуçтарма тухса кайнă. Пĕр гектартан вăтамран 30-40 центнер тырă




***В.В. Греков, Н.И. Иванов, М.А. Кармаков, В.В. Яковлев.***

пухса илнĕ. Эпĕ комбайнер çумĕ пулса тăрăшрăм. Ирхине 6 сехетрен пуçласа каçхине 10 сехетчен уйра ĕçленĕ. Тăрăшулăхшăн мана Хисеп грамотипе чысларĕç, «За освоение целинных и новых земель» кăкăр çине çакмалли значок пачĕç, – калаçу çăмхине малалла тăсать Михаил Алексеевич.

1957-мĕш çулхине Михаил Алексеевич каллех Алтай крайне тырпул пухма тухса кайнă. Ку хутĕнче вăл студентсен бригадине ертсе пынă, ĕçре палăрнăшăн ăна «За освоение целинных и залежных земель» медаль парса наградăланă.

Çапла, пурнăç тăвас, тулăх пурăнас тесе тăрăшнă вăл. Çар службинче пулнă чухне хăй тĕллĕн хатĕрленсе Иркутскри çыхăну çар училищине пĕтерсе офицер ятне илет.

Çар службине вĕçлесе яла 1961-мĕш çулхи пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче çитет. Малтанах Кушникри 7 çул вĕренмелли шкулта физикăпа математика учителĕнче çулталăк ытларах ĕçлет, унтан Хуракассинчи вăтам

шкул директорĕн çумĕнче 3 çула яхăн вăй хурать. Çак шкул директорĕн ĕçĕсене те çулталăк ытларах туса пырать, 5 çул хушши шкул директорĕн класс тата шкул тулашĕнчи ĕçсемпе тăрăшакан çумĕ пулса хăйĕн пултарулăхне кăтартать. 1974-мĕш çулхи çурла уйăхĕнчен пуçласа 2002-мĕш çулхи çурла уйăхĕ пĕтиччен Нарат Чаккинчи шкул директорĕнче ачасене вĕрентес, воспитани парас, шкул ĕçне йĕркеллĕ тытса пырас, учительсене куллен-кун пулăшас тĕлĕшпе пĕтĕм вăйне парса тăрăшать.



***Нарат Чакки хорĕн хастарĕсем: Михаил Алексеевич, Алексей ывăлĕ, Роза Алексеевна Кармаковсем.***

Çакна пурте курнă, асăрханă, туйнă: учительсем те, шкул ачисем те, ял çыннисем те, районти тата Вĕрентӳ министерствинчи пуçлăхсем те. Агитатор, пропагандист пулнă май, районти тата республикăри парти руководителĕсем те лайăх пĕлнĕ ăна, унăн ĕçне пысăка хурса хакланă. Килти архивра упранакан Хисеп хучĕсен шучĕ те çук темелле.

Михаил Алексеевич правительство наградисене те тивĕçнĕ. 1970 çулта ăна «За доблестный труд. В ознаменование 100-летия со дня рождения В.И. Ленина» медальпе наградăланă. 1982-мĕш çулта «Отличник на-

родного просвещения» ятне илет. 1985-мĕш çулта «Ветеран труда» ятне тивĕçлĕ пулать. 1999-мĕш çулта Чăваш патшалăх Канашĕ ăна «За многолетний добросовестный труд в области образования и воспитания подрастающего поколения» Хисеплĕ грамота парса чыслать.

1979-мĕш çулта марксизм-ленинизм университетне пилĕк паллăсемпе пĕтерет.

Унăн арăмĕ, Роза Алексеевна, пенсие тухиччченех Нарат Чакки ялĕнчи фельдшерпа акушер пунктне ертсе пынă. Тăрăшса ĕçленĕ. Вăл 1983 çулта «Отличник здравоохранения СССР» тата ытти çулсенче «Победитель социалистического соревнования» ячĕсене тивĕçлĕ пулнă.

Пенси çулне çитсен те канăç пулман Михаил Алексеевичăн. 2005-мĕш çулта кăна вăл тивĕçлĕ канăва каять. Мăшăрĕпе, Роза Алексеевнăпа, хăйсен вăйĕпе çавăрнă хуçалăха типтерлĕ тытса пыраççĕ. Ачисем вĕренсе специальность илнĕ хыççăн килтен тухса кайнă, мăшăрланнă, ĕçлеççĕ, ашшĕ-амăшĕ патне часчасах килсе çӳреççĕ.

Мăнуксемлĕ пулнă Михаил Алексеевич обществăлла ĕçе çав-çавах активлă хутшăнать-ха. Ял тата район Совечĕсен депутачĕ пулма тивĕçнĕскер – ялти хор ветеранĕ (иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче ăна хор ертӳçи пулнă А. Петров хăй чĕнсе илнĕ пулнă), концертпа яланах çула тухма хатĕр ĕç «салтакĕ».

## Тулӑх пурнӑҫ – вӗренӳпе ӗҫре



*Юлия Егорова (Алаева)*

Пӗр ача та ҫуралсассӑн хӑй телейлӗ е телейсӗр пуласса пӗлмест. Ашшӗ-амӑшӗ тӗрӗс воспитани парса пӑхса ӳстерсессӗн кӑна ача ҫитӗннӗҫемӗн телейлӗ е телейсӗр пулнине туйса илме, ӑнланма тытӑнать. Юлия Семеновнӑн пурнӑҫӗ те вӑл вӑхӑтри ҫысенчен уйрӑлса тӑмасть. Халӗ вӑл тивӗҫлӗ канура. Хӑйне телейлӗ тесе шутлать. Малтанах калатӑп: вӑл агроном, педагог тата Карапаш ял хутлӑхӗн администрацийӗнче чылай ҫул хушши вӑй хурса ӗҫленӗ специалист.

Халӗ Юлия Семеновнӑпа тӗплӗнрех паллашма вӑхӑт ҫитрӗ. Юля Карапашра (Анатри Карапаш) 1957-мӗш ҫулхи ака уйӑхӗн 12-мӗш кунӗнче нумай ачаллӑ ҫемьере кун ҫути курнӑ. Вӑл ҫуралсассӑн ҫемьери ачасен шучӗ 10 ҫитнӗ. Ашшӗ-амӑшӗ малтан колхозра, кайран «Аксаринский» совхозра рабочисем пулса ӗҫленӗ. Килти хуҫалӑха тытса пынӑ.

Анна Ивановнӑн чылай ача пулнӑ пулсан та производствӑра ӗҫлеме тӑрӑшнӑ. Ӗҫе тухса кайнӑ чухне пӗчӗк ачисене пӑхма аслӑ ачисене хушса хӑварнӑ. Юля ҫуралнӑ хыҫҫӑн ӑна «Мать-героиня» хисеплӗ ят панӑ. Вӑл ҫураличчен Вася ятлӑ чи аслӑ пиччӗшӗ ҫемьеллӗ пулнӑ, Галя-Валя (йӗкӗрешсем) те хӑйсем валли мӑшӑрсем тупнӑ. Вӗсем иккӗшӗ те Истерекасси ялӗнче пурӑнакан Юрий тата Николай каччӑсене юратнӑ, вӗсен арӑмӗсем пулма килӗшнӗ. Галя-Валя (вӗсене ялта ҫапла чӗнеҫҫӗ) 7 класс кӑна пӗтернӗ, колхозра (кайран

совхозра) вăй питти çынсемпе юнашар тăрса ĕçленĕ, каярахпа Саратов облаçĕнчи пĕр хуçалăхра доярка та пулса ĕçленĕ. Качча тухсан тăван ялта (Истерекассинче) тĕпленсе пурăнма тытăннă.

Юля шкула кайиччене вуланă, çырнă, юрлама, ташлама вĕреннĕ, мĕншĕн тесен унран аслăрах аппăшĕсем (Аля, Римма, Тамара, Зоя), пиччĕшĕсем (Веня, Алеша) пурте шкулта вĕреннĕ. Вĕсемпе юнашар ларса вуланă, ӳкернĕ, çырнă. Шкул çулне çитиччене шкула çӳрес шухăш та пулнă, анчах ăна вăхăт çитмен тесе вĕренме йышăнман.

1964-мĕш çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕуншăн уяв пулса тăнă, тинех Юля сумка çакнă та Карапашри пуçламăш шкула вĕренме тухса кайнă. Шкулта ăна ăс-тăн паракан, вулама, çырма вĕрентекен учительница Ксения Николаевна пулнă. Шкулта хĕрача çăмăллăн вĕреннĕ, пур предметпа та «5» паллăсем илнĕ. Пуçламăш класра вĕреннĕ чухнех хăйĕн тантăшĕсемшĕн ырă тĕслĕх вырăнĕнче пулнă, чылайăшĕ ун пек лайăх вĕренме тăрăшнă.

Карапашри пуçламăш шкула лайăх паллăсемпе пĕтернĕ хыççăн пĕлӳ пухма Кĕчкейри 8 çул вĕренмелли шкула тăватă çул хушши Карапашран тарăн çырма урлă каçса çӳренĕ. Шкулта тăрăшса вĕреннĕ, обществăлла ĕçсене активлă хутшăннă, унăн авторитечĕ кунран кун ӳссе пынă. Ăна шкулти пионерсен Совечĕн председательне суйлаççĕ, комсомола кĕнĕ хыççăн комсомол организацине ертсе пыма шанаççĕ. Шанса панă ĕçе вăл чыслăн пурнăçласа пынă, шкул ачисемшĕн пур енлĕ лайăх тĕслĕх пулнă: вĕренессипе те, обществăллă ĕçе туса пырассипе те, художествăлă пултарулăх коллективĕнче те, физкультурăпа спорт енĕпе ирттерекен мероприятисенче те. Тĕрлĕрен ăмăртăва хутшăнса шкул ятне хӳтĕленĕ. Аппăшĕсемпе юнашар ларса малалла вĕренме пĕлӳ пухнă. Вăл Кĕчкей шкулĕнче вĕреннĕ чухне Аляпа Римма аппăшĕсем И.Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика институтĕнче ăс пухнă. Шкулта вĕсене юрлама М.А. Зарубина, ташлама В.Ф. Сударкина вĕрентнĕ.





***Анна Ивановна Алаева*** ***Валентина Ташкова (Алаева)***



***Николайпа Алефтина Ивановсем***

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан Кĕчкен шкулĕнче пур предметпа та лайăх пĕлӳсем илнĕ хыççăн Юлия Алаева алла свидетельство тытса Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумне çул тытать. Ку вăхăтра çак вĕренӳ заведенийĕнче унăн аппăшĕ Зоя вĕреннĕ. Вĕсем пĕр хваттере пурăнма вырнаçаççĕ. Тăван ялне иккĕшĕ пĕрле çӳренĕ. Ашшĕ-амăшĕ студентсене хапăлласа кĕтсе илнĕ, кутамкасене апат-çимĕç тултарса парса янă. Ку техникумра Юлия электрификаци уйрăмĕнче пĕлӳсем илнĕ, лайăх специалист пулма тăрăшнă. Техникумра вĕренӳре те, ĕçре те хăйĕн пултрулăхне кăтартнă, тантăшĕсем хушшинче авторитетлă вĕренекен пулса тăнă. Çакăнта та ăна пысăк тата ответлă ĕç – комсомол организацийĕн секретарĕ ĕçне шанса панă. Çак ĕçе вăл чыслăн туса пынă, вĕренӳре те, художествăлла пултарулăх коллективĕнче юрлассипе, ташлассипе те, спортпа физкультурăра та пуриншĕн те тĕслĕх пулнă. Йĕлтĕрпе чупассипе 2-мĕш разряд нормине тултарнă. Техникум чысне тĕрлĕрен ăмăртăва хутшăнса хӳтĕленĕ. Ăна темиçе хутчен те грамотасем парса хавхалантарнă, чысланă. Çапла, çулран çул Юля Алаева пур енĕпе те аталанса пынă, тĕрĕс пурнăç çулĕпе утнă. Вĕренме те, ĕçлеме те кахалланман. Киле кайсассăн ашшĕ-амăшне пулăшнă, çуллахи вăхăтра совхозра ĕçленĕ.

1974-мĕш çулта электрификаци уйрăмне пĕтернĕ çамрăк специалист алла диплом илсе техникумпа сывпуллашать, çурла уйăхĕнче направлени илсе Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Звезда» совхоз директорĕ Л.Б. Гусаров патне ĕçе вырнаçма кабинета кĕрет. Совхоз ертӳçи ăна «инженер по технике труда и технике безопасности» пулма приказ çырса ĕçе илет. Юлия Семеновна инженер пулса ĕçе тытăнать. Пултаруллă специалиста совхоз директорĕ те, партком секретарĕ те асăрханă. Ку хуçалăхра та ăна комсомол организацийĕн секретарне суйлаççĕ. Кĕчкей шкулĕнче, Çĕрпӳри техникумра юрланă-ташланăскер кунта та сценăна манман. Районта кăна мар, республикăри ялсене те концертсемпе тухса çӳренĕ, ытти комсомолецсене лайăх тĕслĕх панă.



***Римма Данилова (Алаева)***



***Алефтина Иванова (Алаева)***



***Тамара Васильева (Алаева)***



***Зоя Голомидова (Алаева)***

Ĕçри хастарлăхшăн ăна темиçе хутчен Хисеп грмотисем панă. «Социализмла ăмăрту çĕнтерӳçи» ятне илме тивĕçлĕ пулнă. Юлия Семеновнăн ĕçсем ăнса пынă, пĕрле ĕçлекенсем ăна хисепленĕ, юратнĕ. Ĕçленĕ хушăрах вăл малалла вĕренессине пуçран кăларса пăрахма пултарайман. Çавăнпа та 2,5 çул ĕçленĕ хыççăн малалла вĕренме каять. Ăна районти комсомол организацийĕн инструкторĕ пулма сĕннĕ пулсан та, пысăк опытпа тата ĕçре практика енĕпе пуянланнă специалист Чăваш патшалăхĕн ялхуçалăх институтне вĕренме кĕрет. Ку института 1983-мĕш çулта хĕрлĕ дипломпа ученый-агроном ятне илсе вĕренсе тухать. Институтра мĕнле обществăлла ĕçсем туса пынине каласа та, çырса та пĕтерес çук: хăй вĕреннĕ группăра староста тата комсомол организацийĕн секретарĕ, институтри комсомол организацийĕн вĕренӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен комисси членĕ. Çуллахи каникул вăхăтĕнче студентсен строительство отрячĕсемпе районсене, урăх регионсене тухса кайнă. Унăн лайăх ĕçне кура комсомолăн Шупашкарти хула комитечĕ Хисеп грамотипе наградăланă. Институтра вĕреннĕ чухне пĕр курсра вĕренекен Слава (В.Н. Артемьев) каччăпа паллашнă, унпа туслашнă. 1983-мĕш çулта институт пĕтернĕ хыççăн çамрăк мăшăрсем направленипе «Аксаринский» совхоза килеççĕ. Вячеслав Николаевич ку хуçалăхра тĕп агроном пулса ĕçлеме тытăнать, Юлия Семеновна – хăмла туса илес енĕпе тăрăшать. Çамрăк специалистсене совхоз хваттер уйăрса панă. Анчах та вĕсен пурнăçĕ çирĕпленеймен, çемьи арканса каять. «Карабашский» совхоз тунă хыççăн Юлия Семеновна çак совхоза кадрсен пайĕн инспекторĕ пулса ĕçлеме тытăнать. Анчах та ку должноçре нумай ларман, мĕншĕн тесен вăл преподаватель (педагог) пуласшăн пулнă, Мускаври К.А. Тимирязев ячĕллĕ ялхуçалăх академине кайма шут тытнă. Ку вĕренӳ заведенине вĕренме кайиччен учитель пулатрулăхне Кĕçĕн Ăстакассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулта биологипе хими учителĕ пулса тĕрĕслет. Пĕр вĕренӳ çулĕ хыççăн Мускава вĕренме тухса каять. Ку академинче 5 çул педагогика

факультетӗнче пӗлӳсем илет. 1989-мӗш ҫулта «Преподаватель сельскохозяйственных техникумов по агрономическим дисциплинам» специальноҫе алла илсе хӗрлӗ дипломпа академи пӗтерет. Академире вӗреннӗ чухне Юлия Семеновнăна Анапăри ялхуҫалăх техникумне практикăна янă, академи вӗренсе пӗтерсен вăл ҫав техникумах ӗҫлеме кайнă. Анчах та ку вӗренӳ заведенинче ҫамрăк преподаватель нумай вăхăт хушши ӗҫлеймен, амăшӗ чирленӗ пирки тăван яла таврăнма тивнӗ. Яла килсен «Карабашский» совхозра тӗп агроном тата экономист пулса пӗтӗм вăя парса ӗҫленӗ. Пенсие тухиччен ку хуҫалăхра ӗҫлеме май килмен, мӗншӗн тесен совхоз арканса кайнă. 1994-мӗш ҫултан пуҫласа мӗн пенсие тухиччених Карапашри ял хутлăхӗнче специалист пулса ӗҫленӗ. Ӗҫленӗ вăхăтра обществăлла ӗҫсене хутшăннă, тӗрлӗрен парнесене тивӗҫнӗ. Хальхи вăхăтра Юлия Семеновна тивӗҫлӗ канура.

Карапаш (Анатри Карапаш) ялӗнче илемлӗхӗпе, тасалăхӗпе палăракан шурă кирпӗчрен купаланă пӗр хутлă ҫуртра пултаруллă та ӗҫчен пенсионерка Юлия Семеновна пурăнать. Хуҫалăхӗ унăн пысăк. Ӗне те пур, чăх-чӗпсем те тытать. Пӗччен пурăнать пулсан та хăйне кичем туймасть, мӗншӗн тесен ун патне тăванӗсем пырса кураҫҫӗ, ӗҫ тума пулăшаҫҫӗ, кашни кун тенӗ пекех ăҫтан та пулсан телефон шăнкăравӗсем килеҫҫӗ. Унăн тăванӗсем Волгоград, Саратов облаҫӗсенче, Шупашкарта, Ҫӗнӗ Шупашкарта, Сӗнтӗрвăрри районӗнчи тӗрлӗ ялсенче пурăнаҫҫӗ. Кашни шăматкун тенӗ пекех ун патне хăнасем килеҫҫӗ, тăванӗсемпе пӗрле кӗреке хушшинче ларса чуна лăплантарать, вӗсемпе савăнать.

Ялта Юлия Семеновна пек нумай вӗреннӗ ҫын шутра. Ӗмӗр тăршшӗпе ăс пухнăран ăна ӗҫлеме те ҫăмăл пулнă. Шанса панă ӗҫсене вăл тӗрӗс, тӗплӗн тата вăхăтра туса пыма тăрăшнă. Ҫынсемпе кăмăллă, сăпайлă пулнă. Ҫавăнпа ăна та ял хутлăхӗнчи ҫынсем юратаҫҫӗ, хисеплеҫҫӗ, хумхантаракан шухăшсемпе вакланаҫҫӗ, тӗрӗс явап илме тата илессе шанаҫҫӗ.

Юлия Семеновна хальхи пурнăҫ ăсталăхран, пултарулăхран килет тет. Эпӗ вăл каланипе килӗшетӗп.

# ХАЛĂХ ПУЛТАРУЛĂХНЕ АТАЛАНТАРАС ĔÇРЕ ПАЛĂРНĂ

## Вăл ăста педагог, талантлă композитор пулнă



*Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ искусство ĕçченĕ А.Н. Тогаев*

2012-мĕш çулхи çу уйăхĕн 2-мĕш кунĕнче Чăваш Республикин искусство тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, паллă композитор, дирижер, музыкант, педагог Анатолий Николаевич Тогаев çуралнăранпа 128 çул иртрĕ. Вăл 1884-мĕш çулхи çу уйăхĕн 2-мĕшĕнче кун çути курнă.

А. Тогаев пирĕн районти тава тивĕçлĕ çынсенчен пĕри. Вăл Сĕнтĕрвăрри районĕнче хор искусствине, музыкăлла культурăна аталантарас енĕпе сахал мар ырă ĕç тунă. Кунти халăха юрăсемпе савăнтарас, культурăллă кантарас тата музыкăна юратма, ăна тăнлама, ăнланма вĕрентес енĕпе 42 çул хушши ырми-канми ĕçленĕ.

Анатолий Николаевич музыкăна ăнланакан тата пĕлекен çемьере çуралнă. Унăн çуралнă ялĕ – Шурчекасси. Тăватă класс пĕтернĕ хыççăн Шупашкарти хула училищине пĕлӳ пухма кайнă та унтан 1903-мĕш çулта вĕренсе тухнă.

Анатолий Николаевич музыкăна юратнипе ача чухнех ашшĕ-амăшĕнчен сĕрме купăс илсе пама ыйтнă. Вăл ыйтнине амăшĕ вăраха ямасăр тивĕçтернĕ. 6 çулхи ача сĕрме купăспа калама тытăннă, килти оркестра ăна



*А.Н. Тогаев тата А.Я. Эшпай*

çак инструментпа выляма йышăннă. Сĕрме купăса вăл виличченех алран яман: хорсене юрлаттарнă, сĕрме купăспа калама вĕренме пынă çынсене вĕрентнĕ.

Сĕнтĕрвăрри хулинче, Ăстакасси, Макаçкасси, Нарат Чакки ялĕсенчи 80 çултан иртнĕ ватă çынсем ăна халĕ те, хорсем çинчен сăмах тапратсан, ăшшăн аса илеççĕ, ун çинчен ырăпа калаçаççĕ. Ăстакассипе Нарат Чаккине тепĕр чухне хăйĕн тусĕ – Арсентий Петрович чĕннипе те çитнĕ вăл, ăна усăллă сĕнӳсем парса пулăшнă. Уйрăмах А. Тогаева Макаçкасси ялĕнче хора юрлама çӳренĕ çынсем час-часах аса илеççĕ. Унăн сăнӳкерчĕкне кăтартсан палласа илеççĕ. Ăна 100 çултан иртнĕ Феодосия Константиновна Софронова та аса илсе пурăннă. Анатолий Николаевич ăна çураçнă хĕр тумтирне тăхăнтарса Мускавран этнографи институтĕнчен ятарласа яла çитнĕ специалистсем валли ӳкерĕнсе илме хушнă. Вăл килĕшнĕ. Вара çав сăнӳкерчĕке «Крестьянка» журналăн хуплашки çинче çаптарса кăларнă.



***«Портной» артелĕн хорĕ. 1937 çул.***

– Халĕ эпĕ хитре мар, ун чухне мана пурте хитре тетчĕç, – каласа панăччĕ мана Феодосия Константиновна кăшт куларах.

Анатолий Николаевич Сĕнтĕрвăрри хулинчи чылай вĕренӳ заведенийĕсен, предприятисен хор коллективĕсене ертсе пынă. Çавсенчен «Портной» артельте ĕçлекен хĕрарăмсен хорĕ уйрăмах чапа тухнă. Ку хорпа вăл Чулхулана та, Шупашкара та пĕрре çеç мар кайнă.

Чи пултаруллă коллективсенчен пĕри – Макаçкасси хор коллективĕ. Çав хорпа Анатолий Николаевич Мускава та, Чулхулана та, Шупашкара та смотрсене, олимпиадăсене кайнă, час-часах пĕрремĕш вырăн йышăнса килнĕ. Юрăсене Мускавра та çырса илнĕ, тепĕр чухне вĕсене «Россия» е «Маяк» радиостанцисем урлă халăха итлеттернĕ.

2012-мĕш çулта Анатолий Николаевич çуралнăранпа 128 çул çитрĕ. Ман шутпа, вăл чăннипех те

мухтава тата тава тивĕçлĕ çын пулнă. Хальхи вăхăтра пирĕн тăрăхра ун пек пуçаруллă специалист çук-ха тесе каласан та йăнăш пулмасть пулĕ. Вăл музыка енĕпе аслă пĕлӳ илнĕ çын мар. Хăйĕн пĕлĕвĕсене ӳстерме Мускава тата Шупашкара курссене çеç кайнă. Ашшĕпе амăшĕ панă таланта халăх хушшинче ĕçлесе, хăй çине тăнипе аталантарса пынă. Хăй вăхăтĕнче Анатолий Николаевич пирĕн Чăваш Республикине, Сĕнтĕрвăрри хулине, районне çӳллĕ шая хăпартнă. Унăн çитĕнĕвĕсемпе, пултарулăхĕпе чăваш халăхĕ пирĕн район çыннисемпе пĕрле савăннă, мухтаннă.

Ман шутпа, çак пултаруллă çын манми хисепе тивĕç. Район тата республика халăхĕ умĕнче тава тивĕçлĕ ĕçсемпе палăрнишĕн, музыка культурине, хор искусствине аталантарас енĕпе паллă ĕçсем тунăшăн Анатолий Тогаев 130 çул тултарнă юбилей кунĕ валли хулари 1-мĕш гимнази çине мемориал хăмине вырнаçтарсан лайăх пулĕччĕ.

Пултаруллă та талантлă композитор 1976-мĕш çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче вилнĕ. Ăна Сĕнтĕрвăрри хулин масарĕ çине пытарнă.

## Опера театрĕн солисчĕ



*М.Ф. Кольцов*

1976-мĕш çулхи çуркунне Шупашкарти чылай вырăнсенче ака уйăхĕн 14-мĕшĕнче Ф.П. Павлов ячĕпе хисепленекен музыка училищинче Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ артисчĕ Михаил Федорович Кольцов концерт парасси çинчен пĕлтернĕ. Концерчĕ палăртнă кун училищĕн концерт залĕнче иртнĕ, унăн 2-мĕш пайĕнче М. Кольцов 9 юрă юрласа панă, вĕсенчен 5-шне – чăвашла, 4-шне – вырăсла (А. Асламасăн «Чăвашсен кĕреке юрри», Ф. Васильевăн «Пире вăрçă кирлĕ мар», Ф.Лукинăн «Тăван хула çинчен хунă юрă» тата ытти композиторсен юррисем). Халăх М. Кольцова ыррăн кĕтсе илнĕ, тăвăллăн алă çупнă.

Михаил Федорович Кольцов çинчен районта кăна мар, Нарат Чакки ялĕнче пурăнакан çынсем те пĕлсех каймаççĕ. Ял историне çыракансем çеç чухлаççĕ. Кам-ха вăл, Кольцов Михаил Федорович?

Вăл Нарат Чаккинче вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Ялти пуçламăш шкула 8 çулта вĕренме кайнă. Ăна ăнăçлă пĕтернĕ хыççăн 1924-мĕш çултах Сĕнтĕрвăрри хулинчи II ступеньлĕ шкула пĕтернĕ хыççăн малалла вĕренме шут тытнă. 1928-мĕш çулта Мускаври çĕр йĕркелĕвĕн институтне вĕренме кĕнĕ. Хăйĕн биографийĕнче Михаил Федорович Нарат Чакки хорĕнче юрлани çинчен пĕр сăмах та çырмасть, мĕншĕн тесен унăн хора çӳреме вăхăт пулман.

1931-мӗш ҫулта институт пӗтернӗ хыҫҫӑн Шупашкарти «Чувашнаркомзема» прорабран пуҫласа ҫӗр йӗркелӳ отрячӗн начальникне ҫитет. Ӑна ӗҫ килӗшнӗ, анчах та унӑн юрлас кӑмӑлӗ те, пултарулӑхӗ те пысӑк пулнӑ. Ҫакна вӑл путарса лартма пултарайман.

1937-мӗш ҫулта Шупашкарти музыка училищине юрӑҫсем хатӗрлекен уйрӑма вӗренме кӗрет. Вӗренӳ уншӑн ӑнӑҫлӑ пулса пырать, анчах та 1941-мӗш ҫулта фашистла Германи Совет Союзӗ ҫине вӑрҫӑпа тапӑнса кӗрет. Ҫак тапхӑрта училищӗне хупаҫҫӗ. Вара Михаил Кольцов Чӑваш патшалӑх филармонине артист пулса ӗҫлеме куҫать. Нумаях та ӗҫлеймест, чӳк уйӑхӗнче ӑна вӑрҫа илсе каяҫҫӗ.

Вӑрҫӑран таврӑнсан 1946-мӗш ҫулхи ҫу уйӑхӗнче Чӑваш радио комитетӗнчи ансамбль солисчӗ пулса ӗҫлеме тытӑнать, ҫав вӑхӑтрах Шупашкарти музыка училищинче малалла вӗренет. 1947-мӗш ҫулта Хусанти юрӑҫсем (вокалистсем) хатӗрлекен факультетра пӗлӳ пухать. Ҫак факультета «5» паллӑсемпе ҫеҫ пӗтерет. 1952-мӗш ҫулта консерватори хыҫҫӑн Новосибирскри оперӑпа балет театрӗн солисчӗ пулса ӗҫлеме тытӑнать. Унта 8 ҫул тӑрӑшсан, 1960-мӗш ҫулхи кӑрлач уйӑхӗнче Саратоври оперӑпа балет театрне ӗҫлеме куҫать. Кунта вӑл ҫулталӑк ҫурӑ ҫеҫ вӑй хурать.

1961-мӗш ҫулта Хусанти консерваторине аслӑ преподавателе вырнаҫать. Кунта мӗн пенсие тухиччене ӗҫлет. Тивӗҫлӗ канӑва 1984 ҫулхи юпа уйӑхӗнче тухать.

Хусанта ӗҫленӗ чухне Шупашкара килсе час-часах концертсемпе савӑнтарнӑ. Ӑна Чӑваш АССРӗн тава тивӗҫлӗ артисчӗ ят панӑ. Унӑн вӑрҫӑ медалӗсем те пур. Арӑмӗ – Любовь Александровна Хусанта медицина институтӗнче ӗҫленӗ. Вӗсен хӗрӗ, Надежда, Хусанта пурӑннӑ, анчах та 1987 ҫулта автоаварире вилнӗ.

Паянхи кун М. Кольцов пирӗн хушӑра ҫук ӗнтӗ, вӑл ҫут тӗнчерен 1988 ҫулта уйрӑлса кайнӑ.

## Хастарлă та пултаруллă ертӳçĕ



*В.М. Галкина*

Хăйĕн ĕçĕпе çын мăнаçлăн курăнать тата мухтава тивĕçлĕ пулса тăрать. Ку ырă сăмахсене эпĕ Валентина Митрофановна ячĕпе каласшăн.

В. Галкина – пултаруллă хор ертӳçи, халăх культурине малалла аталантарас енĕпе тăрăшса ĕçленĕскер. Вăл 1927 çулхи çурла уйăхĕн 15-мĕшĕнче Нарат Чакки ялĕнче Митрофан Сергеевичпа Лукерия Павловна Шароновсен çемйинче çуралнă. Хăйĕн ачалăхĕ тата çамрăклăхĕ çинчен Валентина Митрофановна çапла каласа кăтартрĕ:

– Тăван ялта, Нарат Чаккинче, эпĕ вунă çул тултариччен кăна пурăннă. 1937-мĕш çулта çемйипех Мари Республикине куçса кайрăмăр. Вăрçă пуçлансан атте фронта тухса кайрĕ. Çемьере мансăр пуçне тата 4 ача, тăваттăшĕ те манран кĕçĕнрех. Мĕн тăвăн, ирĕксĕрех вĕренме пăрахса ĕçе кӳлĕнме тиврĕ. Çапла эпĕ, вунтăваттăри хĕрача, рабочи пулса тăтăм. Тимлĕ ĕçленине кура-и, çичĕ çул вĕреннĕскер тесе-и, тăватпилĕк уйăхранах мана теçетнике куçарчĕç. 1945 çулччене тăрăшрăм вара çак ĕçре. Крым тутарĕсемпе пĕрле шартлама сивĕ-и, йĕпе-сапа-и – пăхса тăмасттăмăр, «йăлт фронт валли, йăлт çĕнтерӳшĕн» тесе тĕрмешеттĕмĕр, кĕреш хырсене пăчкăпа касса йăвантараттăмăр та туратсене иртсе таса пĕренесене Кокшага шывĕ хĕррине туртараттăмăр, унтан вĕсене шыв тăрăх Атăла кăларатчĕç.

Валентина ашшĕ вăрçăран таврăнсан, 1946 çулта Шароновсен çемйи Сĕнтĕрвăррине куçса килет. Ĕçпе пиçсе çитнĕ Валя ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлекен Сĕнтĕрвăрринчи кантурĕнче агент пулса ĕçлеме вырнаçать. Каçпа пушă вăхăтра А. Тогаев ертсе пыракан хора юрлама çӳрет. Сасси вăйлă пулнăран вăл унта солист пулса тăрать. Пĕррехинче çак илемлĕ сасăллă хĕре А. Тогаев музыка енĕпе малалла вĕренме кайма сĕнет. Валя кун пек канаш панăшăн савăнса каять, вăл каланине пурнăçлама тăрăшать.


***В. Шаронова*** (***Галкина***)

1947 çулхи авăн уйăхĕнче Нарат Чакки хĕрĕ Шупашкар музыка училищинче вĕренме тытăнать. Иккĕмĕш курсра чухнех Шупашкарти ултă предприятире пултарулăх коллективĕсем йĕркелет, вĕсене вăл училищĕрен вĕренсе тухичченех ертсе пырать. 1952-мĕш çулта хор руководителĕ тата пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулти музыка учителĕ специальноçе алла илет. Диплом илнĕ хыççăн ăна Шупашкарти пионерсен Керменĕн директорĕ хăй патне коллективăн пултарулăх ертӳçи пулма илсе каять. Кунта Валентина Митрофановна 350 шкул ачинчен тăракан хор йĕркелет, тепĕр икĕ çултан ăна «Ансамбль песни и танца при Чебоксарском Дворце пионеров» ят параççĕ.

Каярах Валентина Митрофановна Шупашкарти пионерсен Керменĕпе музыка училищин директорĕ, хула Канашĕн ĕçтăвкомĕн культура пайĕн ертӳçи пулса тăрать.



*В.М. Галкина ӗҫре.*

Темиҫе хутчен те ӑна тӗп хулан халӑх депутатне суйланӑ. Ӗҫ нумайӑшне пӑхмасӑр вӑл Чӑваш патшалӑх университетне вӗренсе пӗтерет. Ку ҫитӗнӳсем мӑшӑрӗ, Александр Алексеевич Галкин поэт пулӑшмасӑр пулман ӗнтӗ.

Чун-чӗререн тӑрӑшса, пӗтӗм вӑйа хурса ӗҫленӗшӗн, ҫамрӑк ӑрӑва тӗрӗс воспитани панӑшӑн тата музыка кадрӗсене лайӑх вӗрентсе хатӗрленӗшӗн В. Галкина нумай парнесене, хисеплӗ ятсене тата чыссене тивӗҫнӗ.

Юрӑсӑр, юрӑ коллективӗсӗр Валентина Митрофановна пурӑнма пултарайман.

Хӑй йӗркелесе янӑ «Нарспи» ансамблӗн фольклор ушкӑнӗпе вӑл 1973 ҫулта Ирландие пӗтӗм тӗнчери фольклор фестивальне те кайса килет. Чӑваш Республикинчен ют ҫӗршыва тухса каякан пултарулӑх коллективӗсенчен пӗрремӗш пулать.

1977-мӗш ҫулта В. Галкина 50 ҫул тултарнине хавалласа унӑн ятне Шупашкар хулин юбилей кӗнеки ҫине ҫырса хунӑ.

Хальхи вӑхӑтра Валентина Митрофановна Шупашкарта пурӑнать. Мӑшӑрӗ, Александр Алексеевич, 2002 ҫулта ҫут тӗнчерен уйрӑлнӑ. Ку вӑл Галкинсен ҫемйишӗн пысӑк ҫухату пулнӑ.

2011 ҫулхи пуш уйӑхӗнче 56 ҫулхи Владимир ывӑлӗ чӗре чирӗпе вилсе кайрӗ. Нумай вӑхӑт та иртмерӗ – Валентина Митрофановнӑн 34-ри Саша мӑнукӗ ҫут тӗнчерен уйрӑлса кайрӗ. Хӑйӗн ҫемйине тӑлӑха хӑварчӗ.



***Вальăпа Саша Галкинсем***

2012 çулхи çурла уйăхĕнче Валентина Митрофановна 85 çул тултарчĕ, çав ятпа юлташĕсем, тусĕсем, тăванĕсем тата пĕрле ĕçленĕ çынсем ăна çак юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшă сăмахсем каласа савăнтарчĕç тата нумай çул пурăнма таса сывлăх сунчĕç.

## Чăваш халăх артистки



***Чăваш халăх артистки Тамара Гурьева***

«Тамара, санăн юрлама вĕренме каймалла, тесе калатчĕ Октябрьски шкулĕнчи музыка учителĕ Петр Петрович Шоркин. Вăл каланисем халĕ те манăн пуçран тухмаççĕ. Анчах шкул пĕтернĕ хыççăн Шупашкара музыка училищине вĕренме кайма май килмерĕ. Манăн ун чухне Çĕнĕ Шупашкарти 9-мĕш техника училищине кайма тиврĕ. Кунта та пултарулăх коллективĕ пурччĕ, эпĕ унта юрлама пуçларăм. Эпĕ илемлĕ юрланине комсомол организацийĕн секретарĕ Т. Кудряшова асăрханă пулнă», – çапла хуравларĕ хăй çинчен Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тата халăх артиски Т.И. Гурьева.

Калаçăва малалла тăснă май, Тамара Изосимовна ăна тусĕ мĕнле лăплантарни çинчен те каларĕ:

– Тамара, ан кулян, эсĕ пурпĕрех артистка пулатăн, кунта вĕренсе пĕтер-ха, вара музыка училищине каятăн, – тесе канаш пачĕ Т. Кудряшова.

Вĕренӳ çулĕ вĕçленсе пырать. Пĕррехинче Тамара Кудряшова ман пата пычĕ те:

– Тамара, хатĕр пул, ыран эпир санпа Ф. Павлов ячĕллĕ музыка училищине экзаменсем тытма каятпăр, – терĕ.

Мана музыка училищине илчĕç. 1969 çулхи авăн уйăхĕнче унта вĕренме пуçларăм. Атте, Изосим Иванович (вăл Октябрьскинче халăх судьи пулса ĕçленĕ) мана лăплантарса ăшшăн çапла каларĕ: «Юрать, хĕрĕм,

вёрен, артистка пул. Чармастӑп, хӑвӑн кӑмӑлу». «Эпӗ вӑл ҫапла каланӑ хыҫҫӑн савӑнсах кайрӑм», аса илет Тамара Изосимовна.

Тамара Гурьева (ашшӗ хушамачӗпе Иванова) Ҫӗрпӳ районӗнчи Шуртавӑш ялӗнче ҫуралнӑ. Ашшӗне, Изосим Ивановича, Октябрьски районӗн халӑх судьйине суйланӑ пирки вӗсен Октябрьски ялне куҫса кайма тивет.

Музыка училищине пӗтернӗ хыҫҫӑн Тамара Изосимовна Чӑваш патшалӑхӗн юрӑпа ташӑ ансамблӗн артистки пулса ӗҫлеме тытӑнать. 1978-мӗш ҫултан пуҫласа – Чӑваш Республикин Гостелерадио хорӗнче (халӗ Чӑваш патшалӑхӗн академи капелли).

Репетици хыҫҫӑн репетици, концерт хыҫҫӑн концерт. Ӑсталӑх енӗпе унӑн пултарулӑхӗ ӳссе пырать. Пӗччен те юрлама тытӑнать. Ҫамрӑк артистка филармони сцени ҫинче «Кружевница» юрӑ юрласа залра ларакансен умӗнче экзамен тытать. Халӑх ӑна тӑвӑллӑн алӑ ҫупса тав тӑвать. Ку Тамарӑна савӑнтарать, хавхалантарать. Ку вӑл унӑн сцена ҫинче пӗччен юрланӑ пӗрремӗш утӑм пулнӑ.

Т. Гурьева хӑй тата Зоя Лисицинӑпа иккӗшӗ юрланӑ юрӑсене «Мелодия» фирма чылай ҫырса илнӗ. Тамара Изосимовна хӑйӗн уҫӑ сассипе республикӑри кашни хулана, районсенчи культура керменӗсене ҫитсе халӑха савӑнтарнӑ. Ытти чӑваш артисчӗсемпе пӗрле вӑл Мускавра, Санкт-Петербургра, ҫӗпӗрте, Инҫет Хӗвелтухӑҫӗнче, Атӑлпа Урал тӑрӑхӗнчи регионсенче пурӑнакансене чӑваш юррисемпе паллаштарнӑ. Концерта пынӑ ҫынсем ӑна яланах алӑ ҫупса тав тунӑ, чечексем парнеленӗ.

Тамара Изосимовнӑн репертуарӗнче Ф. Лукинӑн «Уҫланкӑри палан», Ю. Жуковӑн «Юратнӑ, кӑмӑллӑ анне», Ф. Васильевӑн «Урам юрри», И. Андреевӑн «Ай, пилеш, пилеш» юррисем пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ...

Юрӑҫпа эпир чылай вӑхӑт хушши калаҫса лартӑмӑр. Эпӗ ӑна кӗскен Ҫӗрпӳ тата Октябрьски ҫинчен хам пӗлнисене каласа патӑм. Артистка, вӑхӑт ҫукран,



***Тамара Гурьева тата Зоя Лисицина –***
***Чăваш халăх артисткисем***

Шуртавăш ялне çитсе курайман пирки пăшăрханчĕ.

Калаçса ларнă чухне вăл Петр Петрович Шоркина, училищере вокал енĕпе вĕрентнĕ З.П. Селиванова преподавателе ырăпа асăнчĕ.

«Сире Çĕрпӳ районĕнче те, Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнче те ырăпа çеç аса илеççĕ, пирĕн ентеш тесе калаççĕ», – сăмахсем хыççăн вара Т. Гурьева татах та савăнса кайрĕ.

Сывпулашса тухса каяс умĕн Чăваш халăх артистки çапла каларĕ:

– Эпĕ телейлĕ. Манăн ĕмĕт пурнăçланчĕ, эпĕ чăнахах та артистка пултăм. Концерта пынă çынсене чăваш юррисене юрласа пама пултарнипе савăнатăп, лайăх юрланишĕн халăх мана яланах алă çупса тав тăвать.

Т.И. Гурьева Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ тата Чăваш халăх артисчĕ ячĕсене илме тивĕçлĕ пулнă. Пенсие тухнă пулсан та çав коллективра малалла ĕçлет.

## Педагог, композитор



*Иван Андрианович Андреев*

Туппай Ёсмĕл ялĕнче пултаруллă баянист, педагог, композитор, Октябрьскинчи искусство шкулĕн преподавателĕ Иван Андрианович Андреев хăйĕн çемйипе пурăнать. Пĕр хушă вăл çак шкулăн директорĕ пулса ĕçленĕ. Иван Андрианович Чăваш Республикинчи композиторсен пĕрлешĕвĕн членĕ тата Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Вăл чылай вăхăт Октябрьскинчи юрăпа ташă ансамблĕн концертмейстерĕ пулнă. 2011 çулта композитор хăйĕн çемйипе, тăванĕсемпе тата çывăх тусĕсемпе 60 çулхи юбилейне кĕреке хушшине ларса савăнăçлăн паллă турĕ.

Иван Андриановича Октябрьскинчи тата çывăх ялсенче пурăнакан шкул ачисем те, вăй питти çынсемпе ваттисем те лайăх пĕлеççĕ. Музыка енĕпе талантлă тата пултаруллă çамрăксене шыраса кашни яла, шкула çитсе курнĕ.

Яштака, хумлă-хумлă çӳçлĕ, калаçнă чухне кăштах йăл кулса илекен савăнăçлă Иван Андриановича 60 çултан иртнĕ çын тесе калас та çук. Хăй çулĕнчен вăл çамрăкрах курăнать.

Çурла уйăхĕ – тулăх уйăх. Тĕш-тырă та, пахча-çимĕç те пулса çитнĕ. Мĕн çиес тата мĕн тутанса пăхас тени –

пурте пур. Иван Андриановичӑн та пурнӑҫӗ ку таранччен тулли савӑнӑҫлӑ иртнӗ. Вӑл 1951-мӗш ҫулта ҫурла уйӑхӗн 20-мӗш кунӗнче хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. Пӗчӗклех музыкӑпа интересленнӗ. 6 ҫулта чухнех Женя ятлӑ пиччӗшӗ калакан купӑспа кӗвӗсем кӑларнӑ, ҫултан-ҫул купӑс калас ӑсталӑхӗ ӳссе пынӑ, пуҫламӑш классенче вӗреннӗ чухне хӑйне чӑн-чӑн купӑсҫӑ пекех кӑтартнӑ. 9–10-мӗш классенче «Самоучитель игры на баяне» кӗнекепе усӑ курса баян калама хӑнӑхнӑ. Шкулти тӗрлӗ мероприятисенче купӑспа е баянпа кӗвӗсем шӑрантарнӑ. Вӑл яланах П.П. Шоркин пек пултаруллӑ тата талантлӑ гармонист пулма ӗмӗтленнӗ. Ҫавӑнпа та Шупашкарти музыка училищине вӗренме кайма шутлать. Вӑтам шкул пӗтернӗ хыҫҫӑн хӑйӗн ӗмӗтне тӳрех пурнӑҫлайман, ӑна ҫар службине чӗнсе илнӗ.

Ҫарта та вӑл баянран уйрӑлман. Унта салтаксен хорне йӗркеленӗ, гарнизонри ҫар подразделенийӗсенче концертсем лартнӑ. Салтак юррисем юрлакан хора пур ҫӗрте те кӑмӑллӑн алӑ ҫупса кӗтсе илнӗ.

Ҫамрӑк 1972-мӗш ҫулта ҫартан таврӑнсан Шупашкарти Ф.П. Павлов ячӗллӗ музыка училищине баян калама вӗренме кӗрет. А. Чернов доцент патӗнче (халӗ вӑл профессор) тӑватӑ ҫул хушши тӑрӑшса вӗренет.

Ҫав ҫулах баянпа калама пӗрремӗш музыка произведенийӗ ҫырать.

1976-мӗш ҫулта диплом илнӗ баянист Октябрьскинчи ачасен музыка шкулӗнче баянпа вӗрентекен преподаватель пулса ӗҫлеме тытӑнать. Пултаруллӑ специалиста 1986-мӗш ҫулта ҫак шкулӑн директорне лартаҫҫӗ. 25 ҫул хушши ҫак ӗҫре тӑрӑшнӑ май вӑл музыка шкулӗ валли Октябрьскинчи йӑла комбиначӗ пулнӑ ҫурта тӗпрен юсаса хатӗрленӗ, музыка инструменчӗсем ҫителӗклӗ туяннӑ.

Ю. Викторов (И.Я. Яковлев ячӗпе хисепленекен Чӑваш патшалӑх педагогика университечӗн профессорӗ, художник) пулӑшнипе ӳнер галерейине уҫнӑ. Музыка преподавателӗсен коллективне пухнӑ.

1976-мӗш ҫултан пуҫласа Иван Андрианович музыка шкулӗнче вӗрентнисӗр пуҫне Октябрьскинчи юрӑпа ташӑ халӑх ансамблӗн концертмейстерӗ пулса ӗҫленӗ, кашни ҫул тенӗ пек ҫӗнӗ юрӑсем ҫырнӑ. Паянхи куна 100-е яхӑн юрӑ кӗвӗленӗ. Юррисене вӑл уйрӑм юрӑҫсем тата хорсем валли ҫырать. «Тӑван енӗм», «Тавах, тӑван», «Тух, савниҫӗм, вӑййа», «Юхать, юхать ҫӑлкуҫ» юрӑсене радио итлекенсем те, телекуравҫӑсем те яланах хапӑлласа йышӑнаҫҫӗ. Унӑн илемлӗ произведенийӗсене эфирта Т. Гурьева, З. Лисицина, А. Иванова-Сарри, И. Христофоров тата ытти юрӑҫсем те шӑрантараҫҫӗ.

Хальхи вӑхӑтра И. Андреев Октябрьскинчи халӑх юрӑпа ташӑ ансамблӗн хормейстерӗ пулса вӑй хурать. Пултаруллӑ музыкантӑн творчествӑлла хӗлхемӗ халӗ те сӳнмен, ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ юрӑсем кӗвӗлет вӑл. Октябрьскинчи вӑтам пӗлӳ паракан шкултан вӗренсе тухнӑ ҫамрӑк эстрада юрӑҫи Андрей Кузнецов валли ятарласа юрӑсем хатӗрленӗ. Вӗсен шутӗнче – «Юбилей», «Сарӑ чечексем», «Шур сирень ҫеҫкисем», «Ан кӗттерччӗ тусӑм», «Икӗ ҫыран» тата ыттисем те.

Иван Андрианович 40 ытла ҫамрӑк музыкант вӗрентсе хатӗрленӗ. Вӗсенчен 15-шӗ музыка енӗпе специалист пулас тесе вӑтам тата аслӑ пӗлӳ паракан вӗренӳ заведенийӗсене пӗтернӗ. Роза Макарова, Нина Иванова, Ольга Мухина, Марина Перова, Алексей тата Андрей Тюмеровсем – вӗсем пурте Шупашкарти музыка училищинчен вӗренсе тухнӑ. Савӑнмалли сӑлтав та пур Иван Андриановичӑн: музыка шкулӗнче хӑй вӗрентсе кӑларнӑ, аслӑ пӗлӳ илнӗ специалистсем ӗҫлеҫҫӗ. Андрей Тюмеров вара музыка училищи хыҫҫӑн Саратов хулинчи консерваторире вӗреннӗ. Халӗ пултаруллӑ та талантлӑ Андрей Красноармейскинчи «Раштав» тата «Шурӑмпуҫ» ансамбльсене ертсе пырать.

Иван Андрианович сывлӑх енчен хӑйне лайӑх туять, творчество планӗсем те унӑн пысӑк. Ҫавӑнпа та унран ҫӗнӗ юрӑсем кӗтетпӗр.

## Пултарullă композитора чысларĕç

Октябрьскинчи Культура керменĕнче Иван Андрианович Андреев композиторăн юбилейĕ ячĕпе 2012-мĕш çулхи чӳк уйăхĕн 13-мĕш кунĕнче пысăк концерт пулчĕ. Зала халăх тулли пухăннă. Паллă ентешĕмĕр çырнă юрăсенчен тăракан концерта кӳршĕри ялсенчен те çынсем нумай килнĕ.

Зала пухăннисем чи малтанах сценăн сылтăм енче вырнаçтарнă пысăк экран çинче композиторăн пурнăçĕнчи паллă самантсен кадрĕсемпе тата творчествипе паллашма пултарчĕç. Кĕçех халăх умне концерта ертсе пыракан Елизавета Викторовна Матюшова илемлĕ тумпа тухрĕ. Вăл çак мероприяти И. Андреев композитор ячĕпе пулни çинчен пĕлтерчĕ, юбиляра мухтаса, ырласа, çăлтăрпа танлаштарса ăшă сăмахсем каларĕ. Октябрьскинчи вăтам шкулти учительсен хорĕ Иван Андреевăн Геннадий Яковлев сăввипе çырнă «Сĕнтĕр ен, эс, чечеклен!» юрăпа юбилей концертне уçрĕ. Юрă гимн евĕрлех, районăн тĕп хули малалла аталанса пырассине шантарса залра ларакансене хавхалантарчĕ.

Юбиляра чыслама, унăн ячĕпе ырă сăмахсем калама Шупашкартан, район центрĕнчен, вырăнти хутлăхран та ятлă-сумлă çынсем пухăннă. Вĕсенчен пĕри Чăваш Республикинчи композиторсен пĕрлешĕвĕн ертӳçи Н.Зимин пулчĕ. Вăл Иван Андреев композиторăн ĕçне пысăка хурса хакларĕ, ăшă сăмахсем каларĕ, парне пачĕ.

Концерт малалла пынă май савăнăçлă мероприятие пухăннисем Октябрьскинчи ачасен искусство шкулĕнче вĕренекенсен илемлĕ чăваш ташшине курса савăнчĕç.

Сцена çине Андрей Кузнецов тухнине курсан залра ларакансем тăвăллăн алă çупрĕç – Акшикре çуралса ӳснĕ каччă юрăç пулса тăнипе савăнчĕç. Ку юрăçа республикăри чылай районсенче, хуласенче пĕлеççĕ, вăл



***Н.А. Зимин тата И.А. Андреев***




***И.А. Андреев хăнасем хушшинче.***

шăрантаракан юрăсене итлеççĕ. Ятарласа ăна валли И. Андреев композитор «Юбилей», «Сарă чечексем», «Шур сирень çеçкисем», «Ан кĕттерччĕ тусăм», «Икĕ çыран» тата ытти юрăсене кĕвĕленĕ. Вĕсене Андрей Кузнецов концерт куракансем валли кăмăлтан шăрантарчĕ. «Шур сирень çеçкисем» юрра юрланă чухне ашшĕне пулăшма алла микрофон тытса Максим ывăлĕ тухрĕ. Шкула çӳреме те çул çитмен ывăлне юрăçа çамрăклах хатĕрлет пулмалла ашшĕ.

Концерта композиторăн тусĕсем, Чăваш халăх артисчĕсем – Тамара Гурьевăпа Зоя Лисицина та хутшăнчĕç. Хальхинче Тамара Изосимовна «Ай, пилеш, пилеш» юрăсăр пуçне И. Андреев композитор çырнă «Уйăх тухрĕ каçхине», «Тăван, сана юратса» юрăсене сцена çинче пĕрремĕш хут юрларĕ. Зоя Лисицина та «Ӳкетчĕ çĕнĕ юр илемлĕн» юрăпа концерт куракансене пĕрремĕш хут паллаштарчĕ. Даша Егорова, Светлана Васильева, Римма Журавлева тата «Асамат» ушкăн шăрантарнă юрăсем Культура керменне пухăннисене те, композитора хăйне те савăнтарчĕç.

Асăннă концертра шăрантарнă юрăсен кĕввисене пурне те Иван Андрианович композитор çырнă.

И. Андреев композиторăн юбилей ячĕпе хатĕрленĕ концерт артистсем «Юбилей» юрра пĕрле юрланипе вĕçленчĕ.

Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченне, композитора, 25 çул ытла Октябрьскинчи ачасен искусство шкулĕн директорĕ пулса ĕçленĕ Иван Андрианович Андреева Сĕнтĕрвăрри районĕнче кăна мар, унăн тулашĕнче те аван пĕлеççĕ. Вăл паллă, пултаруллă композитор, унăн творчестви малалла аталанса пырать. Радиопа телевиденире, хорсенче уйрăм юрăçсем вăл кĕвĕленĕ юрăсене юрлани талантлă композитора савăнтарать, хавхалантарать. Юбилярăн пултарулăх каçне Октябрьски ял хутлăхĕн пуçлăхĕ С. Назаров, Чăваш Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Е. Николаева тата А. Разумов, район администрацийĕн культура

пайӗн пуҫлӑхӗ О. Залогин, Октябрьски райпо председателӗ Р. Почемов, вырӑнти вӑтам шкул директорӗ Г. Григорьев, больницӑн тӗп врачӗ В. Белебенцев, Октябрьскинчи ветерансен ушкӑнӗн председателӗ В. Яковлев тата районти ҫыравҫӑсем: Ю. Иванов-Шункай, С. Куснар, О. Шӗнерпи хутшӑнчӗҫ. Вӗсем пурте юбиляра асӑнмалӑх парнесем пачӗҫ.



*И.А. Андреев купӑспа чӑваш халӑх кӗввине калать.*

Концертра юрӑсене юрлама тата ташӑсене ташлама И. Андреев ертсе пыракан, искусство шкулӗн преподавателӗсенчен тӑракан халӑх инструменчӗсен оркестрӗ пулӑшрӗ.

Иван Андрианович концерта пынӑ ҫынсем умӗнче парӑмра юлмарӗ. Алла купӑс илчӗ те пукан ҫине ларса, П. Шоркин пек, чӑваш халӑх ташшисен кӗввисене шӑрантарчӗ.

Хӑйне хисеплесе уява килнӗ ял-йыша, хаклӑ хӑнасене тата спонсорсене тав турӗ, малашне тата та нумай юрӑсем ҫырма шантарчӗ.

# Хуракасси юрăçи



*Э.В. Никитина*

Эльвира Никитина 1966-мĕш çулхи юпа уйăхĕнче Хуракасси ялĕнче пурăнакан Людмила Егоровна тата Виталий Никитич çемйинче çуралнă. Туслă мăшăр пĕтĕмпе 4 ача çуратса ÿстернĕ. Ачисем Хуракасси шкулне пĕтерсен малалла вĕреннĕ, алла професси илнĕ. Çак çемьере çуралса ÿснĕ Эльвира çинчен уйрăммăн калас килет. Ялти ача садне çÿренĕ чухнех хĕрачан шăпчăк пек çемçе сассине воспитательсем асăрханă, ашшĕ-амăшĕ те вăл юрланине илтсен ку ачаран артистка пулать пулĕ тесе тĕлĕннĕ.

Пĕррехинче Шупашкартан музыкантсем килнĕ. Пĕчĕкскерсене юрлаттарсан Эльвира Никитина тата Павлик Белов уçă сасăллă пулнине палăртнă. Вĕсен ашшĕ-амăшне çак ачасене Шупашкарти музыка енĕпе вĕрентекен интернат шкула илсе пыма сĕннĕ.

Людмила Егоровна пĕчĕк хĕрачана илет те Шупашкара тухса каять, интерната шыраса тупать. Ачана тепĕр хут тĕрĕсленĕ хыççăн кирлĕ документсене туса хатĕрлесе интерната хăвармалла тăваççĕ. Амăшĕн тĕпренчĕкĕпе уйрăлма вăхăт çитсен макăрса ярать, Эльвира патне васкаса пырса ăна ыталаса илет, чуп тума тытăнать, хăйĕнчен ямасть. Макăрса тăраннă хыççăн воспитательсемпе сывпуллашса, хĕрачана интернатран илсе тухса килелле çул тытать.

Ача ÿссе аталанса пырать. Шкула çÿреме тытăнать. Пĕр класран тепĕр класа лайăх паллăсемпе куçать, çав

вăхăтра юрăç пулас шухăш кунсерен ӳссех пырать.

Эльвира 7 класс пĕтерет те хăй тĕллĕнех пĕчĕк чухне илсе кайнă интерната тухса каять. Ăна пĕр сăмахсăрах кунта йышăнаççĕ. Вĕренме каймалли çеç юлнă. Анчах та пулас юрăçăн кăмăлне ашшĕ-амăшĕ хуçать, ачана хĕрхенсе ку интернат шкула ăна каллех вĕренме кайма ирĕк памаççĕ.

Вунă класс пĕтернĕ хыççăн çеç Эльвира хăйĕн пысăк ĕмĕтне пурнăçа кĕртме пултарнă. Вăл Шупашкарти педагогика училищине вĕренме кĕрет, районти хора çӳреме пуçлать. Кунта юрлани уншăн çителĕксĕр пулнă. Пушă вăхăтра электроаппаратура завочĕн Культура керменĕнчи хорта юрлама тытăнать.

Педучилище пĕтернĕ хыççăн Шупашкарти Ф. Павлов ячĕпе хисепленекен музыка училищине каять, каçхи вăхăтра ача садĕнче хăйне пурăнмалăх укçа ĕçлесе илет. Вĕренме те, ĕçлеме те ӳркенмен хĕрача. Ашшĕ-амăшĕ те пулăшсах тăнă.

Музыка училищинчен юрăça вĕренсе тухнă хыççăн Шупашкарти музыка театрне ĕçе вырнаçать. Унта 2 çул хушши хор артистки пулать, юрлас ăсталăхне ӳстерсе пырать, юлташĕсенчен вĕренет.

Ăнăçлă экзамен тытса 1994 çулхи çурла уйăхĕнче Эльвира Саратоври Л. Собинов ячĕллĕ консерваторири юрăçсене хатĕрлекен факультета вĕренме кĕрет. Тин çеç унăн чунĕ лăпланать. Вăл – паллă вĕренӳ заведенийĕн студенчĕ. Юрăçă пулма ăна Л.В. Лукоянова профессор хатĕрлет.

Вĕри чĕреллĕ, хăватлă çунатлă чăваш пики консерваторире вĕренет кăна мар, çав хулари «Поволжье» патшалăх концерт организацийĕнче солистка-вокалисткăра ĕçлет. Унăн репертуарĕнче вырăссен, чăвашсен, тутарсен, пушкăртсен, казахсен юррисем, тĕрлĕрен операсенчи, опереттăсенчи арисем, романссем.

Эльвира Витальевна юрăçăн каллех малалла вĕренес шухăш çуралать. Вăл çав çулах Санкт-Петербург хулинчи Н.А. Римский-Корсаков ячĕллĕ консервато-

рире ассистентура-стажировкăра пĕлĕвне ӳстерет. Ăна вĕрентекенĕ В.Н. Гаген профессор пулать. Вĕреннĕ чухне хулари театрсенче час-часах концертсем панă çĕре хутшăнать. Вăл юрланине пурте кăмăллă йышăнаççĕ, тăвăллăн алă çупаççĕ.



*Эльвира сцена çинче.*

Эльвира Витальевна консерватори пĕтернĕ хыççăн Шупашкарта та пулма ёлкĕрнĕ. Оперăпа балет театрĕнче лартнă «Нарспи» оперăра Нарспи арине, «Шывармань» оперăра Сарпи тата Чĕкеç арийĕсене юрланă.

Хальхи вăхăтра Атăл тăрăхĕнче чапа тухнă Эльвира Витальевна Саратоври оперетта театрĕн малти ретре тăракан паллă юрăç. Оперетта театрĕнче ют çĕршывсенчи, вырăс тата совет композиторĕсем çырнă классикăна кĕнĕ оперăсене, опереттасене сцена çинче лартнă чухне ăна тĕп рольсене шанса параççĕ.

Э. Никитинăн грамотăсем, дипломсем, тав хучĕсем нумай. Саратов хулинче «Ентеш» ятлă Чăваш наципе культура автономийĕ пур. Ку организацире Э. Никитина – культура енĕпе ĕçлекен председателĕн çумĕ.

Шел, çавăн пек пултаруллă юрăçă-артистка пирĕн Шупашкарти оперăпа балет театрĕнче ĕçлемест.

## Халăх юратнă юрăç

– Саша ача чухнех купăспа выляма тата юрлама ĕмĕтленнĕ. Вăл аллине кĕске патак татăкĕ илетчĕ те купăс каланă пек пӳрнисене выллянтаратчĕ. Çакна кура аттепе анне ăна вылямалли купăс илсе пачĕç. Çав купăспа вылянă чухне тĕлĕнмелле хитре кĕвĕсем кăларатчĕ, – аса илет ачалăхри вăхăта Александр Михайлович Васильевăн аппăшĕ Ираида Михайловна.

– Сирĕн аçăрпа аннĕр те музыкăна ăнланакан çынсем пулнă пулĕ-ха? – тесе ыйтсан вăл вара çапларах хуравларĕ: «Пирĕн атте 1935-мĕш çулта çуралнă, «Звезда» совхозра водитель пулса ĕçленĕ. Вăл çар службине кайиччен, каччă чухнех, малтан балалайка каланă, кайран купăс çине куçнă. Купăс калама хăй тĕллĕн вĕреннĕ. Анне пирĕн, Зинаида Ивановна, Çĕрпӳ районне кĕрекен Тупнер ялĕнче çуралса ӳснĕскер, Çĕрпӳре медучилище пĕтернĕ хыççăн тивĕçлĕ канăва тухичченех фельдшерицăра ĕçленĕ. Вăл та юрласах çӳретчĕ. Халĕ вĕсем 80 çула çывхарса пыраççĕ, çавăнпа вĕсен юрлама кăмăл çук. Атте купăс каланине тата анне юрланине илтсе ӳснĕ пирĕн Саша. Хăй те купăс калама тата юрлама мĕн пĕчĕкренех хăнăхса пынă.

Эппин, Александр Михайлович Васильевпа çывăхрах паллашар-ха – Урхас Кушкă тăрăхĕнчен тухнă пултаруллă ентешпе, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕпе, паллă юрăçпа. Вăл 1961 çулхи утă уйăхĕнче Йĕрĕхçырми ялĕнче çуралнă. Урхас Кушкăри вăтам шкула пĕтернĕ, музыкăна Полина Григорьевна Иванова учительница вĕрентнĕ. Шкулта вĕреннĕ чухнех Сашăн сасси художествăлла пултарулăх коллективĕнче уççăн янăранă, унăн юрлас туртăмĕ палăрнă.

1978 çулхи юпа уйăхĕнче А. Васильев Альгешри «Паха тĕрĕ» фабрикăна ĕçлеме кĕрет. Çакăнта ĕçленĕ чухне те ĕмĕтне пăрахман каччă. 1984 çулта ĕçе пăрамасăр куçăмсăр майпа Çĕрпӳри культурăпа çутĕç



*Михаил Васильевич тата Зинаида Ивановна Васильевсем*

училищине вĕренме кĕрет. Ăна 1987 çулта пĕтернĕ хыççăн Хусанти культура институтĕнче вĕренсе режиссер специальноçне алла илет. Хăйĕн купăсçă тата юрлама пултарнă ăсталăхне вăл училищĕне тата института вĕренме кĕричченех кăтартнă.

Акă, Пĕтĕм Союзри халăх пултарулăхĕн фестивальне хутшăннăшăн ăна укçан преми парса хавхалантарнă. Институтра вĕреннĕ чухне унăн пултарулăхĕ ӳссех пынă. 1990 çулта «СССР – наш общий дом» конкурсра малти вырăнсенчен пĕрне йышăннишĕн ăна каллех укçа парса хавхалантарнă.

Пултарулăхне кура ăна 1985 çулта Кӳкеçри культура çуртне методист пулса ĕçлеме илеççĕ, каярахпа Шупашкар районĕн культура пайĕн аслă методистне чĕнеççĕ. Çав çулах ăна Шупашкарти радиовещани режиссерне лартаççĕ.

Унăн пултарулăхĕ çултан-çул ӳссе пынă. 1991 çулта вăл Чăваш телевиденийĕн студийĕнче редакторта ĕçлеме тытăнать.



***А.М. Васильев фольклор ушкăнĕпе.***

***Васильевсен çемьи. Малти ретре: М.В. Васильев, З.И. Васильева (ашшĕ-амăшĕ), ачисем: О.М. Васильев, Н.М. Николаева, А.М. Васильева, Е.М. Васильева, Е.М. Акчурина.***





***Саша (сылтăмран пĕрремĕш) ялти ачасемпе пĕрле.***

Çакна палăртса хăварни те вырăнлă пулĕ: 1985–1989 çулсенче Шупашкар районĕнчи культура пайĕнчи агиткультбригадăн методистĕнче ĕçленĕ чухне Александр Михайлович районти культура çуртĕнчи драма коллективне ăнăçлă ертсе пынă. Вăл тăрăшнипех кунта «Хĕлхем» ятлă эстрадăпа фольклор ансамблĕ те ĕçлеме тытăннă.

А. Васильев – «Янра, хуткупăс, савăнăçлă тусăм» телепрограммăн авторĕ тата ертсе пыраканĕ. Ку кăларăма Чăваш телевиденийĕпе 40 хутчен кăтартнă. Çав программăпах Пушкăрт, Тутарстан республикисенче тата Ульяновск облаçне тухса унти халăха савăнтарнă.

Александр Михайлович – пултаруллă юрăç. Вăл юрланине эпир час-часах «Юратнăран» телепередачăсенче куратпăр. Сĕнтĕрвăррисем хăйсен ентешĕ юрланине яланах кăмăлласа йышăнаççĕ, уйрăмах ватă çынсем. Вăл 8 диск-альбом кăларнă, 3 видеофильм ӳкернĕ.

Ытти юрăçсемпе пĕрле Александр Михайлович кашни çулах Ульяновск, Мускав, Санкт-Петербург хулисенче, Тутарстан, Пушкăрт республикисенче пурăнакан чăвашсене юррисемпе савăнтарса хăварнă. Кунсăр пуçне пирĕн чăваш юрăçисем Камчаткăри чăваш культура центрĕ чĕннипе унта та пулнă, 4 концерт панă.

Телевиденире наци тата художество пайĕн редакторĕ пулнă май вăл «Юрату сӳнмест чĕрере», «Çамрăк мăшăрсен конкурсĕ», «Пĕрре курсах саврăмши?» тата ытти тĕрлĕ шоу-программăсем, конкурссем йĕркеленĕ.

Александр Михайлович ашшĕ-амăшне манса каймасть, час-часах тăван ялне килсе каять, тăванĕсемпе тĕл пулма тăрăшать, сцена çине тухса чăваш копозиторĕсем çырнă юрăсене шăрантарать. Кунсăр пуçне вăл Çĕрпӳ хулинче предпринимательте вăй хурать. Урхас-Кушкă хутлăхĕнче ирттерекен мероприятисене иртерме укçа-тенкĕпе пулăшать.



***Саша тата Олег Васильевсем***



***А.М. Васильев кĕрекере.***

## Пултаруллă та талантлă

Талантлă та пултаруллă çынсем кашни ялтах пур. Анчах эпир вĕсене тепĕр чухне асăрхамастпăр, пултарулăхĕ çинчен сăмах та хушмастпăр, çырмастпăр, ытти çынсене те каласа кăтартмастпăр. Çавăн пек çынсенчен пĕри Шуршăл ялĕнче пурăнать. Ăна Алевтина Николаевна Петрова (хĕр чухнехи хушамачĕпе Пирогова) тесе чĕнеççĕ.

Алевтина Николаевна Петровăпа эпĕ 2009-мĕш çулта кĕнеке валли материалсем пухнă чухне паллашрăм. Маларах ун çинчен эпĕ пĕлмен. Мана вăл Шуршăлти юрăпа ташă ансамблĕ, искусство шкулĕ, çавăнта ĕçлекен специалистсем тата хăйĕн çинчен кĕскен çырса пĕлтерчĕ. Материалсемпе паллашрăм та тĕлĕнсе кайрăм: мĕн тери маттур, пултаруллă, анлă тавракурăмлă çын. Вăлах – музыкант-аккордеонист, хор ертӳçи, концертмейстер, çыравçă тата композитор.

Кам-ши унăн ашшĕ-амăшĕ, тăванĕсем, кама пула вăл сăвăсем тата юрăсем çырма пуçланă? Çак тĕллевпе эпĕ Алевтина Николевнăпа тĕл пулса калаçма шут тытрăм. Унпа курнăçнă хыççăн мана кăсăклантаракан ыйтусен тупсăмне тупрăм: ашшĕ-амăшĕнчен.

Аля вĕреннĕ çынсен çемйинче 1951-мĕш çулхи çурла уйăхĕнче çуралнă. Ашшĕ ялти шкулта ачасене юрлама тата ӳкерме вĕрентнĕ, тĕрлĕ музыка инструменчĕсемпе каланă. Ашшĕне ялти çынсем хисеплесе яланах Николай Николаевич тесе чĕннĕ. Вăл та талантлă пулнă: сăвăсем те, юрăсем те çырнă, вĕсене республикăри хаçатсенче пичетлесе кăларнă. Унăн «Самана таппи» кĕнекине Алевтина хĕрĕ 2006-мĕш çулта пичетлесе кăларать. Ку кĕнекере Н. Пироговăн сăввисем, шӳчĕсем тата поэма вырăн тупнă.

Алян амăшĕ Р. Пирогова ялхуçалăх институтĕнче агронома вĕренсе тухнă хыççăн чылай вăхăт хушши Шуршăлти А.Г. Николаев ячĕпе хисепленекен колхоз-



***А.Н. Петрова хăйěн мăнукěсемпе (сулахайран сылтăмалла): Яков, Саша, Миша тата Илья.***

ра тěп агроном пулса ěçленě. Вăл та музыкăна лайăх ăнланакан хěрарăм тата пултаруллă юрăçă пулнă. Килěнче çынсем пухăнсан е хăй хăнана кайсан, вăл пуçтарăннисене юрăсемпе хавхалантарнă, кăмăлěсене çěкленě.

Аля Шуршăлти шкулта 8 класс вěренсе пěтернě хыççăн Шупашкарти музыка училищинче «халăх инструменчěсем, аккордеон» специальнăçе алла илет. Хăйěн специальнăçěпе Шупашкарта тата Çěрпӳре ěçлет. Училищěре 3-мěш курсра вěреннě чухне А. Петрова качча тухнă. Çамрăк специалистсем Шуршăл ялне 1975-мěш çулта килсе ěçе вырнаçаççě.

Тăван ялта ěçленě чухне Алевтина Николаевнăн пултарулăхě палăрма тата аталанма пуçлать. «Хěвел» ача садěнче музыка ертӳçи, Шуршăлти юрăпа ташă ансамблěнче тěрлě вăхăтсенче концертмейстер, хормейстер, музыка шкулěнче – преподаватель пулса ěçлет. Хăйěн çинчен Алевтина Николаевна çапла каласа па-

рать: «Епле ĕçлесе, епле ĕлкĕрсе пынă-ши ун чухне? 13 сехетчен садикреччĕ, кăнтăрла иртсен иккĕ çурă валли музыка шкулне чупаттăм. Каçхине хора çӳренĕ.

1990-мĕш çулта ялти Культура çуртĕнче ĕçлеме пуçларăм: худрук, хормейстер, концертмейстерĕ те хамах пулнă. Унсăр пуçне колхозри ĕçсенчен те юлман. Хăмла пахчинче каçхи сменăсенче савăнсах ĕçленĕ, кăшман, çĕрулми кăларнă çĕре хутшăннă. Обществăлла ĕçсенчен те ютшăнман. Çемье те пулнă, ачасем те ӳстернĕ».

Тĕрĕссипе каласан, çамрăк чухне те, халĕ те Алевтина Николаевнăн выртса канма мар, ларса канма та вăхăт пулман та, çук та.

Çапла, тулли пурнăç тăвас, çынсенчен юлас мар тесе пайтах вăй хунă çамрăк специалист. Иртнине аса илсе ĕç ветеранĕ сăмахне малалла тăсать: «Çамрăклăх çине каялла çаврăнса пăхатăн та мĕн тери çутă та илемлĕ, тапса тăракан çăлкуç пек вăйлă пурнăçпа хастарлăх пулнă иккен манăн. Çав тери çырас килетчĕ. Каçхине уйăх çутипе те пайтах сăвă çырнă, ыттисене вăратас мар тесе çутă та çутман. Ытларах юрату, çамрăклăх çинчен çыраттăмччĕ».

Алевтина Николаевнăн творчестви Р.Сарпи, Л.Мартьянова творчествисем аталаннă вăхăтра çуралнă, вĕсем пекех паллă çыравçă пулма тăрăшнă. Анчах та вăл хăйне шеллемесĕр нумай ĕçленĕ, культура керменĕнче, музыка шкулĕнче тата ачасен садĕнче, шанса панă пур ĕçе те тĕплĕн туса пыма тăрăшнă. Çавăнпа та çырма вăхăт сахал пулнă.

Сăвăсем çырнă, юрăсем кĕвĕленĕ. Ача садĕнче ĕçленĕ çулсенче 2–7 çулхи ачасем валли 50 ытла сăвă тата 100 ытла кĕске сăвăсем çырнă, вырăсларан чăвашла чылай сăвă-юрă куçарнă. Чи малтанхи «Çепĕç туйăм», «Алтăр çăлтăр» юрăсене 1972-мĕш çулсенчех çырнă. Хорпа юрламалли юрăсем те чылай кĕвĕленĕ. Вĕсен шутĕнче: «Манпала пулсамччĕ», «Çутă çăлтăр тӳпере», «Тăван ял



***Шуршăл ялĕнчи «фольклор ушкăнĕ. А.Н. Петрова хыçалти ретре сылтăмран пĕрремĕш.***



***«Солнышко» ача садӗнче ӗҫлекенсен ушкӑнӗ.***
***А.Н. Петрова – 1-мӗш ретре, сулахайран виҫҫӗмӗшӗ.***

урамӗсем», «Шуршӑл вальсӗ», «Кӑн-кӑвак куҫсем» тата ытти те. Чылай сӑвӑсене, юрӑсене республикӑра, районта тухакан хаҫат-журналсенче пичетлесе кӑларнӑ. Чӑвашсем калашле, Алевтина Николаевна чӑн-чӑн пурнӑҫ ҫынни, хальхи вӑхӑтра тивӗҫлӗ канура, ачисемпе пӗрле пурӑнать, мӑнукӗсемпе йӑпанать (вӗсем унӑн тӑваттӑ). Вӑй ҫитнӗ таран вӗсене те пулӑшать. Алевтина Николаевна ывӑлпа хӗр пӑхса ӳстернӗ.

## Сцена ăсти



*И.З. Иванов – çемье пуçĕ*

2010 çул вĕçĕнче Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ, Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче артист тата режиссер пулса ĕçлекен, И.Н. Ульянов ячĕллĕ патшалăх университетĕнче актер ăсталăхне, режиссурăна вĕрентекен доцент Иван Иванович Иванов тăванĕсемпе тата çывăх тусĕсемпе пĕрле юбилей кунне паллă турĕ. Унччен маларах унпа курса калаçма тӳр килнĕччĕ. Çав калаçу хыççăн хамăрăн ентешпе вулакансене те тĕплĕнрех паллаштарас кăмăл çуралчĕ.

И. Иванов Карапаш ялĕнче 1955 çулхи раштавăн 21-мĕшĕнче нумай ачаллă çемьере çуралнă. Ачасен ашшĕпе амăшĕ Иван Захаровичпа Евдокия Андреевна ялта ĕçчен те пултаруллă çынсем пулнипе палăрнă. Телейлĕ мăшăр ултă ача пăхса ӳстернĕ, ĕçе хăнăхтарнă, вĕрентсе специальность илме пур енчен те пулăшса пынă. Хальхи вăхăтра ултă ачи те мăшăрĕсемпе хăйсене килĕшекен вырăнсенче йăва çавăрнă, паянхи кун ачисемпе тата мăнукĕсемпе йăпанса пурăнаççĕ.

Иван Иванович çемйипе Шупашкарта пурăнать, арăмĕпе иккĕшĕ те К.В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче тăрăшаççĕ. Ку театрта ентешĕмĕр – режиссер пулса 1983 çулта ĕçлеме тытăннă.

Юрлама, ташлама, вĕренме Ваня Иванов пĕчĕккренех хастар пулнă. Чи малтан пĕлӳ илме ялти пуçламăш шкула, ун хыççăн Кĕчкейри сакăр çул вĕренмелли

шкула ҫӳренӗ. Хуракассинчи пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкулта вара алла аттестат илнӗ.

Килте те, пахчара та, клубра та, шкулта та Ваньӑн уҫӑ сасси янӑранӑ. Вӑл хутшӑнмасӑр пӗр концерт та иртмен, анчах та каччӑ артист пуласси ҫинчен шутламан та. Вӑтам тата аслӑ классенче вӗреннӗ чухне физкультурӑпа тата спортпа интересленнӗ, ҫитӗнӳсем те тунӑ. Алла аттестат илсен ҫар летчикӗ пулма шутланӑ. Шел те, медкомисси кӑтартӑвӗ унӑн ӗмӗтне татнӑ. Каччӑн ҫар службине кайиччен килти тата вырӑнти хуҫалӑхсенче ӗҫлеме тивнӗ. Ҫар хыҫҫӑн пӗр хушӑ Хуракассинчи вӑтам пӗлӳ паракан шкулта военрук пулса ӗҫленӗ. Ку шкулта, тен, Иван Иванович ытларах та тытӑнса тӑнӑ пулӗччӗ, анчах та Коля шӑллӗ ӑна пӗлтернӗ хыпар хавхалантарса янӑ. Ку хыпар пирки Иван Иванович ҫапла каласа пачӗ:

– Пӗррехинче Коля шӑллӑм «Советская Чувашия» хаҫат тыттарчӗ. «Акӑ, вуласа пӑх, ҫав тери интереслӗ пӗлтерӳ, эпӗ ӑна ятарласах кӑранташпа паллӑ турӑм», – терӗ. Вулатӑп. Театр студине вӗренме кӗме хушма ушкӗн пуҫтараҫҫӗ иккен. Тепӗр кун ирхине Володя валли кучченеҫсем тултарнӑ кутамккана ҫурӑм хыҫне ҫавӑрса хутӑм та хам мӗн тунине чухламасӑрах ҫула тухрӑм, Шупашкара кайрӑм. Ҫак утӑм манӑн пӗтӗм пурнӑҫа улӑштарчӗ. Артиста вӗренме кӗме экзаменсем тытрӑм. Мана йышӑнчӗҫ. Мускаври М.С. Щепкин ячӗллӗ театр училищин студенчӗ пулса тӑтӑм.

*– Иван Иванович, Мускаври М.С. Щепкин ячӗллӗ театр училищинче тӗнчипе паллӑ, Совет Союзӗн талантлӑ та ӑста артист-преподавательсем вӗрентнӗ. Калӑр-ха, мӗнле паллӑ преподавательсем сире хатӗрленӗ, театр искусствипе пӗлӳ панӑ?*

– Мускавра вӗреннӗ ҫулсем – ӗмӗр асра юлакан ҫутӑ тапхӑр. Преподавательсем аванччӗ, ӑслӑччӗ, эпир те, студентсем, пӗлӳшӗн ҫунаттӑмӑр. Пурте интереслӗччӗ, ытларах – режиссура. Хамӑра вӗрентнӗ преподавательсене – В.М. Соломина, В.А. Конева, Н.А. Петровӑна,



***Чăваш халăх артистки В.А. Иванова***



***Чăваш халăх артисчĕ И.И. Иванов***

уйрăмах Владимир Константинович Смирнов профессора нихăçан та манас çук. Вăл Чăваш студийĕн илемлĕх ертӳçиччĕ. М. Царев, Е. Гоголева, Н. Анненков пирĕн кумирсем пулнă.

– *1983-мĕш çултанпа Чăваш патшалăх драма театрĕнче тĕрлĕрен рольсем калăплатăр, вылятăр тата спектакльсем хатĕрлетĕр. Театрта чи малтанах кам рольне вылярăр? Ун хыççăн мĕнле сăнарсене калăплама тивнĕ сирĕн?*

– Театрти пирвайхи роль – А. Чебанов пьеси тăрăх Н. Корчаков лартнă «Инкек» спектакльти колхоз председателĕн сăнарĕ. «Нарспи» спектакльте Тăхтаман рольне выляма тиврĕ. Манăн мăшăрăм, В. Иванова – Нарспи, Дмитрий ывăлăм Сентти ролĕсене вылярĕç. Мĕнпур рольсене каласа пĕтерес те çук, хăшпĕрисене çеç асăнма пултаратăп: И. Тукташăн «Хурăн çулĕ» спектакльти Элеçук, Ф. Павловăн «Ялта» спектакльти мăн кĕрӳ, В. Розовăн «Вунсаккăрта чух» спектакльти Олег...

*– Хăвăр юратнă театрта эсир артист кăна мар, режиссер та пулса ĕçлетĕр. Апла пулсан, хăвăр хатĕрлесе сцена çине кăларнă спектакльсем те пур. Çапла-и?*

– Тăван театр сцени çинче «Шурăмпуç çуталса килет» спектакль лартрăм. Ку спектакль маншăн асаттене асăнса лартнă пекех туйăнчĕ.

Пирĕн асатте Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче хыпарсăр çухалнă. Гарсия Лоркăн, вăрçа сăнлакан «Ан авăн, шĕшкĕ» спектакльсене Чăваш Патшалăх çамрăксен театрĕн сцени çине хатĕрлесе кăлартăм. Хамăрăн театрта Гауптманăн «Хĕвел анас умĕн», Т.Минуллинăн «Сăпка юрри», Н.Дьяконовăн «Тупраллă хĕр» тата ытти пьесăсене халăх умне кăлартăм.

*– Хальхи вăхăтри ĕçĕрсем пирки мĕн калама пултаратăр?*

– Яланах ĕçшĕн çунатăп, пысăкран та пысăк проектсем хатĕрлесе пĕтĕм кăмăлтан киленес, халăхăмăра савăнтарас килет, çамрăк артистсене тата студентсене вĕрентес килет. Театрта ĕçленипе пĕрлех И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче актер ăсталăхĕпе режиссурăна вĕрентетĕп. Студентсем ялсене кайсан шкулсенче, клубсенче драма кружокĕсене ертсе пырса сцена çине спектакльсем хатĕрлесе кăлараççĕ.

*– 2011 çулта сире Чăваш Республикин халăх артисчĕ ятне панă.*

– ЧР халăх артисчĕ хисеплĕ ята тивĕçни маншăн пысăк телей, телейпе пĕрлех савăнăç та. Çак савăнăç – манăн ĕçе хакланиех ĕнтĕ. Театрта 30 çул ĕçлесе тĕрлĕ шайри ĕçсене пурнăçлама тивнĕ паллах, сцена çинче спектакльсенче вылясси те, сцена çине режиссер пулса спектакльсем кăларасси те. Хисеплĕ ят вăл, малашне те çак ĕçре çитĕнӳсем тума хистет, хамăн ĕçе чăн-чăн ĕç шайĕнчех туйма ирĕк парать. Хамăн ĕçе, халăха кирлĕ ĕçех тесе ĕненсе, малашне те тĕплĕнрех ĕçлеме вăй парать.



***Иван Иванович юратнӑ Настя мӑнукӗпе.***



***Н.И. Иванов – И.И. Ивановӑн шӑллӗ.***

## Ир таталнă пурнăç



*В.В. Волгин*

Василий Волгин ячĕ пирĕн районшăн ют мар, çавах та ăна пурте пĕлмеççĕ. Октябрьски ялĕнче тата Йĕпреç районĕнчи Хурамал ялĕнче пурăнакан ватă çынсем кăна астума пултараççĕ çак талантлă çамрăка. Вăл 1937-мĕш çулхи пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче çуралнă.

Вася Волгин нумай пурăнма шутланă, ĕмĕчĕсем пурнăçланасса шаннă.

*«Тусăм, вăхăт çитĕ...*
*Пулăпăр эпир те*
*Тăван çĕршĕн кирлĕ,*
*Усăллă çынсем.*
*Кăмăлсем хаваслă,*
*Вăй-халсем хăватлă,*
*Чĕрере çунатлă,*
*Ырă ĕмĕтсем», –*

тенĕ вăл пуçламăш сăввисенчен пĕринче.

Шел те, 1954-мĕш çулхи çурла уйăхĕн 23-мĕш кунĕнче унăн çулăмлă чĕри тапма чарăннă. Вăл хăйĕн кĕске ĕмĕрĕнче нумай сăвă çырса хăварнă.

1939-мĕш çулта В. Андреев çемьи Шупашкартан Йĕпреçе пурăнма куçса каять. Васьăн ачалăхĕ çав районти Хурамал ялĕнче иртнĕ. Вăл ялти шкулта, 1945–1950-мĕш çулсенче Йĕпреçри вăтам шкулта вĕреннĕ. Çав вăхăтрах сăвăсем çырма тытăннă. Вĕренӳре лайăх

ёлкёрсе пынă пионер, ӳссен Тăван çёршывшăн усăллă çын пулас тенё. Пур предметпа та класёнче пуринчен малта пынă. Пёррехинче 7-мёш класра вёренекенсен математикăпа кăткăс уравнени шутламалла пулнă, анчах та класри пёр ача та ăна шутлайман. Вара математика вёрентекен Федор Гаврилович 6-мёш класра вёренекен Вася Волгина чёнсе пынă. Вăл 7-мёш класра вёренекен ачасен умёнче çав уравнение доска çинче хăвăрт шутласа панă, математикăна лайăх пёлнипе ачасене тёлёнтернё.

Шкулта тухса тăракан «Çăлтăр» журнал редакторё пулса та Вася хăйён пултарулăхне кăтартнă. Альберт Канашпа туслă пулнă.

1950-мёш çулта В. Андреев çемьипе Октябрьски ялне куçса килет. Вася вырăнти шкулта малалла вёренет. Уйрăмах литературăпа интересленме тытăнать. Шкулта комсомол ретне тăнă каччă «Çамрăк вăй» литература журналё кăларма пуçăнать, унăн редакторё те хăех пулать. 1953-мёш çулхи раштав уйăхёнче республикăри çамрăк писательсен канашлăвне хутшăнать. Кунта пулни ăна тата ытларах хавхалантарать, шанса панă пур ёçе те типтерлё пурнăçлать. Октябрьскинчи вăтам шкула медальпе пётерет, Хусанти университета вёренме кёме хатёрленет.

Вася ăста поэт пулма ёмётленнё, сăвăсене вырăсла та, чăвашла та çырнă. Юрăсем те хайланă, кёввисене те хăех хывнă, тăван халăхăн культурине малалла аталантарас тесе пётём чунне парса ёçленё. Поэзи ăна ачаранпах илёртнё. Халăх юррисене, çамрăксем урамра сăвă каланисене çырса хунă, вёсене пăхмасăр калама вёреннё. И. Ивник, Çеçпёл Мишшипе ытти поэтсен сăввисене те пăхмасăр вёреннё. А. Пушкин, М. Лермонтов, Н. Некрасов хайлавёсене кун сиктермесёр кăмăлтан çёкленсе вуланă. Унăн сăввисене «Октябрь çулё» район хаçатёнче тата «Ялав» журналта пичетлесе кăларнă.

Малтанхи хайлавсен шутне «Шурă хурăн», «Çĕршыв чечекленет» сăвăсем кĕреççĕ. «Шурă хурăн» сăвва Йĕпреçри вăтам шкулта 6-мĕш класра вĕреннĕ чухне 1949-мĕш çулта çырнă. Çак сăвăпа усă курса Йĕпреçре пурăнакан Чернышов-Шетма музыкант юрă та çырнă.

Нумай çырнă талантлă çамрăк. 1956-мĕш çулта В.Волгин çырнă сăвăсен «Çамрăк ĕмĕт» ятлă кĕнеки тухнă.

Ку кĕнеке 4 пайран тăрать. Иккĕмĕш хут «Çамрăк ĕмĕт» кĕнекене 1968-мĕш çулта пичетлесе кăларнă. Унта малтан пичетленмен 46 сăвă кун çути курнă.

Октябрьскинче пурăннă чухне Вася Аля ятлă хĕре юратнă, ăна савса «Серенада» ятлă сăвă та çырнă.

1954-мĕш çулта вăтам шкултан вĕренсе тухасси пĕр виçĕ уйăх юлсан 10-мĕш класра вĕренекен каччă чирлесе ӳкет. Ăна сиплеме Мускаври клиникăна илсе каяççĕ, анчах та çăлса хăвараймаççĕ. Çурла уйăхĕн 23-мĕш кунĕнче çамрăк поэтăн чĕри тапма чарăнать. Ăна Йĕпреç районĕнчи малтан пурăннă Хурамал ялĕн масарĕнче пытараççĕ. Кун пек пысăк çухату хыççăн Андреевсем хăйсем те Хурамал ялне пурăнма куçса каяççĕ. Ашшĕ ывăлĕ çырнă сăвăсене пурне те типтерлĕ упраса пуçтарса пынă.

Çакăн пек пултаруллă поэт пурăннă пулсан пĕлтĕр пуш уйăхĕн 24-мĕш кунĕнче вăл 75 çул тултарнине паллă тунă пулăттăмăр. Анчах та вăл пирĕнпе çук.

# ПИРЕ ВӐРҪӐ КИРЛӖ МАР

## Ҫав асаплӑ вӑрҫӑ кунӗсем нихҫан та манӑҫа тухмаҫҫӗ...

Ҫирӗмӗш ӗмӗр икӗ тӗнче вӑрҫипе пӗтӗм тӗнче историне кӗрсе юлнӑ темелле. Иккӗмӗш тӗнче вӑрҫи фашистла Германи 1939-мӗш ҫулхи авӑн уйӑхӗн 1-мӗш кунӗнче Польшӑна тапӑнса кӗнипе пуҫланнӑ. Ҫак вӑрҫа 61 патшалӑх хутшӑннӑ, 1 млрд. та 700 млн. ҫынна вӑрҫа явӑҫтарнӑ. Иккӗмӗш тӗнче вӑрҫи пынӑ вӑхӑтра фашистла Германи 1941-мӗш ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗн 22-мӗш кунӗнче ирхине ирех Совет Союзне сӗмсӗррӗн тапӑнса кӗрет. Ҫапла вара Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫи пуҫланать.

1939-мӗш ҫулхи ҫу уйӑхӗн 23-мӗш кунӗнче Совет Союзӗпе Германи патшалӑхӗсем пӗр пӗрин ҫине вӑрҫӑпа тапӑнмалла марри ҫинчен килӗшӳ тунӑ пулнӑ. Анчах ҫак килӗшӗве пӑсса Гитлер ертсе пыракан Германи тата Финлянди, Венгри, Румыни, Итали патшалӑхӗсен ҫарӗсемпе Совет Союзне ултавлӑ вӑрҫӑпа тапӑнса кӗрет.

Ҫӗртме – ҫуллан пӗрремӗш уйӑхӗ. Шӑпах ҫак тапхӑрта шкул ачисем каникула каяҫҫӗ, шкулсенчен вӗренсе тухакансем экзаменсем тытаҫҫӗ. Ял ҫыннисемшӗн вара ку вӑхӑт уй-хирти хӗрӳ ӗҫпе палӑрса тӑрать. Хуласенчи заводсемпе фабрикӑсенче ӗҫлекенсенчен чылайӑшӗ ҫуллахи вӑхӑтра отпуска каймa хатӗрленет. Хӗрлӗ Ҫарти службӑра тӑракан генералсем тата офицерсем те отпуска кайнӑ. Ҫаксене пӗтӗмпе шута илсе Гитлер хӑйӗн ҫарне Совет Союзне хирӗҫ вӑрҫӑпа тухма приказ парать те. Сывлӑша самолетсем хӑпараҫҫӗ, тинӗсре ҫар карапӗсем ишеҫҫӗ, ҫӗр ҫийӗпе танксем малалла шӑваҫҫӗ, тупӑсем, минометсем вӗҫрен переҫҫӗ...

Ҫапла, чӑн-чӑн хаяр вӑрҫӑ пырать. Чи хӑрушши, сехрене хӑпартаканни – самолетсем шӑхӑрса вӗҫсе

иртсе кайнӑ чухне бомбӑсем пӑрахса хӑварни. Ҫурҫӗр тинӗсӗнчен пуҫласа Хура тинӗс таранах вӑрҫӑ кӗрлет. Гитлер кӗске вӑхӑтрах Мускава ярса илсе чӳк уйӑхӗн 7-мӗш кунӗнче Хӗрлӗ площадьре парад ирттересшӗн пулнӑ. Анчах та фашист эшкерне Мускава кӗртмен. Хӗрлӗ площадьре ҫак кун Хӗрлӗ Ҫарӑн парачӗ пулса иртнӗ.

Вӑрҫӑ пуҫланни ҫинчен хӑрушӑ хыпар пур ҫӗре те ҫитнӗ. Вӑл кашни ҫынна, ватти-вӗттине пӑхмасӑр, хытӑ кулянтарнӑ, шутлаттарнӑ. Акӑ мӗн каласа парать Чермӗш ялӗнче пурӑнакан тыл ветеранӗ Галина Степановна Миронова ҫав хӑрушӑ саманта аса илнӗ май:

– Вӑрҫӑ пуҫланнӑ кун эпир, колхозниксем, уйра утӑ пуҫтараттӑмӑрччӗ. Пирӗнпе пӗрле шкул ачисем те юнашарах ӗҫлетчӗҫ. Утӑ пуҫтарнӑ ҫӗре пирӗн бригадир Матрена Герасимова пычӗ те вӑрҫӑ пуҫланни ҫинчен пӗлтерчӗ. Эпир малтанах нимӗн тума аптрарӑмӑр, темелле. Унтан макӑрма пуҫларӑмӑр, хӑраса ӳкрӗмӗр, пирӗнпе мӗн пулать-ши тесе шухӑшлама пуҫларӑмӑр. Упӑшкисем тата ывӑлӗсем ҫав вӑхӑтра салтакра пулнӑ хӗрарӑмсем вара пушшех те хытӑрах макӑрчӗҫ, вӗсен куҫӗем шыҫсах кайрӗҫ...

– Часах, – малалла калать Галина Степановна, – ялти арҫынсене вӑрҫа илсе кайма пуҫларӗҫ. Малтанхи кунсенчех Петр Волкова, Алексей Шкадерова, Василий Фомина, Анатолий Лебедева тата ыттисене те вӑрҫа илсе кайрӗҫ. Нина Лебедева, Анисия Тарасова, Нина Фомина тата нумайӑшӗсене ҫар комиссариатне чӗнсе илсе вӑрҫа ячӗҫ. Эпир вӗсене пурне те пӗтӗм ял-йышпа чысласа, хӑналаса, парнесем парса ӑсатса ятӑмӑр. Пурне те ирсӗр фашиста ҫапса аркатса киле каялла тӗрӗс-тӗкел таврӑнма халал патӑмӑр.

– Эсир ун чухне ялти арҫынсене ӑҫта ҫитиччен ӑсатса янӑ вара? – тесе ыйтсан, вӑл шӑп тӑнӑ хыҫҫӑн ҫапла хуравларӗ: «Лашапа Сӗнтӗрвӑррине илсе ҫитернӗ. Вӑрҫа каякансем военкомата кӗрсе тухсан эпир вӗсене Ҫӗрпӳне ҫитиех лашасемпе ӑсатнӑ».



***Чермĕш ялĕнчи фронтовиксем. Малти ретре: В.Я. Карчагин, Е.В. Краснов, С.С. Волков, В.Н. Колесов, И.М. Галкин. Иккĕмĕш ретре: И.М. Моисеев, В.А. Александров, В.А. Александров, П.Г. Герасимов, П.А. Андреев, П.Т. Тихонов, И.К. Коньков.***

Чермĕш ялĕнче пурăнакан Дарйăпа Александр Николаевсем салтака кайма юрăхлă 4 арçын пăхса ÿстернĕ. Вĕсен ывăлĕсем: икĕ Василий, Владимир тата Николай – тăваттăшĕ те вăрçăра пулнă, тăван киле таврăннă. Асли, Василий, «Пищевик» колхозра бригадирта ĕçленĕ. Кĕçĕнни, Василий, вара лавккаç пулнă. Владимир Александрович вăрçă умĕн те, вăрçă хыççăн та пахча-çимĕç ÿстерекен бригадăн ертÿçинче ĕçленĕ, Николай Александрович ял Совечĕн председателĕ те, бригадир та пулнă.

Трифон Давыдовпа унăн арăмĕ 4 ывăлне Хĕрлĕ Çара службăна ăсатса янă та урăх вара вĕсене нихăçан та курайман, вĕсемпе тĕл пулса калаçайман. Вĕсен аслă ывăлĕ Яков Трифонович учителе вĕренсе тухса Турханкасси ялĕнчи шкулта ĕçленĕ пулнă, унăн мăшăрĕ Фекла Ивановна пуçламăш классен учительници пулнă. Вăрçăн 2-мĕш кунне Якова салтак службине илсе кайнă, унтан фронта янă. Вăл Мускава хÿтĕлекен çар подразделенине лекнĕ. Час-часах киле çыру çырнă фронтовик. Унăн юлашки çырăвне килтисем 1941 çулхи раштав уйăхĕнче илнĕ пулнă. Вăрçăра пирĕн ентешĕмĕр раштав уйăхĕн 20-мĕш кунĕнче вилнĕ. Фекла Ивановна 4 ачапа тăлăха тăрса юлнă. Ачасене пăхнă, ÿстернĕ, вĕрентнĕ. Хальхи вăхăтра 3 ачи пурăнаççĕ.

Федор Трифонович вăрçăччен Кушник ялĕнчи шкулта учительте ĕçленĕ. Юлашки çырăвне вăл Венгрирен 1944-мĕш çулта çырса янă. Ун çинчен вара урăх нимĕнле хыпар та килмен, ăçта вилни, пытарни паянхи кунччен те паллă мар.

Иван Трифонович Чермĕш ялĕнче колхозра ĕçлесе пурăннă, мăшăрланнă пулнă. Фалицета ятлă арăмĕ икĕ хĕр çуратнă. Роза ятлă хĕрĕ тата арăмĕ çирĕм пĕрремĕш ĕмĕре куçсан вилнĕ. Зина ятлă хĕрĕ хăйĕн çемьипе Шупашкарта пурăнать.

Давыдовсен чи кĕçĕн ывăлĕ – Петр Трифонович. Вăл Горький хулинче çар училищинче вĕреннĕ. Вĕренсе пĕтерсен ăна лейтенант званине панă, вăрçа ăсатнă.



***Владимир Александров***



***Василий Александров***



***Яков Трифонов***



***Николай Александров***

Вăрçа кайнă чухне вĕсен эшелонĕ самолетсем бомба пăрахнă çĕре çакланнă, çамрăк офицер осколокăсем лекнипе вилсе кайнă. Ку вăл 1941-мĕш çулта пулнă. Ăçта унăн вилтăприйĕ? Халĕ çакна никам та пĕлмест. Давыдовсене хисеплесе Чермĕш ялĕнчи пĕр урама вĕсен ятне панă.

Хамăн кĕске хайлавра икĕ çемье çинчен çеç çырса кăтартрăм. Пĕр çемьинчен вăрçа тухса кайса ырă-сывă килнĕ ачасемшĕн (ывăлсемшĕн) ашшĕ-амăшĕ питех савăннă пулсан, тепĕр çемьери арçынсем вăрçа кайса пĕтнĕшĕн ашшĕ-амăшĕ виличченех кулянса, макăрса, аса илсе пурăнни каламасăрах паллă ĕнтĕ. Çакă ирсĕр вăрçă кашни çемьене мĕн енчен те пулсан инкек туса хăварнах.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă, хăрушă çапăçура вилнĕ, пĕр хыпарсăр çухалнă салтаксене асăнса пирĕн республикăра «Астăвăм» кĕнеке кăларнă. Унта пирĕн тăрăхри Ăстакасси ялĕнчен – 90, Кĕçĕн Ăстакассинчен – 85, Чермĕш ялĕнчен – 51 çын ятне çырнă. Фронтовиксене асăнса пурăнма кашни ялтах обелиск туса лартнă. Кашни çулах Çĕнтерӳ уявĕнче çак обелисксем патне чĕрĕ чечек кăшăлĕсем хураççĕ. Иывăр тăпри çăмăл пултăр вăрçă ветеранĕсен...

## Вăрçă ачисен куççулĕ



*Вăрçă ветеранĕ Н.Н. Николаев*

Çĕнтерӳ 65 çул çитнине çĕршывăн пур кĕтесĕнче те паллă турĕç. Кайри Шĕнерпуç ялĕнче пурăнакан 75–85 çулсенчи ватăсем те çак уява уявлама юлашки 2–3 çул хушшинче йăлана кĕнĕ йĕркепе ялти вăрçă ветеранĕ Николай Николаевич Николаев патне пуçтарăнчĕç. Пĕр-пĕрне, кил хуçине саламларĕç, ырлăх-сывлăх сунчĕç. Кĕçех Шуршăл шкулĕнче вĕренекен ачасен пысăк ушкăнĕ Александра Николаевна Чумбакова, Ирина Ивановна Ильина вĕрентекенсем ертсе пынипе килсе çитрĕç. Нина Николаевна Львовăпа Лия Германовна Кузнецова педагогсем хатĕрленĕ уяв концерчĕн программи вăрçă ветеранне, тылра ырми-канми тăрăшнă ватăсене саламланипе пуçланчĕ. Чуна пырса тивекен сăвăсемпе юрăсене ял-йыш хумханса та куççуленсе алă çупса кĕтсе илчĕ. Нумай хура-шур тӳснĕ ватăсен пĕркеленчĕклĕ пичĕсем тăрăх куççуль пĕр шелсĕр юхрĕ, иртнине аса илтерчĕ.

Чи малтанах ачасене Николай Николаевич Николаев ветеран асаилĕвĕсем тыткăна илчĕç. Нумаях пулмасть 85 çулхи çуралнă кунне уявланă Нина Никитична Никитина та вăрçă вăхăтĕнчи нушаллă пурнăçĕ çинчен каласа пачĕ: «Вăрçă пуçланнă кун эпир, 16 çулхи çамрăксем, уйран çумкурăкĕ çумласа килтĕмĕр. Урамра, ушкăнăн-ушкăнăн çынсем тăраççĕ, нумайăшĕ вăрçă

тухнӑ тесе макӑраççӗ. Тепӗр кунах ялти çамрӑксене фронта илсе кайма тытӑнчӗç».

«Вилме анчах каятпӑр вӗт», – тесе хурлӑхлӑн макӑрса юрлатчӗç салтака тухса каякансенчен хӑшӗ-пӗри. Чӑн та вӗсенчен чылайӑшӗ киле каялла таврӑнаймарӗ.

Вӑрçӑ вӑхӑтӗнче эпир, çамрӑксем, чугун çул тунӑ çӗрте ӗçленӗ, пайтах наççилкӑпа тӑпра, чул çӗкленӗ. Уй варринчех хӑшӗ – урапа çинче, хӑшӗ – урапа айӗнче çӗр каçнӑ. Чугун çула тӗрӗслесе йышӑнмасӑр никама та киле яман. Унтан таврӑнсан çурлапа тырӑ вырнӑ. Çӗрулми кӑларнӑ хыççӑн Октябрьски тӑрӑхне окоп чавма янӑ. Аякран пӑхсан сип-симӗс ыраш калчиллӗ уйра (питӗ шелчӗ) хуп-хура курӑннӑ йышлӑ халӑх, вӑрçӑ кунта та çитет пуль тесе, окоп чавнӑ. Çанталӑк шӑнтсан арçынсем çӗре лумпа катнӑ, эпир наçилккӑпа йӑтнӑ.

1942 çулта Кӗчкей ялӗнче «огневой точкӑсене» юсама лашапа çӳренӗ. Каярахпа Киря тӑрӑхне повесткӑпа вӑрман касма илсе кайнӑ. Унта çирӗп дисциплина пулнӑ. Касса вакланӑ вутта вӑрçӑран аманса таврӑннӑ арçынсем лашасемпе пуйӑссем валли станцие турттарнӑ. Манпа пӗрле Кайри Шӗнерпуçӗнчен Иван Ригов, Александр Александров, Василий Ригов тата Анаткас ялӗнчен – Александра Тимофеева, Евдокия Андреева, Елизавета Алексеева, Анатолий Орешин ӗçлетчӗç, халӗ вӗсем пурте вилнӗ ӗнтӗ. Хамӑн çамрӑклӑх телейсӗр пулнӑран пуль, паянхи çамрӑксен телейлӗ сӑн-питне курса савӑнма Турри сывлӑх пачӗ, ахӑртнех». Ачасем Нина кинемин кашни сӑмахне ӑша хывса пӗр хусканусӑр итлесе ларчӗç.

Зоя Прокопьевна Мартынова вара ачасене хӑйӗн чӗрине чи çывӑх та хаклӑ япаласемпе – ашшӗн, Прокопий Ивановичӑн вӑрçӑ хирӗнчен янӑ виçкӗтеслӗ ултӑ çырӑвӗпе паллаштарчӗ. Юлашки çырӑвӗ Тула çывӑхӗнчен пулнӑ. «Эпир шурлӑхлӑ вырӑнта халь, пуçа çӗклеме май çук пуля «çӑвать». Çак çыру хыççӑн нумай вӑхӑт хушши манран çыру илмесен – ӗмӗрлӗхех сывӑ пулӑр», – куççуль витӗр вуларӗ Зоя аппа. Фронтран



*Н.Н. Николаева чыслама пынă ял çыннисем.*

урăх сас-хура пулман... Ашшĕсĕр тăрса юлнăран мĕн пĕчĕкренех унăн йывăр ĕçе кӳлĕнме лекет. Хăмла татма, уя пучах пуçтарма, ал ĕç тума кăна мар, алла пуртă тытса ĕçлеме те тӳр килнĕ унăн.

«Халĕ акă 65 çул мирлĕ тӳпе айĕнче пурăнатпăр. Эпир курнине сирĕн нихăçан та курмалла ан пултăрччĕ», – вĕçлерĕ кинеми хăйĕн сăмахне.

Тĕлпулу вара малалла тăсăлчĕ. Шкул ачисем уява хаваслă юрăсемпе вĕçлерĕç. Мĕн тери телейлĕ вĕсем – мирлĕ пурнăç ачисем! Манăн та тĕлпулăва килнĕ кашни ял çыннине, кашни ачапа вĕрентекене тав сăмахĕ калас, сывлăхпа телей сунас килет.

**Э.Николаева**

## Космос паттăрне сума суса

2012 çулхи авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче пирĕн ентеш, СССР летчик-космонавчĕ, авиаци генерал-майорĕ, икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ, Чăваш Республикин, унăн тĕп хулин тата Сĕнтĕрвăрри районĕн хисеплĕ гражданинĕ А. Николаев çуралнăранпа 83 çул çитрĕ. Çак сумлă куна пирĕн республикăра анлăн уявларĕç. Шупашкарта та, районсенче те тĕрлĕ мероприятисем иртрĕç.

Космонавт çуралнă яла – Шуршăла – çав кун республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев, республикăн культура, нацинальнăçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министрĕ В. Ефимов, А. Николаев космонавт хĕрĕ тата ытти хаклă хăнасем килсе çитрĕç. Паллах, чи хаклă тата кĕтнĕ хăна Алена Андрияновна пулчĕ. Вăл малтанах хăйĕн мăшăрĕпе А. Николаев космонавт асăну комплексĕ çумĕнчи часавая кĕрсе ашшĕн вилтăпри çине чечексем хучĕ, кайран музей комплексĕпе тĕплĕн паллашрĕ, кунта ĕçлекенсене усăллă сĕнӳсем пачĕ, сăмахран, планетарий уçас тата космонавтикăпа çыхăннă фильмсем кăтартассине йĕркелес пирки.

Республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев, космонавт хĕрĕпе тĕл пулнă май, çапларах ăшă сăмахсем каларĕ: «Андриян Григорьевич уçă кăмăллă тата ырă чунлă çынччĕ, вăл кашни çыннах пулăшма тăрăшатчĕ».

А. Николаев çуралнă кунне халалланă уява уçнă чухне те Республика Пуçлăхĕ виççĕмĕш космонавт пирки ăшă сăмахсем шеллемерĕ. «Ăна пула чăваш халăхĕн ячĕ чи çӳллĕ шая çĕкленчĕ», – палăртрĕ вăл.

Космонавт хĕрĕ Алена Андрияновна асăннă мероприятие пуçтарăннă халăха хăйĕн ашшĕне асра тытнăшăн, ăна хисепленĕшĕн тав турĕ. Вăл ача чухне Шуршăла ашшĕпе килсе кайнине аван астăвать. «Атте хăй çуралнă вырăна питĕ юрататчĕ. Мана та унăн юратăвĕ куçрĕ пулĕ: çак вырăнсене яланах ăшă туйăмпа аса илетĕп», – терĕ вăл. Алена Андрияновна космос паттăрĕн хĕрĕ пулнишĕн мăнаçланнине те

пытармарĕ: «Атте космонавтсем хушшинче яланах малти ретре пулнă, ăна чи яваплă программăсемпе тĕпчевсем шанса панă. Космоса икĕ хут хăпарсан та вăл кашнинчех чи вăрах вĕçекенни пулнă».

Пуçтараннисем умĕнче район админстрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Моисеев та тухса калаçрĕ. Вăл çамрăк ăрăва воспитани панă чухне патриотла туйăма шута илме, ăна çуралнă вырăна тата Тăван Çĕршыва юратма вĕрентме кирлине палăртрĕ. Куна валли питĕ ырă тĕслĕх пур – пирĕн юратнă, тĕнчипех паллă ентеш Андриян Николаев.

Митинг вĕçленсен хаклă хăнасем А. Николаев вилтăпри çине чечек кăшăлĕсем хучĕç. Çав вăхăтра космонавтăн чи юратнă «Вĕç, вĕç, куккук» юрри янăрарĕ. Ăна Морис Яклашкин ертсе пыракан Чăваш патшалăх академи симфони капелли вылярĕ.

А. Николаева-Терешкова Шупашкарта та пулчĕ, 10-мĕш номерлĕ шкул ачасемпе тĕл пулчĕ, А. Николаев космонавт палăкĕ умне чечексем хучĕ.

Шуршăлти уява пуçтараннисем вара чылай вăхăт капелла концертне итлесе савăнчĕç.

**И. Васильев**



***Микрофон умĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.В. Игнатьев***




***Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.В. Игнатьев А.Г. Николаев космонавтăн хĕрĕпе Аленапа калаçать.***



***Сĕнтĕрвăрри районĕн администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.Ф. Моисеев тĕнчери паллă спортсменсемпе юнашар.***



***А.Г. Николаев космонавт çуралнă кун ячĕпе йĕркеленĕ марафона хутшăннă çынсем Шуршăлалла чупаççĕ.***



***Юбилей ячĕпе йĕркеленĕ концерт.***

## «Космонавт çулĕпе»

Çав кунах «Космонавт çулĕпе» ятпа пирĕн районта массăллă чупу иртрĕ. Унта хутшăнакансем Сĕнтĕрвăрри хулинчен пуçласа Шуршăл ялне çитиччен чупрĕç. Каласа хăварни вырăнлă пулĕ: А. Николаев 1944–1947 çулсенче Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕнче вĕреннĕ, кашни кун тенĕ пекех Иван пиччĕшĕпе Кĕтĕквар ялĕ витĕр каллĕ-маллĕ 30-шар çухрăм утнă. çавăнпах пуль, пулас космонавт çирĕп сывлăхлă, кăмăллă ӳснĕ, йывăрлăхсене çĕнтерме хăнăхнă. Каярахпа спорт уншăн пурнăç йăли-йĕрки пулса тăнă. Вăл СССР тава тивĕçлĕ спорт мастерĕн ятне те илме пултарнă.

Старта тухас умĕн чупăва хутшăнакансем А. Николаев космонавт вĕреннĕ Атăлçи технологи университечĕн филиалĕ (малтан – вăрман техникумĕ) умĕнче пуçтарăнчĕç. Кунта космонавт çуралнă куна халалланă митинг иртрĕ. Пуçтарăннисем умне район админстрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Моисеев, Олимп вăййисен тата тĕнче Кубокĕн бронза призерĕ В. Андреев, хăвăрт утассипе пĕтĕм тĕнче тата Европа чемпионĕ, XXV Олим вăййисене хутшăннă Алина Иванова тухса сăмах каларĕç, çамрăк спортсменсене паттăр ентеш пек пулма, унран ырă тĕслĕх илме сĕнчĕç. Митинг вĕçĕнче хаклă хăнасем тата пуçтарăннисем А. Николаев космонавта халалласа уçнă асăну хăми умне чечек çыххисем хучĕç.

Унтан чупăва хутшăнакансем (пин çын ытла) район админстрацийĕн çурчĕ патне (А. Николаев урамĕ) пуçтарăнчĕç, «Космонавт çулĕпе» старта тухрĕç. Малтан паллă спортсменсем, вĕсем хыççăн ыттисем хускалчĕç. Палăртмалла: ку спорт мероприятийĕ республика шайĕнче иртрĕ. Унта Шупашкартан, ытти хуласемпе районсенчен, сăмахран, Патăрьелĕнчен, килнисем те хутшăнчĕç. Паллă спортсменсем хушшинче, çӳлерех

асăннисемсĕр пуçне, пĕтĕм тĕнче Универсиадин призерĕ Нина Охотникова, тĕнче Кубокĕн чемпионĕ Ирина Юманова тата ыттисем те пулчĕç.

Çурма марафона (21 çухрăм) чи малтан, арçынсене те хыçала хăварса, паллă спортсменка И. Юманова вĕçлерĕ, хĕрарăмсем хушшинче пĕрремĕш вырăн çĕнсе илчĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене каллех титуллă А. Ивановапа Н. Охотникова пайларĕç. Арçынсенчен чи вăйли вырăнти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕ А. Вазинкин пулчĕ. Иккĕмĕш вырăна та çак тытăмрах ĕçлекен А. Петрушкин тивĕçрĕ. Виççĕмĕшĕ – Сĕнтĕрвăрринче пурăнакан А. Филинов. Яшсем хушшинче Шупашкарти Олимп резервĕн училищин воспитанникĕ Д. Воробьев çĕнтерме пултарчĕ. Пьедесталăн иккĕмĕш пусми çине хăпарма Сĕнтĕрвăрринчи 28-мĕш училищĕре вĕренекен А. Андреев тивĕçрĕ. Урхас Кушкă тăрăхĕнче пурăнакан А. Иванов финиша виççĕмĕш çитрĕ. Хĕрсен ушкăнĕнче Шупашкарти Олимп резервĕн училищин воспитанникĕсем – Н. Мокеева, Е. Матвеева, А. Иванова – палăрчĕç. Ветерансенчен чи пултаруллисем Шупашкартан килнĕ А. Захаров (арçынсем хушшинче) тата Сĕнтĕрвăрринче пурăнакан И. Никитина (хĕрарăмсем хушшинче) пулчĕç.

Шуршăла килнĕ хаклă хăнасем – Республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев, Республикăн культура, национальнăç ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министрĕ В.Ефимов, А.Г. Николаев космонавт хĕрĕ А. Николаева-Терешкова тата район пуçлăхĕ В. Морозов, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.Моисеев чаплă ларутăрура чупу çĕнтерӳçисене парнесемпе чыс хучĕсем пачĕç.

**И. Васильев**



*Çамрăк космонавтсем*



*Сĕнтĕрвăрри хулинчен килнĕ артистсем юрă шăрантараççĕ.*

## Кĕскен кĕнеке авторĕ çинчен



Николай Иванович Иванов 1937-мĕш çулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕш кунĕнче Чăваш республикин Çĕрпӳ районĕнчи Энĕшкасси Катек ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Вăл Иван Александровпа Феодосия Виссарионовнăн иккĕмĕш ачи пулнă. Аппăшĕ 1934-мĕш çулта, шăлнĕ 1940-мĕш çулта çуралнă. Çак ачасен ашшĕ 1942-мĕш çулхи утă уйăхĕнче вăрçăра нимĕç фашисчĕсемпе çапăçса пуçне хунă.

Вăрçă пĕтнĕ çул Н.И. Иванов Шĕнерти пуçламăш шкулта вĕренме тытăнать, ăна пĕтернĕ хыççăн Тупнерти 7 çул вĕренмелли шкулта малалла пĕлӳсем пухать. Ку шкултан вĕренсе тухнă хыççăн учитель пулма Çĕрпӳри педагогика училищинче (1952–1955) тата Канашри педагогика училищинче вĕренет. 1956-мĕш çулта çар службине каять. Виçĕ çул ытларах çар службинче пулнă хыççăн 1959-мĕш çулта, кĕркунне, киле таврăнать. 1960-мĕш çултан пуçласа 1964-мĕш çулхи утă уйăхĕччен вырăс чĕлхи, литература тата истори

учителĕ пулма И.Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕренет.

Институт пĕтернĕ хыççăн хăйĕн специальнăçĕпе Сĕнтĕрвăрри районне кĕрекен Çатракасси ялĕнчи вăтам шкулта ĕçлет. 1965-мĕш çулхи пуш уйăхĕн вĕçĕнче Сĕнтĕрвăрринчи çутĕç пайĕн инспекторĕ пулса ĕçлеме тытăнать. Пĕр вăхăт хушши культура пайĕн тата çут ĕç пайĕн пуçлăхĕнче тăрăшать. Çут ĕç пайĕн пуçлăхĕнчен тухсан ялти шкулсенче вăй хунă. 1981-мĕш çултан пуçласа тивĕçлĕ канăва кайиччченех (1998) Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кĕçĕн Ăстакасси шкулĕнче директор пулса ĕçленĕ.

1965-мĕш çулта Сĕнтĕрвăрри районĕн «Ленинское знамя» хаçата хайлавсем çырма тытăннă, 2006-мĕш çултан пуçласа «Пирĕн сăмах» («Наше слово») хаçатăн обществăлла корреспонденчĕ пулса тăрать. Паянхи куна та çав ĕçе юратса пурнăçлать. 2011-мĕш çулта «С песней по жизни» ятлă кĕнеке кăларнă. Çав çулах ăна Чăваш писателĕсен тата Раççей журналисчĕсен пĕрлешĕвĕн членне илнĕ. Хальхи вăхăтра Сĕнтĕрвăрри район хаçачĕ валли хайлавсем çырсах тăрать, çĕнĕ кĕнекесем кăларма хатĕрлет.

2012-мĕш çулхи чӳк уйăхĕнче Н.И. Иванова, халăх академикне, Чăваш Республикин наука, культура, литература академийĕн членне суйланă.

Тупмалли


Ум сăмах ........ 3
Тăван ен илемĕпе киленетĕп ........ 4

**Вĕсем ял хуçалăхĕнче вăй хунă**

Ĕçпе чапа тухнă вăрçă ветеранĕ ........ 17
Ĕçлеме ӳркенмен ветеран ........ 21
Чун ăшши – ачасенче ........ 25
Йывăрлăхсене парăнмасăр ........ 30
Сăмахăм – ал ĕç ăсти çинчен ........ 38
Телейлĕ мăшăрăн – 22 мăнук ........ 45
Музыкăпа, спортпа туслă çемьесем ........ 53

**Вĕсем шкул ачисене воспитани парас тата вĕрентес ĕçре вăй хунă**

Педагог тата пултаруллă юрăçăн кун-çулĕ ........ 56
Юратнă учитель ........ 61
Суха туса, тырă вырса ........ 63
Ĕç – вĕренме, вĕренӳ – ĕçлеме пулăшнă ........ 68
Тулăх пурнăç – вĕренӳпе ĕçре ........ 73

**Халăх пултарулăхне аталантарас ĕçре палăрнă**

Вăл ăста педагог, талантлă композитор пулнă ........ 80
Опера театрĕн солисчĕ ........ 84
Хастарлă та пултаруллă ертӳçи ........ 86
Чăваш халăх артистки ........ 90
Педагог, композитор ........ 93
Пултаруллă композитора чысларĕç ........ 96
Хуракасси юрăçи ........ 100
Халăх юратнă юрăç ........ 103
Пултаруллă та талантлă ........ 108
Сцена ăсти ........ 113
Ир татăлнă пурнăç ........ 118

**Пире вăрçă кирлĕ мар**

Çав асаплă вăрçă кунĕсем нихăçан та манăça тухмаççĕ... ........ 121
**Э.Николаева.** Вăрçă ачисен куççулĕ ........ 127

**И. Васильев.** Космос паттăрне сума суса ........ 130
**И.Васильев.** «Космонавт çулĕпе» ........ 134

Кĕскен кĕнеке авторĕ çинчен ........ 137

Иванов Николай Иванович

# Наши земляки

***Мариинско-Посадская сторона***

Редактор *Степанов В.В.*

Компьютерный набор автора
Компьютерная вёрстка *Шутеевой Н.П.*
Дизайн обложки *Афанасьевой А.В.*

Подписано в печать 20.03.2013. Формат 60x84/16.
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Гарнитура Schoolbook. Физ.печ.л. 8,75.
Тираж 300 экз. Заказ № К-382.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46.
E-mail: newtime1@mail.ru.